К75
Х-68
Ч-42254

Анатолий ХОВАНСКИЙ

# ВĂРМАРСЕМ – ОЛИМП ÇУЛĔПЕ









Национальная библиотека ЧР
4-042254

К75
Х68
Обязат. экз.

ÇӲЛЕРЕХ
ВАЙЛӐРАХ
ХӐВӐРТРАХ

Анатолий ХОВАНСКИЙ

# ВӐРМАРСЕМ – ОЛИМП ÇӲЛӖПЕ

Очерксен кӗнеки

Шупашкар
«Çӗнӗ Вӑхӑт»
2009

УДК 796/799
ББК 75.3
Х 68

*Автор от всей души благодарит и выражает признательность за оказанную помощь в издании книги:
Шишкину Владимиру Александровичу – генеральному директору ЗАО «Курс-Симбирск» г. Ульяновск*

Хованский А.И.
Вăрмарсем – Олимп çулĕпе. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2009. – 136 с.

Вăрмар тăрăхĕ чаплă спортсменсемпе пуян. Тĕрлĕ енĕпе спорт мастерĕн нормине тултарнисем 100 çынна яхăн шутланаççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ Тĕнче тата Европа чемпионачĕсемпе ăмăртăвĕсене хутшăнса çĕнтерӳçĕ ята тивĕçеççĕ. Ку кĕнекере Чăваш Енĕн чи пултаруллă спортсменĕсем, Вăрмар районĕнчен тухнă спорт çăлтăрĕсем – Валериан Соколов боксер, Николай Пуклаков, Светлана Захарова, Татьяна Петрова çăмăл атлетсем, Сергей Иванов, Вера Андреева велосипедистсем çинчен çырса кăтартнă.

Кĕнеке физкультурниксемпе спортсменсемшĕн, преподавательсемпе тренерсемшĕн, сывă пурнăç йĕркине тытса пыракансемшĕн усăллă пулĕ.

4-42254
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Проверено 15 ИЮН 2017

© Хованский А.И., 2009

## Кăштах историрен

Олимп вăййисем – тĕнчери чи пысăк та халăх юратакан спорт ăмăртăвĕсем. Унăн историйĕпе аталанăвĕ пуян та мухтавлă. Çакă паллă: Грецири Алфей юхан-шыв хĕрринчи Олимп хулинче ăна пирĕн эрăччен 776 çулта ирттернĕ. Олимп вăййисенче пĕртен-пĕр тĕс пулнă – пĕр стадие («стадион» сăмах та çак грек чĕлхинчен тухнă) е 192 метр та 27 сантиметра чупасси. Темиçе çултан атлетсем икĕ, каярах çирĕм пилĕк стади таранччен ăмăртма пуçланă. XVI Олимп вăййисен программине пентатлон, е урăхла каласан, пилĕк тĕспе ăмăртассине кĕртнĕ. Олимпиецсем кĕске дистанцие чупса тупăшнă, диск тата сăнă ывăтнă, тăршшĕне сикнĕ тата кĕрешнĕ. Паллах, çакăн пек ăмăртусене пур енĕпе те аталаннă арçынсем çеç хутшăнма пултарнă. Олимпиадăсен программи ĕмĕртен ĕмĕре сарăлса пынă.

Авалхи атлетсем Олимп вăййисене 293 хут пуçтараннă. Спорт аталанăвĕн историне аса илнĕ май, çакна палăртмалла: Грецие вăрçăпа парăнтарнă Рим императорĕ I Феодосий Олимп вăййисене пирĕн эрăри 394 çулта ирттерме чарнă. Францири паллă педагог, ученăй тата гуманист Пьер де Кубертен (1863-1937) çине тăнипе пирĕн вăхăтри Олимп вăййисене 1896 çулта çĕнĕрен иртттерме пуçланă.

1896 çулта йĕркеленĕ Пĕтĕм тĕнчери Олимп комитечĕ спортăн сакăр тĕрлĕ енĕпе (хĕллехи тата çуллахи) Олимп вăййисем иртттернĕ.

1924 çултанпа хĕллехи тата çуллахи Олимп вăййисем иртттереççĕ.

Афинăра иртттернĕ Олимп вăййисене çĕре яхăн çăмăл атлет медальсен 12 комлекчĕшĕн вăй виçнĕ. Çулсем иртнĕ май тĕнчери Олимп комитечĕ чупакансен тата хăвăрт утакансен тĕрлĕрен дистанцийĕсене программăна кĕртсе пынă.1928 çултан пуçласа хĕрарăмсем те,арçынсем пекех, çӳллĕшне тата тăршшĕне сикме,диск тата сăнă ывăтма, йĕтре тĕртме пуçланă. Маларах Олимп вăййисенче хĕрарăмсен ăмăртăвĕсене пачах иртттермен.

Раççейĕн хăш-пĕр спортсменĕсем Олимп вăййисене 1904 çултанах хутшăнма пуçланă. 1912 çулта Стокгольмри V Олимп вăййисенче Раççей командинчи 47 çăмăл атлетран пĕри те медаль çĕнсе илеймен. Вĕсен ăсталăхĕ пĕчĕк пулнă.

Совет çĕршывĕнче çăмăл атлетсен аталанăвĕн малтанхи утăмĕсем 1918 çулпа çыхăннă. Пĕтĕм Раççейри Тĕп ĕçтăвком декречĕ тăрăх çав çулхине пур граждансене те çар ĕçне вĕрентме тытăннă, çавна май спорт вăййисене те хутшăнтарнă. 1920 çулхи июньте Мускавра, Сокольникире çĕршыври çăмăл атлетсен пирвайхи чемпионатне ирттернĕ. Çавăн хыççăн чылай хулара, ялсенче спорт секцийĕсем ĕçлеме пуçланă. Массăлăх та, ăсталăх та ӳснĕ.

Ун чухне совет спортсменĕсем Олимп вăййисене хутшăнман, апла пулин те хăш-пĕр çăмăл атлетсен кăтартăвĕсем тĕнче рекорчĕсемпе танлашнă. Мускав çывăхĕнче пурăннă пĕр тăван Георгий тата Серафим Знаменскисен результачĕсем те çавнах çирĕплетеççĕ. Аслă Отечественнăй вăрçăчченхи çулсенче вĕсем 5000 тата 10000 метрлă дистанцисене вăтăрмĕш çулсенчи Олимп чемпионĕсенчен хăвăртрах чупса тухма пултарнă.

Спорта юратакансем СССР тава тивĕçлĕ спорт мастерĕн А.Игнатьевăн ятне лайăх пĕлеççĕ. Елчĕк районĕнчи Ĕнелте çуралса ӳснĕскер, вăл аллăмĕш çулсенче 200 тата 400 метрлă дистанцисене чупассипе, çавăн пекех эстафетăсенче те çĕршыв тата Европа чемпионĕсен ячĕсене темиçе хутчен çĕнсе илнĕ. Тăхăр çул хушши «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин чысне хӳтĕленĕ Ардальон Васильевич. Çав вăхăтра çĕршыв рекорчĕсене 39 хутчен çĕнетнĕ. Олимп вăййисене хутшăннă. Мельбурнти Олимпиадăра (1956) 400 метра чупса пултарулла чăваш спортсменĕ бронза медаль çĕнсе илнĕ. Совет правительстви пирĕн мухтавлă ентеше спортри пысăк çитĕнӳсемшĕн Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлана.

Чăваш халăхĕ хамăр республикăра ӳссе çитĕннĕ боксерсемпе уйрăмах мухтанать. Мĕнле мухтанмăн-ха. Шупашкарта бокс енĕпе Олимп чемпионĕ, тĕнче, Европа, çĕршыв чемпионĕсем çитĕнчĕç.

1968 çулхи октябрь. Инçетри Мехикăра ун чухне XIX Олимп вăййисем пынă. Шупашкарти «Динамо» спорт çуртĕнче Г.Н.Герасимов тренер ертсе пынипе ăсталăх пухнă Валериан Соколов (Вăрмар районĕнчи Пинер ялĕнчен) та пулнă Мексикăн тĕп хулинче. Тăван çĕршыв чемпионатĕнчи пекех, унти тĕл пулусенче те хăйне хирĕç тăракан спортсменсене парăнтарса пынă вăл. Чăваш каччи Мехикăри рингра пиллĕкмĕш спортсмена икĕ хутчен нокаута ярать, вăхăт вĕçлениччченех Олимп вăййисен чемпионĕ ятне çĕнсе илет.

Утмăлмĕш çулсенче республикăри чи вăйлă йĕлтĕрçĕсем Канашран тухнă. 1964 çулта Канашри вакунсем юсакан заводри Владимир Воронков пĕрремĕш çитĕнӳ тунă. «Локомотив» спорт обществинче мала тухассишĕн irттернĕ Пĕтĕм Союзри ăмăртура вăл выляса илнĕ. Çамрăк спортсменăн пултарулăхне тренерсем часах асăрханă, ăна СССРăн пĕрлештернĕ командине кĕртнĕ. Норвеги, Швеци, Финлянди çĕршывĕсенчи чи вăйлă йĕлтĕрçĕсем ăна лайăх пĕлнĕ, вăл вĕсенчен яланах выляса илнĕ. Виçĕ хут тĕнче чемпионĕ Эггенс (Норвеги) та ăна выляса янă.

1972 çулта Японири Саппоро хулинче ирттернĕ Олимп вăййисем уншăн яланлăхах асра юлнă. 4х10 эстафетăра çĕнтерсе Владимир Воронков, Юрий Скобов, Федор Симашов тата Вячеслав Веденин йĕлтĕрçĕсем Олимп вăййисен чемпионĕсем пулса тăнă.

Пирĕн çĕршыври велосипедистсем 1956 çултанпа тĕнчери ăмăртусенче малти вырăнсене йышăнма пуçлаççĕ. Велосипедистсен нумай куна пыракан тĕнчери чи паллă ăмăртăвне Чехословакири «Руде право», Польшăри «Трибуна люду» тата Германири «Нойес Дойчланд» хаçатсем пуçарнипе 1952 çултанпа йĕркелеççĕ. Варшава, Прага тата Берлин тĕп хуласем урлă иртекен трасса çинчи ăмăртăва йăлана кĕнĕ тăрăх çулсеренех май уйăхĕнче ирттереççĕ. Шăп çав вăхăтри çурхи кунсем-çке туслăха, пĕрлĕхе, пĕр тăванлăха тата Аслă Çĕнтерĕве пĕлтереççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Пĕтĕм тĕнчери ăмăртăвăн символĕ-мир кăвакарчăнĕ.

1972 çулта Мюнхента иртнĕ XX Олимп вăййисенче пирĕн çĕршыв велосипедисчĕсем чемпион ятне çĕнсе илнĕ. Шос-

се ҫинче чупса 100 километрлӑ дистанцие командӑри Валерий Ярды, Валерий Лихачев, Борис Шухов, Геннадий Комнатов 2 сехет те 11 минут та 17,8 ҫеккунтра вӗҫленӗ.

Ҫӗмӗрле районӗнчи Пӗренешре ҫуралса ӳснӗ Валерий Ярды 1972 ҫулхи сентябрь варринче тӑван республикӑн тӗп хулине Олимп вӑйӑисен ылтӑн медалӗпе таврӑннӑ. И.Я.Яковлев ячӗллӗ чӑваш патшалӑх педагогика институчӗн студентне спорта юратакан пиншер ҫын ӑшшӑн кӗтсе илнӗ. Валерий Николаевичӑн спортри паттӑр тӗслӗхӗ чылай ҫамрӑка спортпа туслашма пулӑшрӗ.

1992 ҫулта марафон енӗпе XXV Олимп вӑйӑисен чемпионӗн ятне Валентина Егорова (Муркаш районӗ, Исеткерккӗ ялӗ) тивӗҫнӗ.

1996 ҫулта Атлантӑра ирттернӗ XXVI Олимп вӑйисенче Елена Николаева (Сӗнтӗрвӑрри районӗ, Акшики ялӗ) хӑвӑрт утас енӗпе дистанцие 41 минут та 49 ҫеккунтра вӗҫлесе чемпион пулса тӑнӑ.

1952 ҫултан пуҫласа Чӑваш Енри 32 спортсмен ҫуллахи тата хӗллехи Олимп вӑйӑисенче бокс, баскетбол, гребле, велосипедпа чупас, маунтинбайк, ирӗклӗ майпа кӗрешес, ҫӑмӑл тата йывӑр атлетика, ухӑран перес, биатлон, пульӑпа перес, йӗлтӗрпе чупас, фехтовани тата ытти енӗпе ӗҫршыв чысне хӳтӗленӗ. Пурӗ 7 ылтӑн, 4 кӗмӗл тата 4 бронза медальсем ҫӗнсе илнӗ.

Иртнӗ ҫул Китайри Пекин хуллинче иртнӗ ҫуллахи XXIX Олимп вӑйӑисене Чӑваш Енрен сакӑр спортсмен хутшӑнчӗ. Вӗсенчен виҫҫӗшӗ Вӑрмар районӗнчен: Вера Андреева (велосипед), Татьяна Петрова (ҫӑмӑл атлетика), Светлана Захарова (марафон). Вӗсемсӗр пуҫне Самара командин чысне пирӗн ентеш Сергей Иванов (велосипед) хӳтӗлерӗ.

Ҫакна палӑртма кӑмӑллӑ: Пекинри Олимпиадӑран Ирина Калентьева (Патӑрьел районӗ, Нӑрваш Шӑхалӗнчен) велосипедист маунтинбайк енӗпе бронза медальпе таврӑнчӗ. Ирина ҫӗнсе илнӗ «бронза» – маунтинбайк историйӗнче Раҫҫей ҫӗнсе илнӗ пӗрремӗш медаль. Эпир унпа тивӗҫлипе мухтанатпӑр.

# Чăваш Ен спортсменĕсем – Пекинри Олимпиадăра

*Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В.ФЕДОРОВ:*

*«Чаплă спортсмен пулма кирлех те мар, анчах та кашни çамрăк çын хăйĕн умне тĕллев лартма тата ăна пурнăçа кĕртме пултартăр, хăйĕн ĕçĕнче чăн-чăн профессионал пулма тăрăштăр. Спорта юратни тата сывă пурнăç йĕркине тытса пыни, вăр-вар пулни ăна çитĕнӳ тума пулăшатех».*



2008 çулхи августăн 8-24-мĕшĕсенче Пекинра çуллахи XXIX Олимп вăййисем иртнĕ. Чăваш Енрен унта сакăр спортсмен хутшăннă. Акă вĕсем: Светлана Захарова (Атайкасси, марафон), Татьяна Петрова (Карăкçырма, чупуçă), Вера Андреева (Çĕнĕ Шулхан, маунтинбайк) – пурте Вăрмар районĕнчен вĕсем. Тата Ирина Калентьева (маунтинбайк), Андрей Абрамов (ухуçă), Татьяна Арясова, Сергей Иванов (чупуçăсем), Татьяна Сибилева (хăвăрт утакан). Пурте тĕнчери чи паллă спортсменсем. Çак Олимпиадăра Самара облаçĕн чысне пирĕн тепĕр ентеш – Сергей

Иванов (Кĕтеснер) велосипедист хӳтĕленĕ. Çапла вара Олимпиадăна пирĕн районтан пĕр вăхăтрах тăватă спортсмен хутшăнни историре халиччен пулман. Кашниех вĕсем çĕршыв, республика чысне пултаруллăн хӳтĕленĕ.

Пекинри Олимп вăййисем вĕçленнĕ хыççăн ЧР Президенчĕ Н.В.Федоров Правительство çуртĕнче Чăваш Енрен Олимп вăййисене хутшăннă спортсменсемпе (Татьяна Петрова çеç пырайман) тата вĕсен тренерĕсемпе тĕл пулнă. «Эсир пирĕн паттăрсем,- кăмăллă калаçупа пуçланă тĕл пулăва Николай Васильевич. – Аçăр-аннĕре, тренерсене, чи кирли – хăвăрăн кăмăл çирĕплĕхне, характера пула тĕнче шайĕнче сум çĕнсе илтĕр. Этем çĕр çине мĕншĕн килнине ĕçпе çирĕплетрĕр. Эсир Раççейĕн, тăван халăхăн хăйне евĕрлĕ «çăлтăрĕсем»! Эсир – маттурсем. Малашне те ыттисене ырă тĕслĕх кăтартăр».

Спортсменсемпе тренерсене тав тунă хыççăн Николай Федоров вĕсене республикăн патшалăх наградисемпе чысланă. Олимп вăййисен бронза призерĕ Ирина Калентьева «Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Андрей Абрамов, Вера Андреева, Татьяна Арясова, Светлана Захарова, Сергей Иванов, Татьяна Сибилева тата вĕсен тренерĕсем Ольга Авдеева, Владимир Краснов, Валерий Григорьев, Николай Захаров, Анатолий Петров, Николай Родионов Президент аллинчен тав хучĕсем илнĕ. Олимпиецсем те пушă алăпа килмен. Вĕсен парни – Пекинри паллă вырăнсене сăнлакан медальсем.

# Ӑшпиллӗ тӗл пулу



*Сулахайран сылтӑмалла: Ю.Николаев, С.Андреев, В.Андреева, С.Андреева, район пуҫлӑхӗн заместителӗ Ю.Соколов, районти А.Ф.Федоров ячӗллӗ ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗн директорӗ С.Архипов*

Иртнӗ ҫул Пекинра иртнерӗ XXIX ҫуллахи Олимп вӑййисене пирӗн районтан виҫҫӗн: С.Захарова (марафон), Т.Петрова (ҫӑмӑл атлетика), В.Андреева (маунтинбайк) хутшӑнчӗҫ. Районта пурӑнакансем, спорта юратакансем, шкул ачисем вӗсемпе тӗл пулу иртересse чӑтаймасӑр кӗтрӗҫ. Акӑ кӗтнӗ кун ҫитрӗ. Тӗл пулӑва Раҫҫей спорт мастерӗ, тӗнче тата Европа чемпионачӗсене хутшӑннӑ В.Андреева килнӗ. С.Захаровӑпа Т.Петрова тӗрлӗ сӑлтавсене пула спорт праҫникне килсе ҫитеймерӗҫ. Савӑнӑҫлӑ каҫа Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ артисчӗ, Шупашкарти кукӑл театрӗн тӗп режиссерӗ, Мӑнҫырмара ҫуралса ӳснӗ Ю.Филиппов ертсе пычӗ.

Ҫав кун районти Культурӑпа кану центрӗнче чӑн-чӑн спорт уявӗ пулчӗ. Олимпиецсене саламлама Шупашкар-

тан тĕнчипе чапа тухнă пултаруллă спортсменсем: велосипедпа чупассипе ултă хут СССР чемпионĕ В.Гаврилов, икĕ хут çĕршыв чемпионĕ, чăвашсен пĕрремĕш профессионалĕ, «Сăрт-ту королĕ» И.Иванов (иккĕшĕ те Çĕнĕ Вĕренер ялĕнчен), СССР спорт мастерĕ С.Иванов (Чулкас) тата ыттисем килсе çитнĕ.

Район пуçлăхĕ ячĕпе пухăннисене район пуçлăхĕн социаллă ыйтусемпе ĕçлекен заместителĕ – райадминистрацин вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕн начальникĕ Ю.Соколов саламларĕ.

– Паян пирĕншĕн чăн-чăн спорт уявĕ. Эпир Китайри XXIX çуллахи Олимп вăййисене хутшăннă, пысăк хисепе тивĕçнĕ ентешсене, спорт çăлтăрĕсене чыслатпăр. Т.Петрова, В.Андреева, С.Захарова Раççей тата Чăваш Ен спортне çӳллĕ шая çĕклерĕç, вĕсем çамрăк ăрушăн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Вĕсемпе эпир савăнатпăр, мухтанатпăр. Тунă ӳсĕмсемпе лăпланса лармалла мар пирĕн, малаллах талпăнмалла. Умра – 2012 çулта Лондонра иртекен çуллахи XXX Олимпиада. Сире унта хутшăнма тивĕçлĕ пулма иксĕлми вăй-хал сунатпăр, унтан çĕнтерӳпе таврăнасса шансах тăратпăр, – терĕ Юрий Васильевич.

Унтан вăл Вера Андреева олимпиеца, унăн ашшĕпе амăшне – Сергейпе Светлана Андреевсене, кукашшĕпе кукамăшне – Михаилпа Анна Александровсене, Татьяна Петрован ашшĕпе амăшне – Василийпе Людмила Петровсене, кукашшĕне – Иван Петрова, Светлана Захарован амăшне – Мария Васильевăна тата унăн пĕрремĕш учительницине, Энĕшпуçĕнчи вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учительне Зинаида Кирилловăна район пуçлăхĕн Тав çырăвĕсене пачĕ.

ЧР физкультурăпа спорт тата туризм министрĕн заместителĕ С.Мельников В.Андреевана, Т.Петровăна, Е.Павловăна, М.Семеновăна 2009 çулта ЧР Президент стипендие илсе тăмаллине çирĕплетекен свидетельствăсем пачĕ.

Спортра пысăк çитĕнÿсем тунăшăн тата физкультурăпа спорта аталантарма тивĕçлĕ тÿпе хывнăшăн В.Андреевана, Мăнçырмари, Пысăк Енккассинчи, Энĕшпуçĕнчи вăтам шкулсен директорĕсене – В.Николаева, Г.Архипована, П.Егорова, пултаруллă спортсменкăсен малтанхи тренерĕсене – В.Семенова, Ю.Архипова, Г.Исаева ЧР физкультурăпа спорт тата туризм министерствин Хисеп грамотисемпе наградăларĕ.

Велосипедпа чупас енĕпе спорт мастерĕн кандидачĕн нормине пурнăçланă М.Семеновăна, А.Семеновăна, И.Тимофеева (Вăрмар поселокĕ), пĕрремĕш разряд нормине тултарнă И.Ильина, Р.Боредскине (Пинер), О.Ивановăна, Г.Романова, А.Архипова, С.Михайлова (Мăнçырма), К.Питрукова (Кĕтеснер), А.Адюкова (Кавал), Н.Чубукова (Çиçтĕпе), Е.Андреева (Çĕнĕ Мăнтăр) удостоверенисем тата знаксем пачĕ.

Вăрмарти А.Ф.Федоров ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн директорĕ С.Архипов Пекинри Олимпиадăна хутшăннă спортсменкăсем хăйсен спорт карьерине кунти шкултан пуçлани, кăçал спорт шкулне уçнăранпа 40 çул çитни çинчен каларĕ.

Шупашкарта ĕçлесе пурăнакан СССР спорт мастерĕ, ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнчен вĕренсе тухнă С.Иванов пултаруллă велосипедистсем пирки ырăпа аса илчĕ.

Вăрмарсен Шупашкарти ентешлĕхĕн вице-президенчĕ В.Нягин хăйĕн сăмахĕнче Вăрмарсен спортри çитĕнĕвĕсемпе савăнни çинчен пĕлтерчĕ, вĕсене спортăн анлă çÿлĕ çинче малашне те пысăк çитĕнÿсем тума ăнăçусем сÿнчĕ. В.Андреева спортсменкăна тата унăн амăшне – Светлана Михайловнана Тав çырăвĕсем пачĕ.

— Пирĕн Вера хĕр ача спортра тунă ÿсĕмсенче район администрацийĕн, ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн, ЧР физкультурăпа спорт министерствин тÿпи уйрăмах пысăк. Вĕсем пулăшнипе ĕнтĕ вăл спортăн анлă çулĕ çине тухма пултарчĕ, çакăншăн эпĕ вĕсене чĕререн тав тăватăп,- терĕ Светлана Михайловна Андреева.

Шупашкарти В.Ярды ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен Олимп резервĕсен специализациленĕ шкулăн директорĕ В.Мулендеев шкулта вĕренекен пирĕн ентешсем çинчен ăшă сăмахсем каларĕ.

В.Андрееван тренерĕ, Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ тренерĕ В.Краснов пултарулла спортсменсем çитĕнтерме пулăшнăшăн Вера Андрееван малтанхи тренерне В.Семенова (халĕ Мăнçырма ял тăрăхĕн пуçлăхĕ) хаклă парне пачĕ, Мăнçырмари вăтам шкула велосипед спорчĕ çинчен хăй çырнă кĕнекесем парнелерĕ. Çавăн пекех Вăрмарти А.Ф.Федоров ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн директорне С.Архипова та парнесĕр хăвармарĕ. В.Андреева та хăйĕн наставникне С.Архипова парнепе тивĕçтерчĕ.

Пысăк Енккассинчи вăтам шкулти физкультура учителĕ, ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Ю.Архипов спорт праçникĕ ячĕпе пурне те ăшшăн саламларĕ, спортсменсене ăнăçусем сунчĕ.

Спорт уявĕ чăннипех те савăнăçлă иртрĕ. Вера Андреева пирки ăшă сăмахсем нумай каларĕç, чечек çыххисем парнелерĕç.

## СОКОЛОВ
### Валериан Сергеевич

1946 çулхи августăн 30-мĕшĕнче Вăрмар районĕнчи Пинер ялĕнче çуралнă.



Бокс енĕпе СССР Тĕнче класлă спорт мастерĕ, СССР тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ (1968), СССР кубокĕн çĕнтерӳçи (1967, 1970, 1971) тата тăватă хут СССР чемпионĕ (1968, 1969, 1971, 1973), XIX Олимп вăййисен чемпионĕ (1968).

## Олимп вăййисен чемпионĕ

Пинерте çуралса ӳснĕ Валериан Сергеевич Соколов Олимп вăййисен чемпионĕ пуласса никамах та шутламан пулĕ.

– Пĕр класра вĕренеттĕмĕр, ыттисенчен нимĕнпех те уйрăлса тăмастчĕ. Уроксем хыççăн урамра пĕрле вылят-тăмăр. Пĕвĕпе пысăках мар, типшĕмскер, шкулта пĕр ев-ĕрлех вĕренеттĕмĕр, ăмăртусенче те ыттисемпе шаяхчĕ. Кайран вĕсем Шупашкара куçса кайрĕç. Халĕ ав, кур та тăр, Олимп чемпионне çитрĕ. Пинерсене мухтанмалăх пулчĕ, – каласа парать автотранспорт предприятийĕнче водительте нумай çул ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă Вениамин Иванович Макаров.

Ялти шкул хыççăн вăл пĕр вăхăт Çурçĕр Казахстан облаçĕнчи Мамалютка поселокĕнчи ял хуçалăх механизацийĕн училищинче вĕренет. Çакăнта пуçласа тăхăнать те ĕнтĕ боксер перчеткине. Тăтăшах тренировкăсем ирттернипе ăсталăхне туптасах пырать. Пĕрле вĕренекенсем унтан чăннипех тĕлĕннĕ. Имшерккескер пулин те, пĕри те ăна çĕнтерме пултарайман. Ун чухне вăл вунулттăра пулнă. Акă вĕренӳ çулĕ те вĕçленсе килет. Вăл киле таврăнма хатĕрленет.

Шупашкара килсен Валериан Шупашкарти 1312-мĕш номерлĕ автоколоннăна диспетчера вырнаçать. Кунта вăл тин çеç салтакран таврăннă, боксра пĕрремĕш разряд нормине пурнăçланă çамрăкпа паллашать, ăна хăйĕн шухăшне каласа парать. Соколова итленĕ хыççăн опытлă спортсмен каччă ячĕшĕн кăна мар, чăн-чăн спортсмен пулма тĕллев лартнине туйса илет.

– «Динамона» кай, унта бокс секцийĕ пур, – ăс парать юлташĕ.

Автобус çинчен анать те «Динамо» обществăн спорт залне шыраса тупать. Пĕчĕк çеç пӳлĕмре тин çеç бокса вĕренекенсем тренировка ирттереççĕ.

– Бокс секцине Эсир ҫыратăр-и, – именчĕклĕн ыйтать Валериан Николай Аркадьевич Лукин тренертан.

Кăвак спорт костюмĕ тăхăннă арҫын ҫӳҫне кĕске кастарнă пысăках мар, имшеркке ҫамрăк ҫине пăхса илет.

– Питех те шел, пирĕн вырăн ҫук, Куратăр вĕт, мĕнле условисенче пурăнатпăр.

Ĕҫĕ унта ҫеҫ те мар: Лукиншăн боксер пулассăн туйăнман вăл.

Валериан килелле кулянса утнă.

Тепĕр темиҫе кунтан вăл каллех «Динамо» залне пынă. «Эпĕ сулахай», тенĕ вăл калаҫма юратман тренера. «Спортра ҫавăн пеккисене хаклаҫҫĕ», тетчĕҫ училищĕре вĕренекенсем.

Ку хутĕнче Лукин уҫҫăн ҫапла каланă:

– Пире ҫирĕпрех каччăсем кирлĕ, пĕчĕккисем ахаль те нумай, вăй пух-ха, пĕтĕмĕшле физкультура ту.

– Эсир мана тĕрĕслесе пăхăр-ха. Эпĕ «сулахай-ҫке».

«Мĕнле хăюллă», – шухăшланă тренер.

– Юрĕ, ӳкĕте кĕртрĕн, – тенĕ вăл аллипе Валериана хулпуҫҫинчен ҫапса.

Тренировкăра ҫамрăк каччă тренерăн пур кăтартăвĕсене те пурнăҫлама тăрăшнă.Тренировкăри пĕрремĕш тытăҫу унăн кĕрешме тинтерех кăна вĕренекенсемпе пулнă. Тĕл пулу пĕр минут та иртмен кĕлеткерен сулахай алăпа лектернĕ хыҫҫăн Соколовăн партнерĕ ҫулса пăрахнă пекех ҫĕре персе аннă. «Ăҫтан ҫавăн чухлĕ вăй пур унăн?» – тĕлĕннĕ Лукин. Вăл ҫамрăк боксерăн чăрсăрлăхне, хăюлăхне асăрханă.

Тепĕр кĕрешӳре Валериан ҫӳллĕ те хитре, техника енчен лайăх чухлакан боксерпа тĕл пулнă. Ҫивĕч кĕрешӳре пурпĕрех Соколов ҫĕнтернĕ.

Часах Ҫĕмĕрлере республикăра мала тухассишĕн ҫамрăк боксерсен ăмăртăвĕ пулмалла. Валериан унта хутшăнма тĕплĕн хатĕрленнĕ.

Ҫамрăксен чемпионатĕнче унăн финалта республикăн пĕрремĕш перчеткипе кĕрешмелле пулнă. Валериан ним

хумханмасăр хăйне ирĕклĕн тытнă. Унпа кĕрешекен опытлă боксер пулнă, хăйĕн титулне никама та парасшăн пулман.

Виççĕ раундра Валериан хăйĕн мĕн пур вăй-халне панă. Çине çинех атакăланипе унпа кĕрешекен пуçару илме пултарайман. Çапла вара çамрăксем хушшинче Чăваш Енĕн çĕнĕ чемпионĕ çуралнă – Валериан Соколов.

Тренировкăсене йĕркеллĕ ирттернипе вăл спортăн лайăх формине кĕнĕ. Ăна республикăн пĕрлештернĕ командине кĕртнĕ. Çапла вара вĕсем часах çамрăксен хушшинче мала тухассишĕн Оренбургра ирттерекен чемпионата хутшăнма тухса кайнă. Июнь уйăхĕ. Сулхăнра та ăшă 35 градус кăтартнă. Шăрăхра кĕрешме çав тери йывăр пулнă.

Акă черет пирĕн ентеше те çитнĕ. Канат айĕнчен тухса Валериан хăйĕн вырăнне йышăннă. Пĕрремĕш раунда вăл сӳрĕк ирттернĕ. Унпа кĕрешекен вара çине-çинех атакăланă.

Мĕн юлхавланатăн? Атакăла! – тенĕ ăна тренер. – Хăюлăх хулана илет.

Пĕр минутлăх кану вăхăчĕ пĕр сисĕнмесĕрех иртсе кайнă. Иккĕмĕш раундра Валериан хăнăхман условисенче хăйне кĕрешĕве хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ. Сулахай алăпа кĕлеткерен çапнă хыççăн унпа тупăшакан çĕр çине персе аннă. Çакăн хыççăн Соколова çĕнĕ вăй-хал кĕнĕ. Вăл кĕлеткерен тата темиçе хутчен çапса ĕлкĕрнĕ. Вăхăт çитмесĕрех Валериан çĕнтернĕ тесе йышăннă.

Çурма финалта Соколов Оренбург боксерĕпе тĕл пулнă. Уралец çӳлех мар, анчах тĕреклĕ. Курма пынисем ентешĕ майлă пулнă, темиçе хутчен те ун фамилине кăшкăрнă.

Ку тĕл пулăва пирĕн ентеш тĕплĕн хатĕрленнĕ. Тренерпа пĕрле малтанхи тĕл пулусенчи çитменлĕхсене сӳтсе явнă. Çапла тĕллев лартнă: час-часах атакăламалла, пуçарăва алăран ямалла мар. Икĕ раундне Валериан выляса илнĕ. Виççĕмĕш раундра вăл Оренбург боксерĕ сулахай алăпа çапасран хăранине туйса илет. Валериан темиçе хут кĕлеткерен вăйлă пырса çапнипе тапăнакана нокаута ярать. Соколов çав вăхăтра тренер çине пăхса илет.Тренер кĕрешӳпе кăмăллă пулнине пĕлтерет. Çапла вара Валериан çĕнтерет.

Соколов Красноярскран килнӗ Чернов боксера та ҫӗнтерет.

Чӑваш Енрен килнӗ Соколов динамовец чемпион ятне ҫӗнсе илет. Ӑна ятне ҫырнӑ асӑнмалӑх алла ҫыхмалли сехет парнелеҫҫӗ.

Специалистсем уйрӑмах паллӑ спортсмена асӑрхаҫҫӗ, ӑна «Динамо» обществӑн Тӗп советӗнче мала тухассишӗн иртterекен ӑмӑртусене хатӗрленме Оренбурграх хӑвараҫҫӗ. Пӗтӗм Союзри чемпионат Одесса хулинче иртнӗ. Оренбургран ҫамрӑксем Мускава вӗҫсе килнӗ, унтан вӗсене самолетпа Хура тинӗс хӗррине леҫнӗ. Валериан кунта пӗрремӗш хут.

Ӑмӑртусем Олимп системипе иртнӗ: выляса ятӑн пулсан, тухса ӳк. Ҫанталӑк кунта питӗ шӑрӑх тӑни спортсменсене пӗрре те килӗшмен.

Ринга тухас ӳмӗн В.С.Мунин тренер ентеше тепӗр хут ҫапла асӑрхаттарнӑ:

– Малтан санӑн ҫапмалла, Валера.

Валериан тренер канашне шута илнӗ. Малтанхи икӗ раунчӗ пӗр пекех пулнӑ пулсан, юлашки виҫӗминутлӑхра тапӑнакан вӑйран кайнӑ. Рингра чӑваш атлечӗ хуҫа пулса тӑнӑ. Вӑл техника енчен ӑстарах тата чӑтӑмлӑрах пулнӑ.

Ҫурма финалта Соколов Молдави спортсменӗпе – Тофанпа тӗл пулнӑ. Пирӗн ентеш малтанхи тӗл пулусенче ӑнӑҫлӑ ҫӗнтерсе пынӑскер хӑйӗн вӑйне шута илмен тата турнирти опыт та унӑн ҫителӗксӗр пулнӑ. Ҫапла вара Валериан ку хутӗнче ҫӗнтереймен.

Тепӗр икӗ кунтан вӑл Шупашкара таврӑннӑ. «Динамо» спорт залӗнче ӑна Геннадий Николаевич Герасимов тренер тӗл пулнӑ:

– Мӗнле кӗрешрӗн?

– Виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑнтӑм.

– Питӗ лайӑх, саламлатӑп.

Ҫамрӑк качӑ ӑмӑрту мӗнле иртни ҫинчен каласа панӑ. Герасимов ҫакна асӑрханӑ: Соколов бокса чӑннипех те параннӑ. Часах вӑл унӑн тренерӗ пулса тӑрать.

Ч-42254
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Соколован пушă вăхăчĕ питех те сахал пулнă. Вăл çитĕнсе çитнисен республикăри вăтам шкулта заочно вĕреннĕ. Тренировка хыççăн алла кĕнекесем илнĕ, контроль ĕçĕсем пурнăçланă. Тĕрĕс калаççĕ: «Ăс-тăна вĕренӳре пух, хăюлăха – кĕрешӳре».

Çĕнĕ çул Пĕтĕм Раççейри ринга çул уçнă. Соколова Калининграда, динамовецсен чемпионатне йыхравланă.

Чăваш боксерĕн старчĕ специалистсен кăмăлне кайнă. Малтанхи икĕ кĕрешĕве Валериан çăмăллăнах выляса илнĕ. Финалта вăл контратакăра хăйĕнпе кĕрешекене сулахай алăпа тӳртен вăйлăн пырса çапнă. Шупашкар каччи иккĕмĕш хут чемпион ятне çĕнсе илнĕ. Специалистсем çак çĕнтерӳ ăнсăртран пулнă тесе шутламан, çамрăк боксерта сăран перчеткен талантлă мастерĕ пуласси палăрнă.

Калининградри чемпионат хыççăн Ригăра динамовецсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕсем пуçланнă. Çакăнта ĕнтĕ пирĕн ентешĕн кĕрешӳри ăсталăхĕ ӳссе пыни яр уççăн курăннă. Çурма финалта вăл Одессăра выляса янă Тофанпа тĕл пулнă. Валериан иртнĕ çулхи «кӳрентерӳшĕн» тавăрма шутлать. Пĕрремĕш раундрах ăна нокаута ярать.

Финалта Рига боксерĕпе Зильберманпа тупăшнă. Икĕ спортсменĕ те малтанхи пур тĕл пулусенче те выляса илнĕ. Ку тупăшу вара пурне те интереслентернĕ. «Пĕрремĕш перчетке» ята илессишĕн кашниех хăйĕн мĕн пур вăй-халне панă. Анчах та Рига спортсменне зал та, стенисем те пулăшайман. Хисеп пьедесталĕ çине пирĕн ентеш хăпарнă.

Ку кĕрешĕве чи илемли тесе йышăннă. Валериан Соколова чемпионатăн «чи лайăх боксерĕ» тесе палăртнă. Латвири «Динамо» обществăн совечĕ ăна ятарлă Грамота панă. Вăл спорт мастерĕн кандидачĕн нормине пурнăçланă.

Вĕренӳре те паллă утăм тунă: Валериан вăтам шкула заочно вĕренсе пĕтернĕ. Ун хыççăн Чăваш ял хуçалăх институтчĕн механизаци факультетне заочно майпа вĕренме кĕрет. Инженер пулма ĕмĕтленет. Ку вăл 1965 çулхи март уйăхĕнче пулнă.

Кăшт маларах унăн рингри кĕрешĕвĕнче улшăну пулса иртнĕ. Чи çăмăл виçерен вăл çăмăл виçеллĕ категорине куçнă. Халĕ ĕнтĕ унпа тупăшакансем вăйлăрах та аслăрах.

Çăмăл виçеллисем хушшинче те вăл виçĕ çĕнтерӳ тунă. Çĕпĕртен таврăннă хыççăн Ригăна кайма хатĕрленнĕ. Умра çирĕм кун. Г.Герасимов тренер унăн воспитанникĕ çак вăхăта тренировкăсенче усăллă ирттертĕр тесе тăрăшнă.

Çулталăк каялла Валериан кунта чи çăмăл виçепе ăмăртнă пулсан, халĕ вара çăмăллисен ушкăнĕнче. Халĕ рингра мĕн кăтартма пултарать вăл? Пĕрремĕш кĕрешӳрех ентеш аллине амантать. Çĕр каçа вăл самаях шыçса каять. Апла пулин те тепĕр кунне кĕрешĕве тухать. Каялла чакма юрамасть. Çĕнтерӳшĕн тăрăшса алă ыратни çинчен те манса каять.

Çурма финалта та вăл выляса илет. Алă тӳрленсе çитмен пирки вăйне сахал мар пĕтерет.

Финалти ăмăртура «Динамо» обществăн виçĕ хут чемпионне Баргесяна выляса ярать, иккĕмĕш вырăна тухать.

Ăмăртусем хыççăн Соколова сбора хăвараççĕ. Совет Союзĕнчи çамрăксем хушшинче мала тухассишĕн ирттерекен ăмăртăва хатĕрленме пуçлаççĕ. Чемпионат Каунас хулинче иртнĕ.

Çамрăксем хушшинче мала тухассишĕн ирттернĕ Раççей ăмăртăвĕсене Валериан çĕнтерес шанчăкпа хутшăннă. Шухăшланă – пурнăçланă.

Раççей Федерацийĕн чемпионне çĕршыв чемпионатне йыхравланă. Чемпионатра унăн секунданчĕ Г.Николаев пулнă. Тытăçусем тренера чăннипех те тĕлĕнтернĕ. Виçĕ кĕрешӳре Валериан пĕрремĕш раундрах çĕнтерӳпе вĕçленĕ, тăваттăмĕш – иккĕмĕшĕнче. Икĕ хирĕç кĕрешекене нокаута янă. Çакна никам та ĕненме пултарайман. Виçĕ çул çурă каялла çеç-ха Валериан типшĕм пулнă, ăна ринга кăлармa хăрана, физкультурăпа туслашма хушнă.

Халĕ вара Валериан Соколов çĕршыври çамрăксем хушшинче Чăваш Енрен хисеп пьедесталĕн чи çӳллĕ картлашки çине хăпарнă пĕрремĕш боксер. Алма-Атара ирт-

тернĕ юниорсен чемпионатĕнче Валериан ылтăн медале тивĕçнĕ, вăл СССР спорт мастерĕн нормине пурнăçланă.

XIX Олимп вăййисем пуçланиччен çулталăк маларах Соколов тĕнчери, Европăри, çĕршыври нумай ăмăртусене хутшăннă, хăйĕн спортри ăсталăхне туптанă.

Венгрире «Олимп шанчăкĕсем» матч ирттернĕ. Совет боксерĕсен командине Соколова та кĕртнĕ.

Будапешта 22 çулран çамрăкрах спортсменсем тăхăр çĕршывран пуçтарăннă. Тренерсем Мехикăри олимпиадăна хутшăнма кандидатсем хатĕрленĕ. Рингра Валериан хăйне шыври пулă пекех туйнă. Вăл Торрес кубинеца нокаута янă. Виçĕ кĕрешӳ Соколов çĕнтернипе вĕçленнĕ. Ăна ылтăн медаль тата турнирти чи лайăх боксер тесе фарфортан тунă ваза панă.

Бокс енĕпе Совет Союзĕнче мала тухассишĕн ирттерекен ăмăрту çывхарса килнĕ.

Ăна Армени Республикин Ленинакан хулинче ирттерме палăртнă. Çакăнта ĕнтĕ Мексикăн тĕп хулинче ирттерекен Олимпиадăна хутшăнма путевка çĕнсе илеççĕ.

Кăнтăр Ленинакан спортсменсене ăшшăн кĕтсе илнĕ. Бокспа туслă вырăнти çынсем çапла шӳтлесе каланă: «Мехика çулĕ Ленинакан урлă выртать».

Геннадий Николаевич Герасимов тренер ӳттисемпе шухăш-кăмăллă: «Манăн вĕренекен чи лайăх формăра».

Тăван республикăра Валериана шаннă, вăл çĕнтерӳпе таврăнасса кĕтнĕ.

Июлĕн 9-мĕшĕнче Соколов çĕршыв чемпионатне хутшăнать. Унпа кĕрешекен – çĕршыври çамрăксем хушшинчи ылтăн призерĕ Александр Мельников москвич. Вĕсем халиччен Калининградра тĕл пулнă-ха, пĕр-пĕрне пĕлсе çитнĕ. Александр çĕнтересшĕн, Валериан та парăнасшăн мар.

Кĕрешӳ вăхăтĕнче чăвашла: «Давай, Валера!» сасă кĕрлесе кайнă. Хамăр ентешсем – воин-пограничниксем хавхалантарнă ăна. Салтаксем ăмăртăва пирĕн ентеш те хутшăнать тесе уншăн «чирлеме» командиртан ятарласа ыйтса тухнă. Армение экскурсие килнĕ шкул ачи-

сем те курма килнĕ. Çакă Валериана çĕнĕ вăй хушнă. Ентеш вĕсен шанăçне тӳрре кăларнă. Виçĕ раундĕнче те очкосемпе выляса илнĕ.

Иккĕмĕш кĕрешӳ Вильнюсри Тадас Томашевичпа пулнă. Пирĕн ентеш ăна та парăнтарнă.

Июлĕн 13-мĕшĕнче кам финала тухни паллă пулнă. Финалта 44 спортсмен çĕнтерӳшĕн кĕрешнĕ. Çăмăл виçере Валериан Соколовăн 1967 çулта чемпионатра çĕнтернĕ Киеври Виталий Бендаловскийпе тата Ташкентри Борис Ниязов боксерпа кĕрешмелле. Иккĕшĕ те пултаруллă, чапа тухнă спортсменсем. Çивĕч тата йывăр кĕрешӳре Соколов вĕсене иккĕшне те парăнтарнă. Нумайччен кĕтнĕ самант çĕнтерӳпе вĕçленнĕ. Çакă тренершăн пысăк парне пулнă.

Çĕршывăн пĕрлештернĕ командин аслă тренерĕ Виктор Иванович Огуренко Соколовăн тренерне Геннадий Николаевича çапла пĕлтернĕ: «Чăваш Енри Геннадий Николаевич Герасимова унăн воспитанникĕ Соколов тунă пысăк çĕнтерӳпе саламлатăп. Çак ĕçе юратакан тата хăюллă каччăн малашлăхĕ пысăк».

Спорт мастерĕ Валериан Соколов ылтăн медальпе пĕрле Мехикăри XIX Олимп вăййисене хутшăнма телейлĕ путевка çĕнсе илнĕ.

1968 çулхи сентябрь уйăхĕ. Инçетри Мексика çĕршывĕнчи Мехико ятлă хулара пулса иртнĕ XIX Олимп вăййисем спорта юратакансен асĕнче нумайлăха юлчĕç.

Совет çыннисем, уйрăмах Вăрмар районĕнчи ĕççынисем, Олимп вăййисем пынă вăхăтра Америка континентĕнчен паракан передачăсене тимлесе пăхрĕç. Çапла пулмасăр, Мехикăри Олимпиадăна пирĕн районти Пинер ялĕнче çуралса ӳснĕ Валериан Соколов боксер та хутшăннăçке-ха. Вăл рингра мĕнле кĕрешни кашнинех хумхантарчĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Пинерсем Олимп вăййисем пынă вăхăтра ун патне кĕрешӳре çĕнтерме ырлăх-сывлăх сунса саламлă телеграмма та ячĕç. Валериан ял-йышсен шанчăкне çухатмарĕ. Унтан çĕнтерӳпе таврăнчĕ.

Октябрĕн 30-мĕшĕнче ирхине Канашри ĕçсыннисем Мускав-Томск поезда кĕтсе илме йышлăн тухнă. Чукун çул вокзалĕн перронĕ çине вĕсем «Пултаратăн, Валериан!», «Санăн çитĕнӳсемпе савăнатпăр!», «Малашне те çавăн пек пул, Валера!» – тата ытти тĕрлĕ çырнă транспарантсемпе пынă. Çĕнтерӳпе таврăннă ятпа чукун çул вокзалĕ умĕнче савăнăçлă митинг пулса иртнĕ. КПСС обкомĕн секретарĕ И.П.Прокопьев Валериан Соколова Мехикăра тунă пысăк çитĕнӳпе ăшшăн саламланă. Сăран перчетке рыцарьне çавăн пекех Канаш хулин комсомол организацийĕн представителĕсем, спортсменсем саламласа çапла каланă: «Паян пĕтĕм Канаш санăн çĕнтерĕве алă çупать. Санăн калама çук пысăк çĕнтерӳ пирĕн спортсменсене çĕнĕ çунат хушать».

Олимпиада геройне Шупашкарта кĕтнĕ. Çав кунах электроаппаратура завочĕн культура керменĕнче ăна чысласа вечер ирттернĕ.

XIX Олимп вăййисен чемпионне унăн ентешĕсем Пинерсем – тахçантанпах кĕтнĕ. Акă кĕтнĕ кун та çитрĕ. Ноябрĕн 25-мĕшĕнче Валериан Соколов хăй çуралса ӳснĕ ял-йышсемпе тĕл пулчĕ. Çак ятпа ялти клубра тĕл пулу вечерĕ ирттерчĕç. Олимп паттăрне курма Пинерсем кăна мар, кӳршĕ ялсенчен – Вăтакасран, Малтикасран, Çĕнĕ Кинчертен те килнĕ.

Президиума Олимп чемпионĕ В. Соколов, КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ А. Борцов, райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕн заместителĕ В. Смирнов, колхоз руководителĕсем, ялти интеллигенци представителĕсем хăпараççĕ.

Савăнăçлă пухăва, кĕске сăмах каласа, колхоз председателĕн заместителĕ Ф. Кузьмин уçать, Валериан Соколова сăмах парать.

Чемпион кăшт хумханни сисĕнет: залра паллакан çынсем, тăванĕсем, пĕрле выляса ӳснĕ тантăшĕсем лараççĕ-çке. Çиелтен пăхсан, Валериан та вĕсенчен нимĕнпех те уйрăлса тăмасть темелле. Вĕсемпе пĕрле вăл шкула çӳренĕ, каникул вăхăтĕнче колхозра çитĕннисене пу-

лăшнă, шавлă вăйă-кулăсене юратнă, çу кунĕсенче çара уран Энĕш шывĕ хĕрринче чупнă. Çапах та ун характерĕнче чăтăмлăх, тӳсĕмлĕх ытларах пулни, йывăрлăхсенчен хăраманни, спортра пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн вăйхала шеллеменни, хăй умне лартнă тĕллеве пурнăçа кĕртессишĕн ăнтăлни ăна ыттисенчен уйăрать.

Боксер перчеткин рыцарĕ клуба пухăннисене Олимп вăййисем мĕнле иртни çинчен каласа пама пуçлать. Залра ларакансем вăл каланине хăлха тăратса итлеççĕ.

– Мексика халăхĕ пире тараватăн кĕтсе илчĕ, – тет Валериан Сергеевич, хăйĕн сăмахне пуçласа. – Олимп ялĕнче пирĕн делегацинчи арçынсене вунă хутлă çурта вырнаçтарчĕç. Эпир тăватă хутчен çĕршыв чемпионĕ ята çĕнсе илнĕ Евгений Фролов боксерпа пĕр пӳлĕмре пурăнтăмăр. Евгений Токиора иртнĕ Олимпиадăна та хутшăннă. Японирен кĕмĕл медаль илсе килнĕ.

Валериан малтан хăйне хăш боксерпа кĕрешĕве кăларĕç-ши тесе сахал мар шухăшланă. Çавăнпа шăпа янин результачĕсене пĕлесшĕн чăтаймасăр кĕтнĕ. Унпа ăмăртаканни Эквадор спортсменĕ Р.Арчундия пулнă.

Октябрĕн 16-мĕшĕнче Валериан «Арено Мехико» ятлă пысăк зала пынă. Çакăнта ĕнтĕ боксерсен кĕрешмелли вырăнĕ. Вăл, çăмăллăн канат айĕнчен тухса, хăйĕн вырăнне йышăннă. Ăна хирĕçри кĕтесре тĕксĕм питлĕ Эквадорец Арчундия курăнса кайнă. Кĕске вăхăт хушши алă тытса паллашнă хыççăн кĕрешӳ «шлагбаумĕ» уçăлнă. Эквадорец малтанах вăйлăн атакăлама пуçланă. Пуçран вăйлăн çапнипе Арчундия Валериана урараи ӳкернĕ. Пĕр вăхăт куçра тĕттĕмленсе килнĕ... Рефери вăхăта шутлама пуçланă. Тăватă çеккунтран Соколов ура çине тăнă. Унăн пуçĕнче пĕр шухăш пулнă: «Тăшмана» çĕнтермеллех.

Пĕрремĕш раундра эквадорец çĕнтернĕ.

– Иккĕмĕш раундра санăн çĕнтермеллех, – çапла хавхалантарнă Валериана çĕршывăн пĕрлештернĕ командин аслă тренерĕ Виктор Иванович Огуренко.

Иккĕмĕш виçĕ минутлăх интереслĕ атакăсемпе контратакăсенче иртнĕ.

Виççĕмĕш раундра вара çĕнтерӳ пирĕн ентеш енче пулни уçăмлăнах палăрчĕ.

Очкосене шутласа пăхнă хыççăн судьясем Соколов çĕнтернĕ тесе йышăннă. Кĕрешме йывăр пулнă. Калама çук пысăк чăтăмлăх кăтартни тата çине тăни çĕнтерме пулăшнă.

Тепĕр пилĕк кунтан каллех ринга тухнă. Ку хутĕнче В. Соколов М. Картер акăлчанпа кĕрешнĕ. 20 çеккунтрах Валериан ăна нокаута «ăсатнă». Каллех çĕнтерӳ! Совет спортсменĕ чĕрĕк финала тухма путевка çĕнсе илнĕ.

– Çакăн хыççăн «Арено Мехико» спорт çуртне боксерсен ăмăртăвне курма çӳрекенсем ман ята час-часах асăнма тытăнчĕç. Çавах лăпланса ларма шутламарăм. Мĕншĕн тесен икĕ тĕл пулу турнир пуçламăшĕ кăна-ха, – тет чемпион, Олимп вăййисенчи самантсене аса илсе.

Кени çĕршывĕнчен килнĕ Мбгуа негра çĕнтерсе, Соколов çурма финала тухнă. Чĕрĕк финалта çĕнтерсе, вăл кĕмĕл медаль хуçи пулса тăнă.

Валериан Соколов çурма финалта Ази континенчĕн чемпионĕпе Мариока японецпа тĕл пулнă. Япони боксерĕ питех те чăрсăррăн тапăнса кĕрешнĕ. Мариокăпа иртнĕ тĕл пулу пирĕн ентешшĕн чи çивĕччи тата йывăрри пулнă. Темĕнле тăрăшсан та ăна парăнтарма май килмен. Очкосем ытларах пухнипе кăна çĕнтернĕ.

Умра – финал. Халĕ ĕнтĕ, кирек мĕнле пулсан та, кĕмĕл медаль пирĕн Валериан. Инçетри континентра кĕрешекен чăваш çамрăкĕ патне хамăр республикăран та телеграммăсем пырсах тăнă. Çĕнĕ çĕнтерӳ тума ырлăх-сывлăх сунса янă вĕсене. Çакă ĕнтĕ, паллах, ăна кĕрешӳре çĕнĕ вăйхал хушнă. Шупашкартан, юратнă мăшăрĕнчен – Тамарăран та – телеграмма пырса çитнĕ!: «Кĕмĕл пур, ылтăншăн кĕреш!». Çапла саламланă Тамара хăйĕн мăшăрне.

Соколов ылтăн медальшĕн кĕрешме ринга октябрĕн 26-мĕшĕче тухнă.

«Чи телейлĕ шăматкун», – тенĕ вăл çав куна. Чемпион ятне çĕнсе илнĕ.




*1968 çул. Совет Союзĕн пĕрлештернĕ команди.*
*Варринче — Валериан Соколов*




*Чĕрĕк финалти ăмăрту:*
*В.Соколов (СССР) – Самуэль Мбгуа (Кени)*

Олимп чемпионĕн ятне пирĕн боксерсенчен Б.Лагутинпа Д.Поздняк та ҫĕнсе илнĕ. Совет боксерĕсен команди пĕрремĕш вырăн йышăннă.

...Валериан Соколов финалти ăмăртура епле кĕрешнине пирĕн районти ҫĕршер ҫын телевизорпа пăхса савăнчĕҫ. Ун чухне вăл Уганда боксерĕпе Муквангăпа кĕрешрĕ. Иккĕшĕ те пĕр-пĕрне вăйлăн тапăнса пыраççĕ. Вăхăт-вăхăтпа Валерианшăн йывăр самантсем те килсе тухаççĕ. Ара «ылтăншăн» пыракан кĕрешӳ епле ҫăмăл пултăр-ха? Тимлĕн пăхса ларакан ҫакна асăрхатех: тапăнса вылять-и, хӳтĕленет-и, Валериан очко ытларах пухма тăрăшать.

Уганда боксерĕ час-часах аллине пуҫ тĕлне тытса хӳтĕленме тытăнчĕ, унтан ҫĕре ӳкрĕ. Иккĕмĕш раундра тата хĕрӳ кĕрешӳ пычĕ. Малтан Соколовăн кăштах хӳтĕленмелле пулчĕ, кайран «тăшмана» хăй сăр илчĕ.

Комментатор та чăтса тăраймарĕ.

– Питĕ маттур кĕрешет! – илтĕнчĕ унăн савăнăҫлă сасси.

Ҫав вăхăтра Валериан Уганда боксерне пĕр кĕтесе хупăрларĕ. Лешĕ чăтаймарĕ, йăванса кайрĕ. Ҫакăнпа кĕрешӳ вĕҫленчĕ.

Уганда боксерне ҫĕнтерсе, Валериан Соколов Олимп чемпионĕ ята ҫĕнсе илчĕ. Мехико столицин стадионĕнче маттур спортсмена юлташĕсем саламланă.

Чи паттăррисене медальсем пама тытăнсан, Хисеп пьедесталĕ ҫине Валериан Соколов хăпарчĕ.

– Шупашкарти бокса юратакансем, эсир Шупашкар боксерне куратăр-и? – океан леш енчи ҫĕршывран савăнăҫлăн пĕлтерчĕ репортер.

Соколов ҫĕнтерĕвне хисеплесе, Мехикăри стадионта Совет Союзĕн Гимнĕ янăрарĕ, ҫĕршыв ялавĕ мăнаҫлăн ҫӳлелле хăпарнă...

Валериан Соколов ҫавăн пекех Совет Союзĕн ытти спортсменĕсен ҫитĕнĕвĕсем ҫинчен те каласа пачĕ, хăйĕн пурнăҫĕпе, малашнехи ĕмĕчĕсемпе паллаштарчĕ.

Ыйтусем, ыйтусем, ыйтусем... Вĕсем ҫине чемпион тĕплĕн, васкамасăр хуравлать.

– Çапла. Чăваш паттăрĕ çинчен панă передачăри самантсем халĕ те куç умĕнчех-ха. Боксер хăй каласа пани пирĕн чĕремĕрсенче тарăнрах йĕр хăварчĕ, витĕмлĕрех пулчĕ, – терĕ хăйĕн сăмахĕнче колхоз председателĕн заместителĕ Федор Кузьмич Кузьмин.

Чемпиона шкул ачисен ячĕпе саккăрмĕш класра вĕренекен Олег Федоров, ял ĕçченĕсен ячĕпе партком секретарĕн заместителĕ Николай Васильевич Васильев тата ыттисем те саламларĕç. Спортра, вĕренӳре тата пысăкрах ӳсĕмсем тума ырлăх-сывлăх сунчĕç.

– Валериан Сергеевич Соколов боксерăн спортри çитĕнĕвĕ районти çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Бокса аталантарасси çине пысăк тимлĕх уйăрмалла пирĕн. Шкулсенче секцисем йĕркелемелле, ăмăртусем ирттермелле. Соколов пек пултаруллă спортсменсем çитĕнтерме тăрăшмалла. Эпир физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе пулăшма яланах хатĕр, – терĕ КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Анатолий Дмитриевич Борцов.

«Победа колхоз ĕçченĕсене эсĕ Олимпиадăра тунă çитĕнӳсем хавхалантараççĕ, Валериан Сергеевич», – терĕç ял ĕçченĕсем пĕр шухăш-кăмăллăн. – Эпир те ĕçре сан пекех хастар пулăпăр, хуçалăх экономикине тĕреклетессишĕн ырми-канми кĕрешĕпĕр! Çапла, чăннипех те хумхантаракан самантсем пулчĕç çав кун. Пинерсем хăйсен паттăр ентешне тивĕçлипе чысларĕç. Чапа тухнă боксер В.Соколов районти «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцийĕн коллективĕпе тĕл пулчĕ. КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕпе А. Борцовпа пĕрле пычĕç вĕсем редакцине. Олимп вăййисем мĕнле иртни çинчен каласа пачĕ.

Спортри çитĕнӳсемшĕн правительство Валериан Соколова «Хисеп Палли» орденпа наградăларĕ.

Олимп вăййисем иртсе кайрĕç. Пирĕн ентеш чи çăмăл виçепе кĕрешмелли тапхăра калама çук ăнăçлă вĕçлерĕ. Çурма çăмăл виçеллĕ категорие куçрĕ. Март уйăхĕнче вăл Хусана çĕршыври XXV чемпионата кайрĕ. Çурма çăмăл виçепе кĕрешсе ылтăн медаль çĕнсе илчĕ.

Çак чемпионат пирки икĕ Олимпиадăн кĕмĕл призерĕ, тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ Алексей Киселев акă мĕн каланă: «Валериан Соколова уйрăмах палăртас килет. Халĕ вăл пирĕн боксри чи çутă фигура».

Совет боксерĕсем Бухарестра иртнерĕ Европа чемпионатĕнче, Лас-Вегасри США – СССР боксерсен матчĕнче, Нью-Йоркпа Чикагора иртнерĕ ăмăртусенче те лайăх результатсем кăтартнă. Вĕсемпе пĕрле пирĕн ентеш те пулнă. Кашни хутĕнчех ылтăн медаль çĕнсе илнĕ.

Кĕркунне иртнерĕ XXVI чемпионатра вара Валерианăн кĕмĕл медальпе килĕшмелле пулнă. Çурма финалта вăл Борис Кузнецов астраханецпа кĕрешнĕ. Каунасри спорт керменĕнчи тытăçу Кузнецов çĕнтернипе вĕçленнĕ.

Часах Валериан пурнăçĕнче тепĕр паллă событи пулнă. Бокс енĕпе СССРта мала тухассишĕн иртерекен XXVII чемпионат пуçланас умĕн, кăшт маларах кăна, олимпиец Чăваш ял хуçалăх институтĕнче диплом проектне хӳтĕленĕ. Вăл хăй çуралса ӳснĕ ялти машинăсем юсамалли мастерскойăн проектне туса хатĕрленĕ. Специалистсем механизаци факультетĕнче вĕреннĕ Соколовăн ĕçне пысăка хурса хакланă. Государство комиссийĕ ăна инженер-механик квалификацине панă.

Тин кăна институт пĕтерни çинчен алла диплом илнĕ Валериан каллех Хусана СССР чемпионатне васканă. Чемпион ятне çĕнсе илессишĕн кĕрешме 203 спортсмен килнĕ кунта.

Çак ăмăрту питех те интереслĕ иртнĕ. Пирĕн ентеш чĕрĕк финалта Мурманскран пынă спорт мастерĕпе Игорь Гарифуллинпа тĕл пулнă. Соколов кĕрешĕве малтанах питĕ активлă пуçланă. Пирвайхи çеккунтсенчех вăл хăйпе ăмăртакана сылтăм, унтан сулахай аллипе вăйлăн тивертнĕ. Гарифуллин нокаута лекнĕ. Çакăн хыççăн олимпиец каллех çине-çине тапăнма пуçланă. Çапла вара, пĕрремĕш раунд вĕçленичченех судьясем Валериан çĕнтерни çинчен пĕлтернĕ. Ку вăл çак чемпионатри чи кĕске вăхăта пынă кĕрешӳ пулнă.

Чăваш боксерĕпе пĕр виçери Хусан атлечĕ Александр Андрианов та çак чемпионатра питĕ ăнăçлă ăмăртнă. Чĕрĕк финалта вăл çĕршывра мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртусен призерне, Белоруссирен пынă опытлă мастера, Виталий Калмыкова çĕнтернĕ. Шăпа тăрăх çурма финалта унăн В.Соколовпа тĕл пулма лекнĕ. Çамрăк пулин те, Андрианов кĕрешÿçĕ чи лайăх енĕсемпе палăрма ĕлкĕрнĕ, юниорсем хушшинче СССР тата Европа чемпионĕн ячĕсене илнĕ, «Локомотив» обществинче пĕрре кăна мар мала тухнă.

Акă, спорт керменне боксерсен çĕршыври чемпионатĕнчи çурма финалти ăмăртусене курма пиншер çын пухăннă. Хусан çыннисем, паллах, хăйсен ентешĕпе А.Андриановпа Олимп вăййисен чемпионĕ В.Соколов хушшинчи кĕрешÿ пуçланасса чăтайми кĕтеççĕ. Кĕтнĕ вăхăт çитнĕ. Соколов кĕрешĕве питĕ çăмăллăн, ирĕккĕн пуçланă, рингра чăн-чăн хуçа пулса тăнă. Темиçе хутчен те вăл Андрианова кăкăртан питĕ тĕл пыра-пыра тивертнĕ. Хусан спортсменĕ икĕ хут нокаута лекнĕ. Çапла вара, опытлă спортсмен аслисен чемпионатне пуçласа хутшăннă Андрианова çăмăллăнах çĕнтернĕ. Çакăнтах В. Соколовăн профсоюзсен спартакиадин чемпионĕпе, çĕршыври 1970 çулхи чемпионачĕн финалисчĕпе Астраханьтен пынă Борис Кузнецовпа тĕл пулмалла.

Чемпион ятне кам çĕнсе илĕ? Валериан Соколов е Борис Кузнецов? Кашниех интересленнĕ çакăнпа. Спорт керменĕнче лармалли пушă вырăн пачах та çук. Акă, диктор сасси янăраса каять: «Ринга Мехикăри Олимп вăййисен чемпионĕ Валериан Соколов («Динамо», Шупашкар) тата иртнĕ çул çĕршывра мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртура кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ Борис Кузнецов («Трудовые резервы», Астрахань) тухаççĕ. Иккĕшĕ те вăйлă, опытлă спортсменсем. Хăйсемпе кĕрешекенсене çĕнтерсе вĕсем финала тухнă. Çак икĕ спортсмен пĕрпĕрин вăйлă тата вăйсăр енĕсене лайăх пĕлеççĕ. Вĕсем иккĕшĕ Каунас хулинче те вăйсене виçсе пăхнăччĕ. Ун чухне Кузнецов çĕнтернĕччĕ. Хальхинче ылтăн медале

кам çĕнсе илĕ? Пирĕн ентеш ăмăртăва лайăх хатĕрленни курăнчĕ. Ăмăртура хӳтĕленме пĕлни, çав вăхăтрах тупăшакана пĕлсе атакăлани Соколов ăста боксер пулнине тепĕр хут лайăх çирĕплетсе панă.

Ăмăрту вĕçленнĕ. Судьясем Валериан Соколов çĕнтерни çинчен пĕлтернĕ. Мĕн тери савăнăç: икĕ çул каялла чухнехи пекех, хусансем Валериан Соколовпа унăн тренерне – Геннадий Николаевич Герасимова ăшшăн саламлаççĕ.

1971 çулхи декабрьте боксерсен Ленинградри «Юбилейный» спорт керменĕнче пулса иртнĕ тĕнчери III турнирĕнче те, çурма çăмăл виçепе, пĕрремĕш вырăн йышăнса, пирĕн ентеш çĕнтерӳçĕ пулса тăнă.

Чылай çĕршывсемпе хуласенче темиçе хутчен те пьедесталăн чи çӳлти вырăнне хăпарса тăма пултарчĕ Валериан. Калининград, Мускав, Ленинград, Вроцлав, Берлин, Варшава тата ытти чылай хуласенчи спорта юратакансем çĕнтерӳпе саламланă ăна. Канада, Уганда, Кенй, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Румыни çĕршывĕсенчен те темиçе хутчен те çĕнтерӳпе таврăннă.

1973 çулхи март уйăхĕнче Львов хулинче СССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕн призне çĕнсе илессишĕн боксерсен Пĕтĕм Союзри турнирĕ пулса иртнĕ. Çак ăмăртусем Европăри чемпионата хутшăнмалли тĕрĕслев пулнă. 57 килограмм таякан спортсменсем хушшинче СССР спорт комитечĕн призне çĕнсе илессишĕн пирĕн ентеш Соколов та кĕрешнĕ, темиçе уйăх хушши вăл ринга тухайманччĕ. Халĕ вара Пĕтĕм Союзри яваплă ăмăртусенче хăйĕн вăйне тĕрĕслесе пăхрĕ. Ку хутĕнче вăл Хĕç-пăшаллă Вăйсен командинче пулчĕ.

Малтанхи тытăçусенчех пирĕн ентеш хăйĕн вăйĕпе ăсталăхĕ чакманнине çирĕплетсе пачĕ. Финалта унăн Ленинград чемпионĕпе А.Смирновпа тĕл пулмалла пулчĕ. Пирвайхи çеккунтсенчех Соколов опытлăрах пулни сисĕнчĕ. Валериан сулахай алăпа темиçе хутчен лектернĕ самантсем ленинградеца чăннипех те хăратса ӳкернĕ.

Иккӗмӗш раундра чапа тухнӑ рефери – Владимир Енгибарян боксер – ҫӗнтерӳ уҫамлӑнах Валериан Соколов енче пулнипе кӗрешӗве чарнӑ. Пирӗн ентеш СССР спорт комитечӗн призне тивӗҫлӗ пулнӑ.

Ноябрь уйӑхӗнче Литва тӗп хулинче – Вильнюсри спорт керменӗнче ҫӗршыври боксерсен XXXIX чемпионачӗ пулса иртнӗ. Ҫак ӑмӑртӑва 72 хуларан 194 спортсмен хутшӑннӑ. Вӗсем хушшинче ҫӗршыв чемпионӗсем 14, Европа чемпионӗсем 7 пулнӑ. Олимп чемпионӗ пӗрремӗш тӗл пулура Болдыша ҫӗнтернӗ. Чӗрӗк финалта 20 ҫулхи Виктор Радкевича парӑнтарнӑ. Ҫурма финалта Орел спортсменне Гриднева пӗрремӗш раундрах нокаута янӑ.

Финалта Валериан Ереван спортсменӗпе, СССР спорт мастерӗпе Ашат Аветисянпа тӗл пулнӑ. «Советский спорт» хаҫат ҫак тӗл пулу ҫинчен ҫапла ҫырнӑ: «Аветисян тӳрех атакӑлама пуҫларӗ. Соколов вара ӑна сулахай аллипе вӑйлӑн пырса тивертнипе кӗтсе илчӗ. Аветисяна ҫакӑ нимӗн чухлӗ те пӑшӑрхантармарӗ...»

Олимп чемпионне мӗншӗн ҫапла хисеплеменнине калама йывӑр. Анчах та ҫакӑ паллӑ: Аветисяна «хӗтӗртнӗ». Малтанхи минутра вӑл рингра пӗчченех пулчӗ тейӗн. Соколова пӗр вӗҫӗмсӗр атакӑларӗ. Анчах Соколов, нумай опыт пухнӑ боксер, кӗрешӗве ҫакӑн пек пуҫлакансене сахал мар курнӑ. Ҫавӑнпа Аветисяна кӗлеткерен те, пуҫран та пыра-пыра тивертрӗ.

Тытӑҫу нумая пымарӗ. Соколов часах ӑна нокаута ячӗ. Рефери шут уҫрӗ. Раунд вӗҫленме вӑхӑт питех те сахал юлчӗ. «Бокс!» команда панӑ хыҫҫӑн Аветисян каллех Соколов ҫине сиксе ӳкрӗ. Соколов ҫухалса каймарӗ. Сулахай алӑпа икӗ хутчен вӑйлӑн тивертнӗ хыҫҫӑн Аветисяна каллех нокаута ячӗ.

Аветисяна ҫӗнтерсе, Валериан Соколов ылтӑн медаль ҫӗнсе илчӗ.

Тава тивӗҫлӗ спорт мастерӗ, Олимп чемпионӗ Борис Кузнецов пирӗн ентешӗн ҫӗнтерӗвӗ пирки ҫапла каланӑ: «Валериан питех те ӑнӑҫлӑ кӗрешрӗ. Вӑл сулахайпа пырса тивертни хӑрушӑ. Ытлашши вӑйлипе мар, хӑнӑх-

маннипе. Ҫакна астăватăп: вăл ăҫтан лектерессе нихăҫан та тавҫăрса илме ҫук». Ҫапла вара вăл тăваттăмĕш хут СССР чемпионĕн ятне ҫĕнсе илет.

Вăрмарсем Олимп чемпионне манмаççĕ. 1991 ҫулхи август уйăхĕнче Валериан Соколов боксер ячĕпе район та спорт фестивалĕ иртрĕ. Пирĕн ентеш 45 ҫул тултарнă ятпа халалланă ăна.

16 сехет тĕлне районти Спорт ҫуртне халăх лăк туллиех пухăнчĕ. Пĕрремĕш хутĕнче «召Мединтерспорт» клуб спорт таварĕсем сутассине йĕркеленĕ. Иккĕмĕш хутĕнче буфет ĕҫлет. Паян кунта СССРти профессионал-боксерсен ăмăртăвĕ пулать. Спорт залĕнче районти культура ҫурчĕ ҫумĕнчи «Салам» ансамбль кĕвĕ шăрантарать. Темиҫе кĕвĕ вылянă хыççăн ертсе пыраканĕ фестивалĕн пуҫламăш пайĕ уҫăлни ҫинчен пĕлтерет. Профессионал-боксерсем килсе ҫитиччен программăна Спорт ҫуртĕнчи ҫамрăк боксерсем малалла тăсаççĕ. Тăвата мăшăр тухать ринга. Ăмăрту судйи тĕнче класлă спорт мастерĕ, темиҫе хутчен Европа чемпионĕ пулнă, тĕнче Кубокне ҫĕнсе илнĕ Валерий Лаптев боксер пирĕн ҫамрăк боксерсен ăсталăхне тивĕҫлипе хаклать, вĕсене асăнмалăх сувенирсем парса чыс тăвать. Ҫавăн пекех Чулкасри ҫамрăксен клубĕнчи самбистсене те лайăх кĕрешнĕшĕн асăнмалăх парнесем параççĕ.

Фестивале чаплă лару-тăрура уҫмалли вăхăт ҫитрĕ. Район Совечĕн председателĕн заместителĕ Н.Дмитриевана сăмах параççĕ. Вăл пухăннисене чаплă уяв ячĕпе ăшшăн саламлать, хамăр ентешĕн, тĕнче класлă спорт мастерĕн, XIX Олимп вăййисен чемпионĕн Валериан Сергеевич Соколовăн пурнăҫĕпе унăн ҫитĕнĕвĕсем ҫинчен каласа парать, районта физкультурăпа спорта аталантарас тĕлĕшпе умра тăракан тĕллевсем ҫинче чарăнса тăрать.

Унтан сăмах Валериан Соколова параççĕ.

– Мана ҫакăн пек хисеплесе пысăк чыс тунăшăн эпĕ район руководителĕсене, спорта юратакансене тав тума тивĕҫ. Пирĕн районта физкультурăпа спорт яланах ҫӳллĕ шайра пултăр, – тет вăл.

СССР тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ (вăл Соколовăн тренерĕ) Г.Н.Герасимов хамăр ентешĕн спортри çитĕнĕвĕсем çинчен тĕплĕн каласа парать.

– Пирĕн ялти çамрăксем хамăр ентешĕн, Пинерте çуралса ӳснĕ Валериан Соколов боксерăн пултарулăхĕпе тивĕçлипе мухтанаççĕ, ун пек пулма тăрăшаççĕ, – пĕлтерет «Чувашия» совхоз директорĕ О.Иванов.

Вăл Соколова совхоз ячĕпе парне парать. «Путь Ильича» колхоз председателĕпе И.Михайловпа «Урмарский» совхоз директорĕ Г.Эверсков пирĕн ентешĕн çитĕнĕвĕнче унăн тренерĕн Г.Герасимовăн тӳпи пысăк пулнине палăртса ăна асăнмалăх парнесем парса чыс тăваççĕ.

Тĕнче чемпионĕ, СССР тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ В.Львов боксер спортсменсене саламлать, хамăр ентешĕн çитĕнĕвĕсем çинчен каласа парать.

Тĕп мероприятисем пуçланаççĕ. Шупашкартан килнĕ судья-информатор Талдыкин чĕннĕ хăнасемпе тата ăмăртăва хутшăнакансемпе паллаштарать.

Ринга 63,5 килограмлисем хушшинче Шупашкарти Сергей Балалаевпа Донецкри Владимир Ядыкин тухаççĕ. Тытăçу çивĕч иртрĕ. Судья ытларах очко пухса, ăмăртура Ядыкин çĕнтерни çинчен пĕлтерет.

Хальхинче рингра – 79 килограмлисем. Кусем – Шупашкарти Сергей Цыпаревпа Донецкри Константин Охрей. Пирĕн ентеш Цыпарев пурĕ 164 ăмăртăва хутшăннă, вĕсенчен 137-шĕнче çĕнтернĕ. Вăл СССР чемпионачĕн призерĕ, тĕнчери турнирсен çĕнтерӳçи. Ку хутĕнче те вăл хăйĕнпе тупăшакана парăнтарчĕ.

Судья ринга Шупашкарти Владимир Кояховпа Ульяновскри Ильдус Хайрулов боксерсем тухмалли çинчен пĕлтерет. Вĕсем 57 килограмм таран таякан виçери спортсменсем. Ку хутĕнче те кĕрешӳ Шупашкарсем çĕнтернипе вĕçленчĕ.

Акă, юлашки ăмăрту. Ку хутĕнче рингра 61 килограмм таран таяканнисем. Шупашкарти Игорь Смирновпа Семипалатинск хулинчен килнĕ Тербулаг Асенов. Иккĕшĕ те

самаях опыт пухнă боксерсем. Нумай вăхăт хушши тупăшнă хыççăн кĕрешӳ никам çĕнтерейменнипе вĕçленчĕ.

Валериан Сергеевич Соколов Мехикăри çуллахи XIX Олимп вăййисенче ылтăн медаль çĕнсе илнĕренпе 40 çул иртрĕ ĕнтĕ. Ун хыççăнхи кун-çулĕ унăн çутă та пархатарлă. 1973 çулта вăл Хусанти аслă танк училищине, 1977 çулта Ленинградри физкультурăн çар институчĕн адъюнктурине вĕренсе пĕтерет. СССР Хĕç-пăшаллă Вăйсенче тренерта вăй хурать. Пĕр вăхăт Мадагаскар çĕршывĕнчи Хĕç-пăшаллă Вăйсене вăй-хал енчен хатĕрлес енĕпе советникра тăрăшать. Полковник званипе отставкăна тухать. Унччен вăл наукăпа тĕпчев çар институтĕнче пысăк класлă боксерсем хатĕрлес енĕпе ĕçлекен лаборатори пуçлăхĕ, Раççей профессиллĕ бокс федерацийĕн вице-президенчĕ пулнă. Педагогика наукисен кандидачĕ. Халĕ «Раççей пĕрлештернĕ командисене хатĕрлекен центр» федераллă учрежденин спорт кĕрешĕвĕн управленийĕн начальникĕ. Мускавра пурăнать. Чăваш Ене тăтăшах килсе çӳрет. Спортра пухнă пуян опыт, унăн паха сĕнĕвĕсемпе вĕрентĕвĕсене пирĕн боксерсем хапăлласа йышăнаççĕ. Ăна хисеплесе Шупашкарти ачасемпе çамрăксен спорт шкулне тата пĕр урама унăн ятне панă.



*Валериан Соколов*
*Лена хĕр ачипе*



*Олимп вăййисен чемпионĕ В. Соколов Чăваш телестудире.*

*Сулахайран сылтăмалла: Ф.Павлов – ВЛКСМ Чăваш обкомĕн иккĕмĕш секретарĕ, В.Быстрицкая – телевидени дикторĕ, В.Соколов – чемпион, Г.Герасимов – В.Соколовăн тренерĕ, Н.Громов – полковник, Н.Скородумов – республикăри физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ*



*СССР тава тивĕçлĕ тренерĕ Г.Герасимов тата В.Соколов*



*Çĕнтерӳ!*
*Мĕнле пысăк савăнăç*



*В.Соколовпа КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ А.Борцов (пĕрремĕш ретре иккĕмĕшпе виççĕмĕш) районти «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцийĕнче. 1968*



*В.Соколов (пĕрремĕш ретре сулахайран пиллĕкмĕш) районти комсомол организацийĕнчен облаçри XXIX конференцине суйланă делегатсемпе пĕрле. 1969*



*Олимп чемпионӗ В.Соколов район руководителӗсене автограф ҫырса парать. 1968*



*Ҫӗнӗ Шупашкарти ӑмӑрту хыҫҫӑн. 1969*



## ПУКЛАКОВ
### Николай Иванович

1945 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче Вăрмар районĕнчи Шăхаль ялĕнче çуралнă.

Çăмăл атлетикăпа СССР тĕнче класлă спорт мастерĕ. Пĕтĕм тĕнчери Универсиада чемпионĕ (1970), XX Олимп вăййисене хутшăннă (1972), СССР чемпионĕ тата рекордсменĕ (1966, 1972), Раççей чемпионĕ (1972).

## Универсиада çĕнтерӳçи

Николай Пуклаков мĕн пĕчĕкренех спортсменсем çинчен çырнă кĕнекесене вулама юратнă. Кĕнекери «паттăрсем» çинчен яланах ырăпа калаçнă. Хăш-пĕр чухне юлташĕсем хушшинче пĕр-пĕр чемпиона хӳтĕлесе тавлашăва сахал мар хутшăннă. Вĕсен çитĕнĕвĕсемпе ăмсаннă.

Ардальон Игнатьев çăмăл атлетăн спортри пысăк çитĕнĕвĕсем ăна чăннипех те савăнтарнă. Елчĕк районĕнчи Ĕнел ялĕнче çуралса ӳснĕ Ардальон Игнатьев пĕтĕм тĕнчипех чапа тухнă. Вăл 1952 çултан пуçласа 1959 çулччен СССР чемпионĕн ятне вунпилĕк хут çĕнсе илнĕ. Çирĕм хутчен республика рекордне çĕнетнĕ. 1953 çулта Пĕтĕм тĕнчери çамрăксемпе студентсем фестивалĕн чемпионĕ пулса тăнă. Тепĕр çулхине 400 метра чупас енĕпе континентра чи хăвăрт чупакан çын пулнине çирĕплетсе панă. Мельбурнра ирттернĕ (1956) XVI Олимп вăййисенче бронза медаль илме тивĕçлĕ пулнă. Вăл питех те хăвăрт чупнинчен чапа тухнă тренерсем те тĕлĕннĕ. Хельсинки, Бухарест, Прага, Варшава, Лондон тата ытти нумай хуласенчи стадионсенче ăна çĕнтерӳ тунă ятпа ăшшăн саламланă. Пирĕн ентеш çĕнтерӳсенче илнĕ хĕрĕхе яхăн ылтăн медальсем те çакна лайăх çирĕплетсе параççĕ.

Чăваш çамрăкĕ çакăн пек чаплă çитĕнӳ туни Кольăна та чăннипех хавхалантарнă.

– Çитес вырсарникун ăмăрту ирттеретпĕр, лайăх хатĕрленĕр, – малтанах пĕлтерсе хучĕ шкул ачисене Владимир Леонтьевич Чернов учитель.

-Мала тухакана мĕнле парне пулать? – пĕлме тăрăшрĕç Владимир Зайцев, Николай Владимиров тата Николай Школьников вĕренекенсем. Ялта ирттерекен ăмăртусенче çавсем ĕнтĕ лайăххрах результат кăтартнă.

– Пăшăрханма кирлĕ мар, çĕнтерекенсем валли приз яланах тупăнать.

Учитель малтан шкулти ВЛКСМ комитечĕн членĕсене пухса калаçрĕ. Ăмăртура мала тухакансене мĕнле парнесем илсе памалли çинчен канашларĕç.

Акă, кĕтнĕ кун çитрĕ. Тӳпене тăхлан евĕр йывăр та хăмăр пĕлĕтсем карса илнĕ, хĕвел пачах та курăнмасть. Çавна пула çанталăкĕ те ăшах мар. Апла пулин те, шкул тĕлне ăмăртăва çамрăксем йышлăн пухăнчĕç. Ăмăрту программинче тĕрлĕ дистанцисене чупасси, çӳллĕшне тата тăршшĕне сикесси.

Малтан 100 метра чупмалла. Вун виçĕ çамрăк пĕр рете хатĕрленсе тăнă. Команда парасса кĕтеççĕ, пурте хумханаççĕ.

– Марш! – илтĕнсе каять команда. Ухăран персе янă сăнă евĕр çамрăксем малалла вирхĕнчĕç. Финиш лентине чи малтан Н. Владимиров пырса татрĕ. Унăн вăхăчĕ 13,3 çеккунт. Ун хыççăн финиша пĕр çеккунт каярах Н.Пуклаков çитет.

Чылай вăхăта пычĕ çав кун ăмăрту. Пĕр-пĕр уяв ячĕпе ирттернĕ пекех пулчĕ вăл. Ăмăртусем хыççăн çĕнтерӳçĕсене парнесем пачĕç. Хаклă парнене Коля та илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Ялта пĕрремĕш массăллă ăмăрту пулчĕ ку. Тен, çак ăмăртура çамрăксем хăйсен пултарулăхне кирлĕ пек кăтартаймарĕç те. Анчах та малалли ăмăртусемшĕн вăл пурне те питех те усăллă пулчĕ.

Çуллахи каникул вăхăтне те усăсăр ирттермен вăл. Тренировкăсем тунисĕр пуçне вăй-хала çирĕплетмеллине туйса илнĕ. Çиччĕмĕш класс вĕренсе пĕтерсенех колхозра тракторпа ĕçлекен Николай Яндутов тăванĕ патне пынă.

– Мана помощник пулма ил-ха, санпа пĕрле ĕçлес килет.

– Хăвна шанатăн-и? Кăмăлăр пулсан мана прицепщик кирлĕ.

Çапла вара вăл Николай Иванович трактористпа прицепщикра ĕçлеме тытăнать.

Паянхи пекех астăвать-ха вăл. Çав çулхине çулла колхозра ĕçленĕшĕн ăна пĕр михĕ тырă лекнĕ. Мĕн тери савăннă çакăншăн тăван амăшĕ.

– Маттур, ывăлăм. Çемьене тăрантаракан пултăн. Эсĕ ĕçлесе илнĕ сарă тулă çăнăхĕнчен паян тутлă кукăль пĕçерсе çийĕпĕр, – тенĕ ăна лăпкăн ачашласа амăшĕ.

Саккăрмĕшпе тăххăрмĕш классенче вĕреннĕ чухне те «хурçă утран» ютшăнман вăл. Усăллă ĕç тунă, вăйхала çирĕплетнĕ.

Вăтам шкулăн тăххăрмĕш класĕнче вĕреннĕ чухне Коля спорта ытларах та ытларах юратма пуçланă. Çуран чупса ăмăртассине уйрăмах кăмăлланă. Пĕрле вĕреннĕ юлташĕсем: Н.Владимировпа Н.Школьников, унăн пултарулăхне кура, ăна спортпа çывăхрах туслашма пулăшнă. Пуклаков тренировкăсем тăтăшахirттерме пуçланă. Унăн спортри ӳсĕмĕсем те палăрмаллах лайăхланнă. Пушă вăхăтра йĕлтĕрпе çӳренĕ, велосипедпа чупнă. Çакăн хыççăн çĕнĕ вăй-хăват хутшăннăн туйăннă, чĕрере иксĕлми хастарлăх çуралнă. Шкулта ирттерекен ăмăртусенче яланах малти вырăнсене йышăнма пуçланă.

1961 çул уншăн асра юлнă. Çак çул пĕрремĕш хут районта ирттернĕ çăмăл атлетсен çуркуннехи кросне хутшăннă. 2 километрлă дистанцие 55 çеккунтра чупса тухнă, çамрăксем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Çĕнтерӳçĕсене хисеп пьедесталĕ çине хăпарма чĕнеççĕ. Чи çӳллĕ картлашки çине Николай Пуклаков улăхса тăрать.

– Пултаратăн, Николай. Санăн малашлăху пысăк. Эсĕ чăваш ятне çӳлте тытасса, пире хăвăн çитĕнӳсемпе малашне тăтăшах савăнтарасса эпир шансах тăратпăр, – тенĕ унăн аллине хыттăн чăмăртаса пĕрремĕш степеньлĕ дипломпа наградăланă май спорт обществин районти совечĕн председателĕ Михаил Михайлович Кубенев.

«Тăрăшсан пулатех», – шухăшланă çамрăк.

Ялти вăтам шкултан вĕренсе тухсан, Шупашкарти пĕрремĕш номерлĕ техника училищине вĕренме кĕрет. Хастар спортсмена кунта та часах уйăрса илеççĕ. Рес-

публикăра ирттерекен ăмăртусене час-часах хутшăнать вăл, лайăх результатсем кăтартать.

1962 çулхи сентябрĕн 23- мĕшĕнче Шупашкарта СССР космонавт-летчикăн А.Г.Николаевăн призĕсене çĕнсе илессишĕн ирттернĕ кросра пĕрремĕш вырăн йышăнать.

Вăл техучилищĕре вĕреннĕ чухне 1500 метра чупассипе Чăваш Республикин рекорчĕ 4 минут та 12 çеккунт пулнă. Ку результата Патăрьел районĕнчи Р.Бикчурин кăтартнă.

Тепĕр икĕ çултан 1500 метра чупассипе Шăхаль каччи пĕрремĕш вырăн йышăнать. Республикăн çĕнĕ рекордне тăвать. Унччен пулнă республикăри рекорд вăхăтне 3,5 çеккунт лайăхлатать.

Часах ăна Совет Çарне илеççĕ. Çамрăк каччăшăн спортри вăй-хăвата ӳстерме кунта условисем татах та лайăхрах. Кашни кун физзарядка тумалла. Тренировкăсем ирттерме спортзал тата стадион пур.

1963 çулта Ессентуки хулинче РСФСРта мала тухассишĕн ăмăрту ирттернĕ. 3000 метрлă дистанцире кросра чупса Николай тăваттăмĕш вырăн йышăнать. Мĕн чухлĕ чаплă спортсменсем хутшăнмарĕç-ши ку ăмăртăва? Вăл пурпĕрех малтисен ретне тухма пултарчĕ. Çакă унăн хастарлăхне татах та ӳстерчĕ.

1965 çулхи çуркунне, Свердловск облаçĕн командин составне кĕрсе, Пуклаков каллех Ессентуки хулине ăмăртăва тухса кайнă. Çĕршывăн тĕрлĕ вырăнĕсенчен спортсменсем нумай пуçтарăннă кунта. Старт умĕн Кольăна юлташĕсем çитĕнӳ тума сывлăх сунаççĕ, хумханакан çамрăка лăплантарма тăрăшаççĕ.

Кĕçех старта тухма панă команда янăраса каять. Малтанхи çеккунтсенчех пирĕн ентеш хăйĕнпе ăмăртакансен умне тухать. Ыттисем те унтан иртсе каймаççĕ. Финиша çитесси те нумай юлмарĕ ĕнтĕ. Кашниех çĕнтерессишĕн тăрăшать. Ун хыçĕнче чупакансем те Кольăна хăваласа çитрĕç темелле. Çав вăхăтра вăл мĕн пур вăйне пухса малалла тапса сикет, финиш лентине чи малтан пырса

сĕртĕнет. Чăваш спортсменĕ 3000 метрлă дистанцире чи мала тухать, РСФСР чемпионĕн ятне çĕнсе илет.

Çав çулхи май уйăхĕнче вăл «Правда» хаçат призне çĕнсе илессишĕн ирттерекен Пĕтĕм Союзри кроса хутшăнать.

Ку ăмăртура унăн СССР рекордсменĕпе Олег Райкопа пĕрле ăмăртса чупма лекет. Çакă ăна пăшăрхантарать те, хавхалантарать те. 1000 метрлă дистанцире Николай виççĕмĕш вырăн йышăнать.

Олег Райкона пурĕ те пĕр çеккунт кăна выляса ярать. Çак ăмăрту хыççăн Николай Пуклакова СССР спорт мастерĕн ятне пａраççĕ.

Çар службин юлашки çулĕнче 5000 метра 14 минут та 0,3 çеккунтра чупса тухса, Урал чемпионĕ пулса тăрать. Тепĕр уйăхран РСФСРăн 4 Спартакиадине хутшăнать. 5000 метрлă дистанцие 13 минут та 50,6 çеккунтра вĕçлет. Кăçалхи чи юлашки ăмăрту – чи пысăк çитĕнӳ.

Совет Çарĕнчен таврăннă хыççăн Николай Пуклаков чăваш педагогика институтне вĕренме кĕрет. Кунта А.Улангин тренер тăрăшнипе спортри ăсталăха ӳстерсе пырать.

1969 çулта Кисловодск хулинче çĕршывра мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртура 8000 метра чупса Совет Союзĕн чемпионĕн ятне çĕнсе илет.

Ленинградра ирттернĕ СССР-США матчра виççĕмĕш вырăн йышăнать.

– 1970 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче Италири Турин хулинче ирттернĕ Пĕтĕм тĕнчери Универсиада манăн асăмран нихăçан та тухас çук, – аса илет Николай Иванович. – 5000 метра чупса эпĕ Универсиада чемпионĕн ылтăн медальне çĕнсе илтĕм.

Стадиона пухăннă 20 пин туринецсем чăваш патшалăх педагогика институчĕн физвоспитани факультечĕн иккĕмĕш курсри студентне Николай Пуклакова çĕнтерӳ тунă ятпа хĕрӳллĕн саламланă.

Çак савăнăçлă хыпара часах Аркадий Григорьевич Улангин тренерпа унăн юлташĕсем те пĕлеççĕ. Çĕнтерӳçĕне чĕререн саламласа телеграмма яраççĕ.

Çĕршыври вăрăм дистанцисенчи чи вăйлă стайерсенчен кама асăнма пулать тесе ыйтсан, Николай кăштах шухăша кайнă пек пулчĕ.

– Манăн уйрăмах Р.Шарафетдинов (Ленинградран), Л.Микитенко (Алма-Атаран), Ю.Алексашин (Мускавран), Шамшурин (Волгоградран) ячĕсене чи малтан асăнас килет, – терĕ вăл.

Чăнах та, вĕсен ячĕсене спорта юратакансем лайăх пĕлеççĕ. Çавсен ăмăртусенче кăтартакан результачĕсем чи лайăххисем шутланаççĕ.

«Пурнăç яланах пĕр тикĕс килмест», теççĕ халăхра. Ăмăртура та çавах. Пĕррехинче, акă Николай Пуклаков хыççăн пыраканни унăн шиповкине таптанă пирки вăл хывăнса ӳкнĕ. Пирĕн ентеше йывăрлăха кĕртсе ӳкернĕ. Анчах ăста стайера çакă та малти вырăнтан уйăрма пултарайман. Финиша вăлах малтан çитнĕ.

Совет Союзĕнчи вуншар хуласене кăна мар, нумай çĕршывсене çитсе курчĕ Пуклаков çăмăл атлет. Кашнинчех лайăх результат кăтартрĕ.

Çав çулхине вăл Хĕрлĕçырта çуралнă, Шăхальти вăтам шкулта пĕр вăхăтра вĕреннĕ Юрий Сапаркинпа Кисловодск хулинче пулнă пĕр кĕтмен, çав вăхăтрах савăнăçлă тĕл пулу çинчен каласа кăтартрĕ.

1967 çулта, Шăхальти вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, Юрий Совет Çарне кайнă. Свердловск хулинчи Армин спорт клубне лекет. Çавăнтан пуçланнă та ĕнтĕ унăн спортпа татах та çывăхрах туслашасси.

Пĕрремĕш çулхинех вăл çăмăл атлетика енĕпе иккĕмĕш разряд нормине пурнăçланă.

Тепĕр çулхине Свердловскри аслă вĕренӳ заведенийĕсем хушшинче мала тухассишĕн ăмăрту ирттернĕ. Юрий ку хутĕнче 5000 тата 10000 метрсене чупса ăмăртнă. Вунă çухрăмлă дистанцие 31 минут та 43 çеккунтра чупса тухнă. Пĕрремĕш разряд нормативĕ ку.

Çав çулхинех Ужгород хулинче Хĕç-пăшаллă Вăйсен хушшинче мала тухассишĕн ăмăрту ирттернĕ.

Хĕрлĕçыр качча кунта та лайăх результат кăтартнă. 42 çухрăм та 195 метра 2 сехет те 37 минут та 30 çеккунтра тухнă. СССР спорт мастерĕн кандидачĕн ятне илме 1 минут çурă çеç çитеймен.

1968 çул уншăн уйрăмах асра юлнă. 42 çухрăм та 195 метра пултаруллă марафонец 2 сехет те 31 минут та 30 çеккунтра чупса тухнă. Спорт мастерĕн кандидачĕн нормине тултарнă.

Тепĕр икĕ çултан Урал çар округĕнче мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртура 5000 метрлă дистанцие 14 минут та 43 çеккунтра вĕçленĕ.

Карпат леш енчи Мукачево хулинче 10000 метрлă кросра тăваттăмĕш вырăн йышăннă. Çав ăмăрту хыççăн тăвată кунтанах ăна Грозный хулинче стартсем кĕтнĕ. Кунта «Трудовые резервы» спорт обществинче Раççейре мала тухассишĕн ăмăртнă. Юрий Сапаркин 3000 тата 5000 метрлă дистанцисенче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Часах ăна Кисловодск хулине сбора илсе кайнă. Чылай чаплă спортсменсем пухăннă кăнтăрти çак илемлĕ хулана. Вĕсене «Трудовые резервы» спорт обществин Тĕп совечĕ тренировкăсем ирттерме пухнă. Спортсменсене стадионти гостиницăна вырнаçтарнă. Пушă вăхăтпа усă курса Юрий урама тухнă. Уçăлса çӳреме шутланă вăл.

– Коля!

– Юра!

Пĕр кĕтмен çĕртенех Юрий Шăхальте пĕр вăхăтра вĕреннĕ, тĕнчери Универсиада чемпионĕ ятне çĕнсе илнĕ СССР спорт мастерĕпе Николай Пуклаковпа тĕл пулнă. Кĕтмен савăнăç ку. Юрий ку сбора Свердловскран, Коля вара Шупашкартан пынă. Чылайччен калаçрĕç икĕ чăваш çамрăкĕ. Пĕр-пĕрин пурнăçĕсем çинчен ыйтса пĕлчĕç. Тусăванĕсемпе интересленчĕç.

– Шупашкара таврăн, – пĕрле чупăпăр, – терĕ Николай Юрийпе уйрăлнă чухне.

– Кĕтсех тăр. Тăван республикăна епле манăн? – тенĕ Юрий, хăйĕн тахçанах шутланă шухăшне палăртса.



*Н.Пуклаков ХХ Олимп вăййисен чемпионĕпе В.Ярдыпа*



*Н.Пуклаков хăйĕн тренерĕпе А.Улангинпа (сулахайри) тата хамăр ентешпе – СССР спорт мастерĕпе Г.Иванов биатлонистпа пĕрле*

Сверхсрочнăй служба срокĕ тухнă хыççăн, Юрий Николаевич Сапаркин тăван республикăна таврăнчĕ. Çĕнĕ Шупашкарта ĕçе вырнаçрĕ. Спорт ăмăртăвĕсене тăтăшах хутшăнчĕ.

Николай Пуклаков тренер ăна спортăн татах та анлăрах çулĕ çине кăларассишĕн нумай вăй хучĕ.

Италирен çĕнтерӳпе таврăннă хыççăн Николай Пуклаков Минск хулинче ирттернĕ Тĕнче чемпионатне хутшăнать. Питех те шел, ку хутĕнче ăнаçсăр пулать вăл пирĕн ентешшĕн. Вăл виççĕмĕш вырăн кăна çĕнсе илет, «бронза» медале тивĕçет. 1970 çулхи сезона вăл 5000 метрлă дистанцие 13 минут та 46,8 çеккунтра чупса тухнипе вĕçлет.

Олимп вăййисене хатĕрленмелли яваплă тата хĕрӳ тапхăр пуçланать. 1972 çулта пулакан Олимп çулне хуть те мĕнле дистанцисенче те чи пысăк кăтартусем кăна уçма пултараççĕ. «Правда» хаçат призĕсене çĕнсе илессишĕн ирттернĕ Пĕтĕм тĕнчери матчра Р.Шарафетдиновпа (Ленинград) ăмăртнă чухне Николай дистанцие 13 минут та 34,6 çеккунтра вĕçленĕ. Çĕршыв рекордне тăвасси çывăхах ĕнтĕ. Анчах та пĕрлештернĕ командăн тренерĕсем чăваш спортсменĕн çитĕнĕвне каллех шута илмен. Тăвată çул каяллахи пекех, Пуклаков хăйĕн мĕн пур вăй-халне парса олимпиец пулассишĕн кĕрешме тытăннă.

Олимп вăййисем пуçланиччен виçĕ уйăх çеç юлнă. Н.Пуклаков çĕнĕ çитĕнӳсем тума пуçлать. Çĕршывра мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртура çĕнтерет. Пĕрлештернĕ командăн тренерĕсем каллех ĕненмеççĕ. Пирĕн ентеш вара ку сезонра хăйне нихăçанхинчен те лайăхрах кăтартса панă, вăл хăйĕн вăйне шаннă.

Мюнхенра стартсем пуçланиччен виçĕ эрне çеç юлнă. Тренерсем Олимпиадăна хăш стайера кĕртмеллине ниепле те татса параймаççĕ. Пуклаков тепĕр ăмăртура çĕнтертĕр кăна, каллех чăрмавсем шыраççĕ.

1972 çулхи Мускаври стартсем... Совет Союзĕн чемпионатĕнче вăл хăйĕн юратнă дистанцийĕнче – 5000 метра чупса пĕрремĕш вырăн йышăнать.

Ун хыççăн Раççей чемпионачĕ пулса иртет. Кунта та 5000 метра чупса çĕнтерӳ илсе килет.

1972 çулхи августăн 17-мĕшĕнче Мускавра пурăнакансем пирĕн ентеше хĕрӳллĕн саламланă. Николай Пуклаков Мускаври уçă чемпионатра ăмăртса 5000 метра чи малтан чупса тухнă. Унăн вăхăтне палăртнă: 13 минут та 33,2 çеккунт пулнă. Ку вăл Пĕтĕм Союзри çĕнĕ рекорд. Р.Шарафетдинов çăмăл атлетăн рекордне вăл 0,6 çеккунт лайăхлатнă. Çак ăмăрту хыççăн Пуклакова ХХ Олимп вăййисен командин составне кĕртнĕ. Чăваш халăхĕн тепĕр ывăлĕ Федеративлă Германи Республикин Мюнхен хулинче ирттернĕ ХХ Олимп вăййисене хутшăнма пултарчĕ. Хăйĕн юратнă дистанцие 5000 метра 13 минут та 57,8 çеккунтра чупса тухнă, улттăмĕш вырăн йышăннă. Чаплă çитĕнӳ ку.

Николай Иванович Пуклаковăн спортри ăсталăхне республика пуçлăхĕсем асăрхамасăр тăма пултарайман. Спортра пысăк çитĕнӳсем тунăшăн тата сывă пурнăç йĕркине çирĕп тытса пынăшăн Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ 1972 çулхи августăн 3-мĕшĕнче ăна Хисеп грамотипе наградăланă.

Пирĕн ентеш Николай Пуклаков çĕршывĕпе чапа тухнă спортсмен. Район ĕçченĕсем чемпионăн çитĕнĕвĕсемпе чăннипех те интересленеççĕ.

Ноябрь уйăхĕнче вăл районти «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцийĕнче пулчĕ, хаçата çырса тăракан активистсен ушкăнĕпе тĕл пулса калаçрĕ. Чылай ыйтусем пачĕç хаçатăн обществăлла корреспонденчĕсем чемпиона, çав вăхăтрах малашлăх планĕсемпе те интересленчĕç.

Н.Пуклаков Италири Турин хулинче иртнĕ çамрăксемпе студентсен Универсиади тата Мюнхенри ХХ Олимп вăййисем çинчен пурне те ăнланмалла, интереслĕ каласа кăтартрĕ.

Нумаях пулмасть вăл Пермь хулинче иттернĕ ăмăртуран таврăннă. Кунта РСФСРти профсоюзпа комсомол кросĕн финалти ăмăртăвĕсем пулнă. Мĕн пурĕ 14 коман-

да кĕрешĕве тухнă. Кусем вĕсем зонăсенче чи лайăх результат кăтартнă командăсем. Уралпа Атăл тăрăхĕнчи командăсем хушшинче ирттернĕ зонăри ăмăртура пирĕн республика команди тăваттăмĕш вырăна тухнă. Пермьре вара пиллĕкмĕш вырăна кăна.

Пермьри ăмăртура Николай 8 километра чупса арçынсем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Çакнашкал трасса çинче вăл халиччен нихçан пулман результат кăтартнă, трасса рекордне тунă.

Ку вăл Николайăн кăçалхи юлашки старчĕ пулнă.

– Халĕ, тет вăл, – 1973 çулхи ăмăртусене хутшăнма хатĕрленетĕп. Халичченхи пекех, чи малти вырăнта хăвăртлăх текен девиз тăрать. Çакна тума чăтăмлăх кирлĕ, хастарлăха татах та ӳстермелле.

1974 çул. Талантлă спортсменшĕн уйрăмах асра юлмалли çул пулчĕ вăл. Николай Иванович педагогика институтĕнчен вĕренсе тухрĕ. Экзаменсене пĕтĕмпех «пиллĕк» паллăпа тытнă. Патшалăх экзаменĕсене хатĕрленнĕ хушăра та Мускавра «Правда» хаçат призне çĕнсе илессишĕн пулса иртнĕ ăмăртăва кайса килнĕ, 10 километра чупса финиша чи малтан çитнĕ.

Европăра мала тухассишĕн Рим хулинче ирттернĕ ăмăртăва хутшăннă: 10 километра чупса Олимп чемпионĕнчен Ласса Виренран (Финлянди) иртсе кайса пиллĕкмĕш вырăна тухнă, СССР тĕнче класлă спорт мастерĕн ятне çĕнсе илнĕ.

Сочире СССРпа Финлянди командисен хушшинчи тупăшура 5 километра 13 минут та 48,4 çеккунтра чупса çитсе иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Федеративлă Германи Республикинчи Штутгард хулинчи СССР-ФРГ-Франци матч Пуклаковшăн каллех пысăк çĕнтерӳпе вĕçленнĕ. 10 километрлă дистанцие чи малтан чупса çитнĕ.

1975 çулта СССР чемпионатĕнче, Раççей тата СССР Спартакиадисенче 10000 метрлă дистанцисенче иккĕмĕш вырăнсене çĕнсе илет.

1976 çулта Чăваш Республикин рекордне çĕнетет. 3000 метрлă дистанцие 7 минут та 55,8 çеккунтра чупса тухать.

1976-1980 çулсенче облаçри студентсен «Буревестник» ирĕклĕ спорт обществинче тренерта вăй хурать. Çак çулсенче мĕн чухлĕ çамрăка спортăн анлă çулĕ çине тухма пулăшман-ши вăл?

Ун хыççăн вунă çул Шупашкарти энергетика техникумĕнче физвоспитани руководителĕнче пултарулăх кăтартать. Физкультурăпа спорта аталантарма пысăк тимлĕх уйăрать. Ку енĕпе техникум республикăра малтисен ретĕнче шутланса тăрать. Вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсем хушшинче ирттерекен Спартакиадăсенче вĕсем яланах призлă вырăнсене çĕнсе илеççĕ.

1986 çул. ВЦСПС тата физкультурăпа спортăн СССР патшалăх комитечĕ йышăннă постановлени тăрăх, апрелĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çĕршывра çăмăл атлетикăн массăллă кросне ирттернĕ. Çак кун пирĕн район центрĕнче те спортăн нумай енĕпе ăмăртăвĕ пулса иртнĕ. 18 шкултан 300 яхăн çамрăк спортсмен пуçтарăннă çав кун стадиона. Вĕсем хамăр ентешĕн, XX Олимп вăййисене хутшăннă, 5000 метра чупассипе çĕршыв тата тĕнчери Универсиада чемпионĕ пулнă Н.Пуклаков призне çĕнсе илессишĕн ăмăртнă.

Чи малтанах çамрăк спортсменсене районти физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ Н.Гренадерский тата ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ В.Александрова ăшшăн саламланă, ăмăртура, вĕренӳре пысăк çитĕнӳсем тума ырă суннă.

Ăмăрту вăхăтĕнче стадиона Н.Пуклаков хăй те килсе çитнĕ.

Тупăшусем вĕçленсен Николай Иванович ăмăртусен итогĕсене пĕтĕмлетме хутшăнса, мала тухнă командăсемпе уйрăм спортсменсене грамотăсемпе наградăланă тата хăйĕн ячĕпе призсем панă.

Ун чухне вăл Шупашкарти энергетика техникумĕнче физвоспитани руководителĕ пулса ĕçленĕ. Районти шкул ачисене техникума вĕренме пыма чĕнсе каланă.

Н.Пуклаков 1991 çулта И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне физвоспитани кафедрине аслă преподаватель пулса ĕçлеме куçать. Доцент. Кунта та хăйĕн мĕн пур тăрăшулăхне паратъ.

Физкультурăпа спорта аталантарма тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе 1993 çулхи март уйăхĕнче Н.Пуклакова «Чăваш АССРĕн физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят парăççĕ.

1995 çулхи ноябрь уйăхĕнче вăл «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçет. Çав çулхинех Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн кашни уйăхрах ĕмĕрлĕх пособи парса тăма йышăннă.

2001 çултанпа Николай Иванович Пуклаков Шупашкарти кооперации институчĕн физкультурăпа спорт кафедрин доценчĕ.

Пултаруллă спортсмен, педагог хăйĕн ĕçне чунтан парăннă ентеш. Тĕнчипе чапа тухнă спортсмена республикăра нумайăшĕ лайăх пĕлеççĕ, хисеплеççĕ. Тăван районa та, яла та вăл тăтăшах килсе çӳрет, район пуçлăхĕсемпе, спортсменсемпе тĕл пулать, кашни çулах ăмăртусем йĕркелеме пулăшать.

2007 çулхи октябрĕн малтанхи кунĕсенче район центрĕнчи стадионта тĕнче класлă спорт мастерĕн, XX Олимп вăййисене хутшăннă Н.Пуклаков çăмăл атлетăн призĕсене çĕнсе илессишĕн ăмăртусем йĕркелерĕç. Массăлăхпа палăрса тăчĕ вăл. 300 яхăн спортсмен хăйĕн пултарулăхне тĕрĕслерĕ. Кашни вăтам тата тĕп шкултан, предприятисемпе организацисенчен, учреждениссенчен командăсем йышлăн килнĕ. Кунĕ те ятарласа тенĕ пекех спортсменсемшĕн пулчĕ. Хĕвел хăйĕн пайăркисене çĕр çине пĕр хĕрхенмесĕр сапаларĕ, спортсменсен кăмăл-туйăмне çĕклерĕ.

Ирхине 11 сехет. Ăмăртăва хутшăнакансем стадионта пĕр рете йĕркеленсе тăнă.

Диктор ăмăрту ялавне Н.Михайлов спорт ветеранĕпе Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренекен В.Ильин çĕклеме тивĕçни çинчен пĕлтерет. Чăваш Республикин Гимнĕ мăнаçлăн янăрать.

Пухăннисене район пуçлăхĕ В.Кириллов саламлать.

– Хаклă спортсменсемпе хăнасем! Вăрмар районĕ пултаруллă спортсменсемпе пуян. Паян эсир пирĕн пултаруллă ентешĕн, Шăхальте çуралса ӳснĕ, çăмăл атлетикăпа СССР тĕнче класлă спорт мастерĕн, Пĕтĕм тĕнчери Универсиада чемпионĕн, СССР рекордсменĕн, XX Олимп вăййисене хутшăннă Николай Иванович Пуклаковăн парнисене çĕнсе илессишĕн кĕрешетĕр. Вăл районти çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Халĕ Н.Пуклаков ĕçлекен Шупашкарти кооператив институчĕн дирекцийĕпе пĕрле çак ăмăртăва йăлана кĕртме шутларăмăр. Сире пурне те спортра хамăр ентеш пек пултаруллă ӳссе çитĕнме çирĕп вăй-хал, чăтăмлăх сунатăп. Чемпионат уçăлнă тесе шутлатăп, – терĕ Вячеслав Николаевич.

Унтан сăмах ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Г.Васильев илет. Спортсменсене пысăк çитĕнӳсем тума ăнăçусем сунать.

Шупашкарти кооператив институчĕн ректорĕ В.Андреев институт ĕçĕ-хĕлĕпе, унти спортсменсемпе паллаштарать. Акă, паян та вăл хăйĕнпе пĕрле Н.Пуклаковăн воспитанникне, хăвăрт утас енĕпе тĕнче класлă спорт мастерне, тĕнче рекордсменне А. Деверинскаяна тата ытти паллă спортсменсемпе студентсене илсе килнĕ.

– Пирĕн институтра Вăрмарсем те йышлăн вĕренеççĕ. Вĕсен хушшинче пултаруллă спортсменсем те сахал мар. Сире спортра ăнăçусем сунатăп, – терĕ хăйĕн сăмахне вĕçлесе Валерий Витальевич.

– Эпĕ Шăхальти вăтам шкулта вĕреннĕ чухнех спортпа туслăччĕ. Шкулта йĕркелекен ăмăртусене тăтăшах хутшăнаттăм, ăсталăха ӳстерсе пыраттăм. Паянхи пекех астăватăп: 1960 çулта районта irттернĕ çуркуннехи çăмăл атлетсен кросĕнче эпĕ вунпĕрмĕш вырăн йышăннăччĕ,

1961 çулта вара чемпион ятне çĕнсе илтĕм. Спорта çамрăклах юратса ӳсĕр, вăл сывлăха çирĕплетет, пурнăçра пулăшать, – терĕ ăмăртăвăн тĕп судйи Н.Пуклаков.

Ачасемпе çамрăксен Вăрмарти спорт шкулĕн аслă тренер- преподавателĕ Л.Агапова секретарь ăмăрту йĕркипе паллаштарать.

Старта малтанах чи çамрăккисем – 1996-1997 çулсенче çуралнă хĕр ачасем тухаççĕ, вĕсем 30-ăн. Н.Пуклаков старт парать те çамрăксем малалла тухса вирхĕнеççĕ. Вĕсен пĕр çаврăм тумалла, 500 метр чупмалла. Финиша чи малтан 3-мĕш номер çакнă Чупай шкулĕнче вĕренекен А. Линга çитрĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Çĕнĕ Кинчер шкулĕнчи Т.Шуйская тата Энĕшпуçĕнчи К.Геронтьева йышăнчĕç.

Ун хыççăн старта çак çулсенчи арçын ачасем тухаççĕ. Вĕсем – 36-ăн. Чи пултарулли вара Вăрмарти пĕррĕмĕш вăтам шкулта вĕренекен С.Чернов пулчĕ.

1994-1995 çулсенче çуралнă хĕр ачасем 500 метрлă дистанцире 49-ăн тупăшрĕç. Пысăк Енккасси шкулĕнчи И.Иванова чи малтан чупса тухрĕ. Энĕшпусĕнчи М. Петровапа М.Васильева иккĕмĕшпе виççĕмĕш пулчĕç.

Çак çулсенчи арçын ачсем хушшинче те хĕрӳ кĕрешӳ пычĕ. Вĕсем 1000 метра чупрĕç. Малтанхи çаврăмра малта Энĕшпусĕнчи А.Алексеев пычĕ. Иккĕмĕш çаврăмра вара Саша чупас хăвăртлăхне каштах чакарчĕ те Чупайĕнчи В.Иванов унтан иртсе кайрĕ. Чупайĕнчи А.Кириллов виççĕмĕш вырăна юлчĕ.

1992-1993 çулсенчи хĕр ачасенчен малти призлă вырăнсене Чупайĕнчи Л.Никифоровапа Л.Алексеева тата Кавалти М.Иванова, арçын ачасенчен Кавалти Н.Чубуков, Вăрмарти пĕрремĕш вăтам шкулти Н.Федоров, Çĕнĕ Кинчерти К Питруков тивĕçрĕç.

1990-1991 çулхи çамрăксем хушшинче тупăшу уйрăмах çивĕч иртрĕ. Арçын ачасем 25-ĕн, хĕр ачасем 22-ĕн старта тухрĕç.

3000 метрлă дистанцие Урнар шкулĕнчи В.Кириллов 10 минут та 49 çеккунтра вĕçлерĕ, пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Ун хыççăн финиша Вăрмарти пĕрремĕш вăтам шкулти И.Тимофеев çитрĕ, çĕнтерӳçĕне пĕр минут выляса ячĕ. Халичченхи ăмăртусенче палăрнă А.Петровăн виççĕмĕш вырăнпа килĕшмелле пулчĕ.

Хĕр ачасенчен чи пултаруллисем Чупайĕнчи Н.Константинова, Вăрмарти пĕрремĕш вăтам шкулти Л.Чумаковапа В.Алексеева пулчĕç.

Предприятисемпе организацисенче, учреждենисенче ĕçлекенсем те активлă хутшăнчĕç ăмăртăва.

18-29 çулсенчи хĕр ачасенчен пирĕн хăнасем – кооператив институчĕн представителĕсем çĕнтерчĕç. Н.Иванова спорт мастерĕ пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Çав ушкăнри арçынсенчен вара Вăрмар поселокĕнчи С.Антонова çитекенни пулмарĕ. Хăнасем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайларĕç.

30-39 çулхи арçынсем хушшинче Энĕшпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ О.Иванов чи вăйлă чупаканни пулчĕ.

40-49 çулхи арçынсенчен СССР спорт мастерĕ, райадминистрацин ĕçĕсен управляющийĕ – организациллĕ ĕçсен пайĕн начальникĕ Н.Павлов çĕнтерчĕ.

Çак çулхи хĕрарăмсенчен 500 метрлă дистанцие Чупай шкулĕнчи С.Егорова çăмăллăнах выляса илчĕ. Кĕлкешри Н.Александровапа Шăхальти Н.Хованская иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайларĕç.

60-69 çулсенчи арçынсенчен Вăрмар поселокĕнчи спорт ветеранĕ Н.Михайлов-пĕрремĕш, Кивĕ Вăрмарти К.Иванов иккĕмĕш вырăнсене тухрĕç.

Ăмăрту итогĕсене пĕтĕмлетме те вăхăт çитрĕ. Вăтам шкулсен командисем хушшинче пĕрремĕш вырăна – Энĕшпуçсем, иккĕмĕшне Вăрмарти пĕрремĕш вăтам шкул спортсменĕсем тухрĕç

Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш вырăнсене Урнарсемпе Аслăчаксем йышăнчĕç.

Тĕп шкулсенчен малти вырăнсене Чупайсем, Пинерсем, Тикашсем çĕнсе илчĕç.

Ял тăрăхĕсенчен малти вырăнсене Пинер, Энĕшпуç, Кĕлкеш командисем тивĕçрĕç.

Ăмăртура мала тухнă спортсменсене Н.Пуклаков грамотăсемпе наградăларĕ, парнесемпе медальсем парса чыс турĕ.

Çакăн пек ăмăрту иртнĕ çул та çўллĕ шайра иртрĕ.

Хăйĕн пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе Николай Иванович питех те кăмăллă. 5000 метра 13 минут та 33,2 çеккунтра чупса тухнă Николай Пуклаковăн вăхăтне паян кун та никам та çĕнетеймен-ха. Унăн воспитанникĕсенчен нумайăшĕ спортăн анлă çулĕ çине тухнă. Çăмăл атлетикăпа тĕнче класлă СССР спорт мастерĕ Александра Деверинская, Николай Григорьев, Валентин Давалов, Николай Тонин, Николай Анисимов, Иван Арсентьев тата ытти чапа тухнă спорт мастерĕсем, тренерсем халĕ пултаруллă спортсменсем хатĕрлеççĕ, çĕршыв, республика чысне татах та çўлелле çĕклеççĕ. Çакă ăна чăннипех те савăнтарать.



*Универсиада чемпионӗ Н.Пуклаков КПСС райкомӗн пӗрремӗш секретарӗпе М.Петровпа (сылтӑмран сулахаялла пӗрремӗш ретре виççӗмӗшпе тӑваттӑмӗш) районти комсомол конференцийӗн делегачӗсемпе пӗрле.*



*Н.Пуклаковӑн чи юратнӑ дистанцийӗ – 5000 тата 10000 м чупасси*




*СССР чемпионачĕ. 10000 метра чупаççĕ. Мускав, 1970*



*Шупашкар. Раççей кубокĕ. СССР чемпионĕсем:*
*Николай Чамеев, Николай Пуклаков, Николай Григорьев. 2002*



*Сулахайран сылтăмалла: Н.Пуклаков – Универсиада чемпионĕ, В.Соколов – Олимп вăййисен чемпионĕ, А.Улангин – РСФСР тава тивĕçлĕ тренерĕ, В.Ярды – Олимп вăййисен чемпионĕ*




*Ленинград. СССР – США матчра. Н.Пуклаков пĕрремĕш номерпе чупать. 1970*



*Шупашкарти Коопераци институчĕн ректорĕ В.Андреев спортсменсене саламлама килнĕ*



*Н.Пуклаков призĕсене çĕнсе илессишĕн ăмăртаççĕ*

## ЗАХАРОВА
### Светлана Владимировна

1970 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче Вăрмар районĕнчи Атайкасси ялĕнче çуралнă.



Çăмăл атлетикăпа Раççей тĕнче класлă спорт мастерĕ (1989), Тĕнче чемпионачĕн бронза призерĕ (2001), Тĕнче кубокĕн кĕмĕл тата бронза призерĕ (2001, 2003), Раççей тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ (2004), Бостонри тата Чикагăри марафонсен (2002, 2003) çĕнтерӳçи, çуллахи XXVIII тата XXIX Олимп вăййисене хутшăннă.

## Марафон чӑтӑмлисене юрататъ

Йывӑҫсем ӑшне путнӑ пысӑках мар Атайкасси ялӗ район центрӗнчен самай инҫере вырнаҫнӑ. «Пӗчӗк хуранӑн пӑтти тутлӑ» тенӗ пек пултаруллӑ спортсменсем сахал мар тухнӑ кунтан.

Вӗсенчен пӗри – Светлана Владимировна Захарова (хӗр чухнехи хушамачӗ Васильева). Йышлӑ хресчен ҫемйинче ӳснӗ вӑл. Мария Николаевнапа Владимир Васильевич Васильевсем вунӑ ача ҫуратса ӳстернӗ. Мария Николаевнӑна «Ача амӑшӗн героиня» хисеплӗ ят парса чыс тунӑ. Светлана ҫиччӗмӗш ачи пулнӑ. Ашшӗпе амӑшӗ ачисене ҫамрӑклах ӗҫе хӑнӑхтарнӑ: урай ҫунӑ, утӑ ҫулнӑ, хӗлле валли вутӑ хатӗрленӗ. Туслӑ ҫемье колхозра ӗҫленӗ: хӑмла татнӑ, ытти ӗҫсене пурнӑҫланӑ, килти пахчара тӑрмӑшнӑ. Вӑрмана ҫырлана е кӑмпана ҫӳренӗ.

Ялтан кӳршӗри тӑватӑ ҫухрӑмра вырнаҫнӑ Энӗшпуҫӗнчи вӑтам шкула занятие вӑхӑтра ӗлкӗрес пулсан, ирех тӑмалла. Хуть те мӗнле ҫанталӑкра та ялти ачасем ир-ирех унта васканӑ. Шавлӑ ушкӑнра кӗҫӗн класа каякан Светлана Васильева та пулнӑ: пӗчӗкскер, типшӗмскер, ҫав вӑхӑтрах вӑр-вар.

1978-1986 ҫулсенче С.Васильева Энӗшпуҫӗнчи вӑтам шкулта вӗреннӗ. Ун чухне физкультура учителӗнче Геннадий Николаевич Исаев ӗҫленӗ, вӑлах Светланӑн наставникӗ пулнӑ. Шкул учителӗ Светлана ӑста чупуҫӑ пуласса малтанах асӑрханӑ. Ытти пултаруллӑ спортсменсемпе пӗрле ӑна та районти тата республикӑри ӑмӑртусене хутшӑнтарнӑ. 1985 ҫултах вӑл Шупашкарта шкул ачисем хушшинче ирттернӗ ӑмӑртура пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ. Районти ӑмӑртусенче яланах малтисен ретӗнче пулнӑ.

Ялти шкулта сакӑр класс вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн вӑл Шупашкарти Олимп резервӗсен училищине вӗренме кӗрет. 1986 ҫулта Светлана пӗрремӗш космонавтӑн

Ю.А.Гагаринăн çĕршывĕнче, Смоленск облаçĕнчи Гагарин (Гжатск) хулинче ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри кроса хутшăнать, кĕмĕл медаль çĕнсе илет. 1988 çулта Киев хулинче Олимп резервĕсен шкулĕсем хушшинче Пĕтĕм Союзри ăмăртусем иртнĕ. 1500 метрлă дистанцире пирĕн ентеш чемпион ятне тивĕçнĕ. 1989 çулта Ужгород хулинче шоссе çинче чупассипе ирттернĕ Пĕтĕм Союзри ăмăртура спорт мастерĕн нормине пурнăçланă.

Олимп резервĕсен училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн 1989-1993 çулсенче И.Я.Яковлев ячĕллĕ чăваш патшалăх педагогика институчĕн физвоспитани факультетĕнче вĕренет. Пĕлӳ илнĕ вăхăтрах Светлана Хĕç-пăшаллă Вăйсен командишĕн ăмăртать. Çар служащийĕсем хӳшшинче кросра ăмăртса Тĕнче тата Европа (1992) чемпионĕ пулса тăрать. Раççей çамрăкĕсем хушшинче кĕмĕл медаль çĕнсе илет.

1994 çултан пуçласа вăл çăмăл атлетикăн чи анлăн сарăлнă тата сумлă ăмăртăвĕсене – вăрăм дистанцисене чупассипе – марафона ытларах килĕштерет. 1994 çулта Омск хулинче марафонра чупса саккăрмĕш вырăн йышăнать. Ку унăн пуçламăшĕ кăна-ха: Светлана дистанцие 2 сехет те 44 минутра чупса тухать.

1995 çулта С.Захарова СШАри (Флорида штачĕ) Пĕтĕм тĕнчери марафонра тăваттăмĕш вырăна тухать. 1996 çулта Америкăра (Техас штачĕ, Остем хули) каллех çĕнтерет, дистанцие 2 сехет те 36 минутра вĕçлет, трасса рекордне çĕнетет. Çав çулхинех Америкăра (Калифорни штачĕ) С.Захарова пĕрремĕш вырăн йышăнать, трасса рекордне каллех çĕнетет. 1996 çулта Шупашкарта Пĕтĕм чăвашсен пĕрремĕш Олимпиадине ирттернĕ. Пирĕн ентеш çурма марафонра çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçнĕ, Гавай утравĕсем çинче вара иккĕмĕш чупса çитнĕ.

– Пур марафонсенчен те чи асра юлмалли маншăн 2002 çулхи апрель уйăхĕнче Лондонра иртнĕ марафон, – аса илет Светлана Захарова. – Хумхану калама çук пысăк пулчĕ. Вăл çавăнпа та çивĕчленсе кайрĕ, юлашки пилĕк

çул хушшинче çĕнтерӳ пьедесталĕ çине хура ӳтлĕ спортсменкăсем кăна хăпарнă, çакă англичансене питĕ тарăхтарнĕ. Марафон вăл – çулталăкăн тĕп уявĕ-çке. Мана трасса тăршшĕпех хавхалантарса пычĕç, вĕсемшĕн пурпĕрех, малта кам пырать – англичанка-и, вырăс-и е чăваш-и – шурă ӳтлĕскер. Награда панă чухне Великобритани премьер-министрĕ Тони Блэр мана алăран чуп туса илчĕ, манăн алла чылайччен чăмăртарĕ, Мускавра Владимир Путина салам калама ыйтрĕ.

– Блэра Хисеп пъедесталĕ çинче шурă хĕрарăм тăни чăнниех те тĕлĕнтернĕ,- каласа парать Светланăн мăшăрĕ тата тренерĕ Николай Александрович. – Юлашки çулсенче призерсен йышĕнче Кени тата Эфиопи марафонкисем çеç пулнă-çке-ха. Çавăнпах пулĕ Англи премьерĕ хура ӳтлĕ чемпионсем çине пăхмарĕ те, тӳрех чечексем тытса Светлана патне пычĕ, унăн аллине чуп туса илчĕ. Вăл англи чĕлхипе темскер калать, эпир мăшăрпа ăнланмастпăр. Кайран пирĕ менеджер ăнлантарса пачĕ: Блэр вырăс хĕрарăмĕн çитĕнĕвĕнчен чăннипех те тĕлĕннĕ.

2001 çулта Лондонра Светлана çавăн пекех пысăк çитĕнӳ тунă. «Кĕмĕл» илнĕ ятпа ăна Чарльз принц саламланă.

– Светлана Раççей пĕрлештернĕ командин составне чи кайран лекрĕ, – каласа парать Н.Захаров тренер. Çĕршывăн пĕрлештернĕ командин тренерĕ Куличенко ăна шута та илмен. Эдмонтонри тĕнче чемпионатне каяс умĕн иртерекен сборта вăл кам çине шаннă, çавсем вара хăйсен тивĕçне пурнăçлайман.

Светлана çĕршыв чысне Канадăра хӳтĕленĕ. Захаровашăн ку 19-мĕш марафон пулнă. Пĕрлештернĕ Раççей командине вăл 19-мĕш медаль илсе килнĕ. Çапла вара «бронза» медаль çĕнсе илнĕ хыççăн пирĕн çĕршывăн команди медальсем шучĕпе Америкăн пĕрлештернĕ командипе танлашнă.

Çакна палăртмалла: 2001 çулта С.Захарова Эдмонтонра бронза медаль çĕнсе илнĕ, çапла вара Раççей марафонкисенчен пĕрремĕш призер.




*Светлана Захарова Великобритани премьер-министрĕпе Тони Блэрпа. Раççей спортсменкин çитĕнĕвĕнчен вăл чăннипех те тĕлĕннĕ*




*Бостон. 2002*

*Светлана мăшăрĕпе – Николай Александрович тренерпа тата Ксюша хĕр ачипе*



Çăмăл пулман «бронзăшăн» кĕрешме. Тĕнчери чи вăйлă спортсменсем тухнă старта. Хăйĕн вăйне шута илсе Светлана кашни метршăн çивĕч кĕрешнĕ. Чылайччен пынă вăл малтисен ушкăнĕнче. Унтан тăваттăмĕш позицине тухнă. Вăйсем пĕтсе пынă пулин те вăл парăнман. 717-мĕш номерлĕ спортсмен финиша виççĕмĕш çитнĕ. Çакăн пек пысăк кăтартăва пирĕн марафонецсем Тĕнче чемпионатĕнче августăн 12-мĕшĕнче пĕри те тума пултарайман.

Чаплă çитĕнӳ тунă ятпа ăшшăн саламлама ăна хăй вĕреннĕ Энĕшпуçĕнчи вăтам шкула тĕл пулăва чĕнчĕç. Паян акă вăл пирĕн хушăра. РФ тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ Светлана Захарова Эдмонтон (Канада) хулинче ирттернĕ çăмăл атлетсен Тĕнче чемпионатĕнче бронза медаль илме тивĕç пулнă.

Шкул залне халăх йышлăн пухăннă. Вĕренекенсем Светлана Владимировнăна тăваллăн алă çупса, çăкăртăварпа кĕтсе илчĕç. Тĕл пулăва шкулти Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ И.Криков уçрĕ. Пĕрремĕш сăмах – пĕрремĕш тренера, Геннадий Николаевич Исаева пулчĕ. Вăл Светлана Владимировна районти ăмăртусенче яланах малти вырăнсене йышăнни, 1985 çулта шкул ачисен республикăри чемпионатĕнче пĕрремĕш вырăна тухни, сакăр класс пĕтерсен Шупашкарти Олимп резервĕсен училищине вĕренме кĕни çинчен аса илнĕ.

Чапа тухнă спортсменка юлашки çичĕ çул хушшинче тĕрлĕ марафонсене хутшăнса призлă вырăнсене çĕнсе илни çинчен çырса кăтартни вырăнлă тесе шутлатăп: Гонолулу, Гавай утравĕсем (1998 çул – пĕрремĕш, 2000 çул – иккĕмĕш), Берлин (1999 çул – виççĕмĕш), Лос-Анжелес (1999 çул – иккĕмĕш), Рокн-ролл марафонĕ Сан-Диего (2000 çул – иккĕмĕш), Лондон (2001 çул – иккĕмĕш), Нью-Йорк (2001 çул – виççĕмĕш), 25 километра шоссе çинче чупассипе икĕ хут Америка континенчĕн чемпионĕ (2000 çул, 2001 çул – тĕнчен çĕнĕ рекорчĕ). Пуэрто-Рикори çурма марафон чемпионĕ (1999 çул – трасса рекорчĕ), Сокраменко, США (2000 çул – 10 километра чупассипе

чемпионка), Филадельфи (2001 çул – 8 километра чупса – пĕрремĕш), Манчестер (2001 çул – 4 мили чупса – пĕрремĕш), Гонолулу (2001 çул – иккĕмĕш).

Çĕр çинче тĕнче чемпионатĕнчен пысăкрах категориллĕ марафонсем пиллĕк шутланаççĕ: Берлинри, Лондонри, Нью-Йоркри, Чикагори, Бостонри. Ыттисем пĕрремĕшпе иккĕмĕш категориллĕ. С.Захарова малтанхи виççĕшĕнче призлă вырăнсене йышăннă. Хальлĕхе пуринче те призлă вырăна тухма никам та пултарайман. Юлашки вăхăтра Светлана Владимировна пĕр шайра кăтартса, тĕнчери чи вăйлă марафонецсен шутне кĕрет. Ăмăртусенче тăтăшах çĕнтернĕшĕн Америкăра С.Захаровăна «пĕртен-пĕр марафонка» теççĕ.

Тĕл пулура Светлана хăйĕн спортри ӳсĕмĕсем çинчен каласа кăтартнă, шкулти савăнăçлă кунсене аса илнĕ, пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнăшăн учительсене тав тунă, спорта юратакансен ыйтăвне хуравланă, хăйне панă çĕнтерӳ медалĕсене кăтартнă.

Унтан шкулти сăвăçсем, тăххăрмĕш тата вунпĕрмĕш классенче вĕренекен Л.Яковлевăпа И.Яковлева сăвăсем вуласа панă. Пурте пĕрле В.Сытинаентеш çырнă «Савнă Энĕшпуç» юрра пысăк хавхаланупа шăрантарнă.

Шкул директорĕ П.Егоров, ял администрацийĕн пуçлăхĕ В.Сергеев, хăнапа пĕр класра вĕреннĕ Т.Алексеева тав сăмахĕсем каласа С.Захаровăна парнесем панă. И.Криков учитель Энĕшпуç ялĕн историйĕ çинчен çырнă кĕнекине парнеленĕ. Тĕнчипе чапа тухнă спортсменкăпа кашни класс сăн ӳкерттернĕ. Тĕл пулăва видеокассета çине ӳкерсе çырнă.

Светлана Владимировна хăйĕн пĕрремĕш учительницине, ЧР тава тивĕçлĕ учительне З.Кирилловăна, пĕрремĕш тренера Г.Исаева тата шкулти Н.Изосимов тренера хаклă парнесем, шкулăн спорт базине çирĕплетме 10 пин тенкĕ укçа парса хавхалантарнă.

1999 çулхи декабрь уйăхĕнчен пуçласа вăл ăмăртусене хăйĕн мăшăрĕпе, РФ тава тивĕçлĕ тренерĕпе,

йӗлтӗрпе чупассипе СССР спорт мастерӗпе Н.Захаровпа пӗрле хатӗрленет.

Тепӗр кунне Светлана Владимировнăпа Николай Александрович Захаровсем шкулти Çар Мухтавӗн музейне çитсе курнă, асăнмалăх тӗрлӗ экспонатсем парнеленӗ.

Нью-Йоркри 32-мӗш марафона тӗнчери вун-вун çӗршывран чи пултаруллă спортсменсем хутшăннă. 2001 çулхи виççӗмӗш тупăшура та Светлана хăйӗн пултарулăхӗпе савăнтарчӗ, чăваш хӗрарăмӗн вăй-хăвачӗ иксӗлми пулнине тепӗр хут çирӗплетрӗ.

Ку ăмăрту çапла иртнӗ: 30-мӗш километр хыççăн чăнчăн тупăшу пуçланнă. Лидерсем малтан-мала кайма пуçланă. Кени çӗршывӗн хӗр ачи Маргарет Окайо юлашки виçӗ çухрăмра пуринчен те иртсе кайса çӗнӗ рекордпа мала тухнă. Пирӗн Светлана вара малти вырăнсенчен пӗрне çӗнсе илессишӗн виçӗ кенийкăпа кӗрешме пӗччен, пӗртен-пӗр «шурă» хӗр тăрса юлнă. Юлашки километртa Сидней Олимпиадин «бронза» призерӗ Джойс Чепчумба та юлма пуçланă. Светăшăн пурте алă çупма тытăннă, ăна хавхалантарнă. Кӗçех Сюзан Черкемей унран тăрса юлнă. Шел те, финиш умӗн Сюзан Светланăран иртсе кайса ăна виççӗмӗш вырăна хăварнă. Пирӗн ентеш кӗмӗл призера пӗр çеккунт кăна выляса янă. Çапла вара Светланăн вăхăчӗ 2 сехет те 25 минут та 13 çеккунт.

Çак ăмăрту хыççăнах Америкăри Филадельфи хулинче иртнӗ хӗрарăмсен марафонӗнче (сакăр çухрăма чупассипе) Светлана Захарова 25 минут та 37 çеккунтра чупса тухса пӗрремӗш вырăн йышăннă.

Манчестер хулинче иртнӗ юлашки ăмăртура, 7 километра чупса, Светлана каллех çӗнтерӳçӗ пулса тăнă.

Бостонра (2002) çӗнтерӳ тума пӗрре те çăмăл пулман. Кунта çулсеренех 30 пине яхăн профессионал хăйӗн вăйне виçсе пăхма, çӗнтерӳшӗн кӗрешме пухăнать.

Чăваш Республикин çăмăл атлетикăн Федерацийӗн вице-президенчӗ В.Ильин каланă тăрăх Бостонри марафон Лондонри, Нью-Йоркри, Чикагăри тата Берлинри пе-

кех, чи сумлă марафонсенчен пĕри. Светлана вĕсене кашнинех хутшăннă-ха. Берлинти марафонра вăл виççĕмĕш пулнă, Лондонра икĕ хутчен иккĕмĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ, Нью-Йоркра виççĕмĕш вырăн йышăннă.

Элитлă ăмăртусенче халиччен Светланăна финиша чи малтан çитсе лентăна перĕнме май килмен. Хальхинче вăл пурнăçланнă.

Бостонри трасса уншăн чи йăнăçли пулнă. 42 километр тăршшĕ çăмăл мар трассăра Светланăпа пĕрле унăн яланах пĕрле тупăшакан кенийкăсем пулнă. Çак хура ӳтлĕ спортсменсем вăрăм дистанцисенче парăнасшăн мар. Бостонра чухне те вĕсем тӳрех мала тухса вирхĕннĕ. Ытти марафонсенчи пек чупмалли çул кукăр-макăр кунта, тӳп-тӳрĕ выртмасть. Ку хутĕнче марафонецсене майлă пулман, çил хирĕçле вĕрнĕ. С.Захарова вара хăйĕнпе тупăшакансене сăнаса пынă. Пĕрремĕш çирĕм çухрăма чупнă хыççăн вăл хăюллăн мала сиксе тухнă, ыттисене пĕр минут çурă кая хăварнă. Анчах та манмалла мар, ун хыçĕнче иртнĕ марафонра çĕнтернĕ Маргарет Окайо тата вăйлă кенийка Джойс Чепчумба пыраççĕ-çке. Дистанцие пĕрремĕш вĕçлесе савăннине Светлана ниçта та пытарма пултарайман. Çакна вăл тахçанах кĕтнĕ, ун патне нумай çул хушши утнă.

– Ултă çул каялла эпĕ 15-мĕш çеç пулнăччĕ, паян вара хамăнпа тупăшакансене çĕнтеретĕп пулĕ тесе шутларăм, çĕнтертĕм те, – савăннине пытараймасăр каласа панă Светлана. Унăн вăхăчĕ 2 сехет те 25 минут та 20 çеккунт.

Бостонра тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн Раççей Чрезвычайлă лару-тăру министрĕ Сергей Шойгу Светлана Владимировнăна лейтенант звани панă.

«Раççей çăмăл атлечĕ Светлана Захарова тĕнчери чи сумлă Бостонри марафона выляса илчĕ. Хăйĕнпе тупăшакансене пĕр минут çурă кая хăварчĕ. Халĕ ĕнтĕ спортсменка ятне Бостонри чемпионсен Аллейинче мрамортан тунă тротуар çине гравировкăпа эрешлесе çырса хураççĕ. Марафон аталанăвĕн нумай çулхи историйĕнче Аллейă-

ра хӑйӗн ятне ҫырнӑ иккӗмӗш вырӑс ҫӗнтерӳҫи ку. 10 ҫул каялла ҫак пысӑк хисепе кунта ҫӗнтернӗ Питӗрти чупуҫӑ Ольга Маркова пулнӑ, – пӗлтернӗ «Экспресс газета» хаҫатӑн Ульяновскри корреспонденчӗ Анатолий Белевцев.

«Экспресс газета» хаҫатӑн корреспондентне панӑ интервьюра Светлана Захарова ҫапла каланӑ: «Бостонри чемпионсен Аллейи марафонецсемшӗн актерсен Голливудӑри ҫӑлтӑрӗсем пекех сумлӑ. – Питех те шел, хамӑн ята ҫырнӑ чемпион плитине эпӗ кураймарӑм – ытла та ир тухса килтӗмӗр эпир.

– Пӗлетӗп, Бостонри марафон ҫӗнтерӳҫисене Шурӑ ҫуртра Америка Президенчӗ йышӑнать...

– 106 ҫул пӗр сиктермесӗр, марафонра ҫӗнтернӗ арҫынсемпе хӗрарӑмсем валли ятарласа автомашина килнӗ. Президентӑн резиденцине каҫхи савӑнӑҫлӑ апата илсе кайнӑ.

Ӑмӑрту ирттерме пуҫланӑранпа 107-мӗш ҫулӗнче вара ҫак йӑлана Джордж Буш пӑснӑ. Америка хаҫачӗсем ҫакӑн пирки тарӑхса статьясем пичетленӗ, халӑх юратакан марафона хисеплеменни ҫинчен критикленӗ.

Париж. 2003 ҫулхи августӑн 31-мӗшӗ. Ҫӑмӑл атлетикӑпа IX Тӗнче чемпионачӗ пулмалла. Чи вӑйлӑ спортсменсем пухӑннӑ кунта. Ку хутӗнче Африка тата Япони спортсменӗсем Светланӑран иртсе кайнӑ. Пирӗн ентеш вуннӑмӗш вырӑна тухнӑ. Раҫҫей марафонкисен команди (тренерӗ Н.Захаров) виҫҫӗмӗш вырӑна тухнӑ, Кени тата Кӑнтӑр Корея спортсменӗсене кая хӑварнӑ.

2003 ҫулхи октябрь уйӑхӗнче тепӗр ҫӗнтерӳ. Чикагӑра иртнӗ Тӗнче чемпионатӗнче С.Захарова каллех мала тухнӑ. 42 километрлӑ дистанцие 2 сехет те 23 минут та 07 ҫеккунтра вӗҫленӗ, Чикагӑри «ылтӑн» Светланӑн ҫӗнсе илнӗ наградӑсен списокне татах пуянлатнӑ: пӗрремӗш вырӑн Техасри марафонра (1996), Бостонри (2002); иккӗмӗшӗ – Лондонри (2001 тата 2002), Брюсельти (2002, ҫурма марафонра тӗнче чемпионӗ); виҫҫӗмӗшӗ – Берлинта (1997), Эдмонтра (Тӗнче чемпионачӗ), Нью-Йоркра

(2004), Гонолулура (Гавай) вăл икĕ хутчен çĕнтернĕ, пилĕк хут кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ.

2004 çулта Чикагăра (США) ирттернĕ Тĕнче чемпионатĕнче Светлана финиша виççĕмĕш çитнĕ, сезоншăн чи лайăх вăхăт: 2 сехет те 25 минут тат 01 çеккунт кăтартнă.

Светлана Захарова 2005 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнче Японири марафонта тăваттăмĕш вырăн йышăннă. Виççĕмĕш вырăншăн пынă хĕрӳ кĕрешӳре 2003 çулта çак чупура çĕнтерӳçĕ ятне çĕнсе илнĕ Энфист Аламу эфиопкăна 5 çеккунт çеç выляса янă. Çакна та палăртмалла: малти 20 çăмăл атлетсем хушшинче вăл Раççейĕн пĕртенпĕр представителĕ пулнă.

Пултаруллă спортсменкăна чыс-хисеп туса кашни çулах районта çăмăл атлетикăпа унăн призĕсене çĕнсе илессишĕн ăмăртусем ирттереççĕ. Массăлăхпа палăрса тăрать вăл. Ăна 2000 çултанпа йĕркелеççĕ.

Аслă Çĕнтерĕве-62, Раççей Пушар службине – 358, Вăрмар районне – 80, поселока – 60, Спорт çуртне 25 çул çитнине халалласа район центрĕнчи стадионта хамăр ентешĕн, Атайкассинче çуралса ӳснĕ Раççей тава тивĕçлĕ спорт мастерĕн С.Захарован призĕсене çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетсен косĕ иртрĕ. Çулсерен ирттерекен ăмăртăва Вăрмар тăрăхĕнчи спорта юратакансем çеç мар, Чăваш тата кӳршĕ республикăсенчен йышлăн пуçтарăнаççĕ. 2007 çулхи спорт уявĕ те 500 яхăн çăмăл атлета пухрĕ.

Кăнтăрла иртсен ăмăртăва хутшăнакансем стадиона йĕркеленсе тăчĕç. Ăмăрту ялавне çĕклеме спортра çитĕнӳсемпе палăрнă çамрăксене: Д.Иванова (Вăрмар поселокĕ), И.Горблюк (Патти), И.Ивановăна (Пысăк Енккасси), В.Степанова (Аслă Чак), М.Петрова (Чупай), О.Кудряшовăна (Энĕшпуç) ирĕк пачĕç. Чăваш Республикин Гимнĕ мăнаçлăн янăрать. Уява уçнă май пухăннисене район пуçлăхĕ В.Кириллов саламларĕ.

-Вăрмар тăрăхĕнчен паллă спортсменсем чылай тухнă. Кам пĕлмест пулĕ Олимп вăййисен чемпионне В.Соколов (Пинер)боксера, Н.Пуклаков (Шăхаль) çăмăл атлета,

СССР рекордсменĕсене И.Иванов, В.Гаврилов (Çĕнĕ Вĕренер) велосипедистсене тата сирĕн умăрта тăракан ентешĕмĕре – С.Захарова спорт мастерне. Сире те, паянхи çамрăксене, вĕсен шайне çĕкленессе, тăван районтан пултаруллă спортсменсем татах тухасса шанатăп,- терĕ Вячеслав Николаевич.

Ӳсекен çамрăк ăрăва спорта массăллă явăçтаракан çакнашкал ăмăрту иртterни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕç тухса калаçакансем.

Ăмăртăвăн тĕп судйи А.Ноздрин кросс йĕркипе паллаштарчĕ. Акă ăмăртусем те пуçланчĕç. Уява судьясен команди тĕплĕн хатĕрленни пĕрремĕш утăмранах палăрчĕ: стартран финиша пĕр ушкăнĕ çитсе çеç пырать, тепĕр ушкăнĕ чупма та пуçлать. Кĕске вăхăтрах ăмăртăва йĕркелекенсем чупса тухнă спортсмен-çĕнтерӳçĕсене наградăлама та пуçларĕç.

Чи малтанах пĕрремĕш ушкăна кĕрекен 1994 çулта çуралнă хĕр ачасем 1000 метрлă дистанцие чупрĕç. Финиша пĕрремĕш М.Петрова (Энĕшпуç) çитрĕ, иккĕмĕшне – И.Иванова (Пысăк Енккасси), виççĕмĕш вырăна К.Линга (Чупай) тухма пултарчĕç. Çав дистанцирех иккĕмĕш ушкăнри арçын ачасенчен малти вырăнсене В.Иванов (Чупай), А.Алексеев (Энĕшпуç), В.Степанов (Аслă Чак) тивĕçрĕç.

Трасса çинче – виççĕмĕш ушкăна (1992-1993 çулсенче çуралнă) кĕрекен хĕр ачасемпе арçын ачасем. Çак ушкăнри хĕр ачасем хушшинче çĕнтерӳçĕ ятне Л.Никифорова (Чупай) тивĕçрĕ. Иккĕмĕш вырăна Л.Алексеева (Чупай), виççĕмĕшне М.Семенова (Вăрмар поселокĕ) йышăнчĕç. Арçын ачасенчен чи пултарулли – М.Петров (Чупай), иккĕмĕш – М.Лаврентьев (Пинер), виççĕмĕш Н.Федоров (Вăрмарти пĕрремĕш вăтам шкул) пулчĕç.

10-11 классенчи яшсенчен 2000 метрлă дистанцие чупса Д.Иванов (Вăрмарти пĕрремĕш вăтам шкул) пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. А.Харитоновпа (Пысăк Енккасси) С.Иванов (Кĕлкеш) – иккĕмĕшпе виççĕмĕш. Хĕр ача-

сенчен малти вырӑнсене Т.Алексеева (Чупай), А.Семеновӑпа Р.Семенова (Вӑрмарти пӗрремӗш вӑтам шкул) йышӑнчӗҫ. Ытти ушкӑнсенче чупакансем те йышлӑн пулчӗҫ. Тупӑшусем кашни ушкӑнрах питех те ҫивӗч иртрӗҫ. Ҫӗнтерӳҫӗсем, паллах, чи вӑйлисем пулчӗҫ. Вӑтам шкулсенче вӗренекенсем хушшинче пӗрремӗш вырӑна Вӑрмарти пӗрремӗш вӑтам шкул команди ҫӗнсе илме пултарчӗ. Иккӗмӗшпе виҫҫӗмӗш вырӑнсенче – Пысӑк Енккассинчи тата Энӗшпуҫӗнчи вӑтам шкулсен командисем.

Пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкулсенчен Чупайсене ҫитекенни пулмарӗ. Пинер шкулӗн команди – иккӗмӗш, Кӗтеснерсем виҫҫӗмӗш вырӑнсене тухрӗҫ.

Хула, ял тӑрӑхӗсенчи ушкӑнсем хушшинче Чупайсем маттурринe кӑтартрӗҫ. Энӗшпуҫсемпе Кӗлкешсем иккӗмӗшпе виҫҫӗмӗш вырӑнсене илме пултарчӗҫ.

Вӑрмарсен Шупашкарти ентешлӗхӗ ҫамрӑксем хушшинче спорт юхӑмне аталантарас, сарас енӗпе тӑрӑшулӑх кӑтартакан Н.Изосимовпа Г.Исаева (Энӗшпуҫ), Л.Агаповӑпа Н.Михайлова (Вӑрмар поселокӗ) Тав хучӗсемпе чысларӗ. Ӑна ентешлӗхӗн вице-президенчӗ В.Нягин пачӗ.

Ӑмӑртура мала тухнӑ командӑсемпе уйрӑм спортсменсене С.Захарова тата унӑн мӑшӑрӗ, Раҫҫей Федерацийӗн тава тивӗҫлӗ тренерӗ Н.Захаров дипломсемпе наградӑларӗҫ, парнесемпе чысларӗҫ.

Атайкассинче ҫуралса ӳснӗ, тӗнче класлӑ спорт мастерӗ Светлана Захарова пирки пӗр вӑхӑт нимӗнле сас-хура та пулмарӗ. Вӑл ҫут тӗнчене хӗр ача парнеленӗ хыҫҫӑн хӑйӗн сывлӑхне ҫирӗплетнӗ. 2007 ҫулхи ноябрь уйӑхӗнче ун пирки ырӑ хыпар пӗлтӗмӗр. Германири Франкфурт хулинче иртнернӗ Тӗнче пӗлтерӗшлӗ пысӑк чупура вӑл чаплӑ ҫитӗнӳ тунӑ. 42 километр ытларах тӑршшӗ дистанцире иккӗмӗш вырӑн йышӑннӑ. Трасса хуҫине Мелани Крауса пурӗ те 16 ҫеккунт кӑна выласа янӑ. Германи хӗрӗн вӑхӑчӗ 2 сехет те 28 минут та 56 ҫеккунт пулнӑ.

Интернет портал ҫӑмӑл атлетикӑра 2007 ҫулта палӑрнӑ ҫӗнтерӳҫӗсен списокне хатӗрленӗ. Ҫак пысӑк хи-

сепе Атайкассинче çуралса ӳснĕ Раççей тĕнче класлă спорт мастерĕ Светлана Захарова та тивĕçнĕ.

2008 çулхи апрель уйăхĕнче вăл Лондонри «Флора» марафонта ăмăртнă. Старта Чăваш Енри чи пултаруллă марафонкăсем тухнă – Светлана Захарова, Людмила Петрова тата Сильвия Скворцова. Кĕмĕл медале çĕршывăн экс-рекордсменки Захарова çĕнсе илнĕ. Тупăшăва вăл ача çуратнă хыççăн иккĕмĕш хут тухнă.

Раççейĕн пĕрлештернĕ штабĕнчен пĕлтернĕ тăрăх çак пысăк кăтарту ăна Пекинра иртекен Олимп вăййисене хутшăнма, Раççейĕн пĕрлештернĕ командине кĕме май парать (унăн вăхăчĕ 2 сехет те 24 минут та 39 çеккунт). «Икĕ çул стартра пулман хыççăн ку маншăн спорт карьерин çĕнĕ пуçламăшĕ», тенĕ Светлана Владимировна. Çакна палăртма кăмăллă: 37 çулхи Светлана Захарова Лондонри марафонра виççĕмĕш хут призерсен шутĕнче пулнă.

Майăн 5-мĕшĕнче Аслă Çĕнтерӳ – 63 çул, Раççей Пушар хуралĕ 359 çул çитнине халалласа район центрĕнче тĕп стадионта çăмăл атлетикăпа Раççей тава тивĕçлĕ спорт мастерĕн С.Захарован призĕсене çĕнсе илессишĕн ирттернĕ ăмăртăва 500 ытла çын хутшăнчĕ.

Стадионта «Священная война» музыка кĕвви мăнаçлăн янăрать. Çĕнтерӳ ялавне çĕкленĕ Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсем вăрçă пынă 1418 куна паллă туса стадионта 1418 метр утса çаврăнаççĕ.

«Аслă Çĕнтерӳ 63 çул тултарнă тата çуллахи спорт сезонĕ уçăлнă ятне сире чун чĕререн саламлатăп, спортри ăсталăха малалла ӳстерсе пыма иксĕлми вăй-хал сунатăп», – терĕ Раççей тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ С.Захарова. – Хамăн спортри карьерăна эпĕ çак стадионта пуçланă, çавăншăн питĕ савăнатăп. Пирĕн районтан пултаруллă спортсменсем сахал мар тухасса, сывă пурнăç йĕркине çирĕп тытса пырасса шанса тăратăп».

Аслă Отечественнăй вăрçăра пуçĕсене хунă воинсене асăнса шăплăх минучĕ ирттереççĕ. Вăрмар тата Куславкка районĕсен çар ĕç комиссариачĕн çурчĕ çине Со-

вет Союзĕн Геройĕн А.С.Казаковăн тата Мухтав орденĕн тулли кавалерĕн П.П.Порфирьевăн Асăну хăми çакаççĕ тата Çĕнтерӳçĕ-палăк умне чечек кăшăлĕсем хураççĕ.

Ăмăрту ялавне çĕклеме чи пултаруллă спортсменсене ирĕк параççĕ. Чăваш Республикин Гимнĕ мăнаçлăн янăрать.

Ăмăртусем питех те çивĕч иртрĕç. Кашниех хăйĕн мĕн пур вăйне, пултарулăхне пачĕ. Çивĕч кĕрешӳре çĕнтернĕ командăсемпе уйрăм спортсменсене райадминистраци пуçлăхĕн заместителĕ Ю.Соколов, Раççей тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ С.Захарова тата унăн мăшăрĕ, Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ тренерĕ Н.Захаров дипломсемпе наградăларĕç, парнесем парса чыс турĕç.

Тĕнче шайĕнчи сумлă ăмăрту Шупашкарта майăн 9-11-мĕшĕсенче иртрĕ. Раççей команди пысăк çитĕнӳ турĕ. Унта тĕнче класлă спорт мастерĕ С.Захарова та хутшăнчĕ, лайăх результат кăтартрĕ. Чăваш Ен Президенчĕ Н.Федоров хăвăрт утакансен XXIII Тĕнче кубокне хутшăннă, Раççейĕн командин йышĕнче тупăшнă чăваш спортсменĕсемпе тата вĕсен тренерĕсемпе тĕл пулнă, вĕсене спортри ăсталăхшăн тав тунă.

2008 çулхи çуллахи XXIX Олимп вăййисем халĕ те ун асĕнчех-ха.

– Пекинри марафон ăс-тăн вăй-халне виçни кăна мар, хамăрăн пултарулăхăра, тивĕçе мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемелли ăмăрту пулчĕ. Мĕн юлашки кунччене Пекинри индустрин йывăр сывлăшĕ пире чăрмантарчĕ пулин те марафонецсем медальшĕн çине тăрса кĕрешрĕç. 42 километрлă дистанцире лидерсен йышĕнче тĕнчери чи пултаруллă спортсменсем пулчĕç. Финиша çитиччен тупăшу питех те хĕрсе пычĕ. Кунта кашни çеккунт шутра. Финиша чи малтан Константина Дита Томеску румынка çитрĕ. Унăн вăхăчĕ 2 сехет те 26 минут та 44 çеккунт. Иккĕмĕш вырăнта – Н.Дереба (Кени), виççĕмĕшĕнче – Чжоу (Китай). Раççей командинчи Ирина Тимофеева (вăл Шупашкарта «Спартак» ирĕклĕ спорт обществин ачасемпе çамрăксен шкулĕнче вĕреннĕ) 40 кило-

метра çитичченех лидерсемпе пӗрле пычӗ, юлашки километртра анчах юлчӗ, çиччӗмӗш вырӑн йышӑнчӗ, – каласа парать Светлана Владимировна.

Хӑй вӑл çирӗм иккӗмӗш пулнӑ.

Китайри Олимп вӑййисене хутшӑннӑ спортсменсемпе тата вӗсен тренерӗсемпе Правительство çуртӗнче иттернӗ тӗл пулура Чӑваш Республикин Президенчӗ Н.Федоров С.Захарована Тав хучӗ парса чыс турӗ.

Пекинри Олимпиада хыççӑн вӑл ноябрь уйӑхӗнче Токио хулинче иртнӗ марафонра та вӑйлисен ушкӑнне лекнӗ.

Умра çӗнӗ стартсем. Лондонра çӑмӑл атлетсем хушшинче кӑçалхи апрелӗн 26-мӗшӗнче иттернӗ тӗнчипе паллӑ марафона хутшӑнакансене палӑртнӑ. Унта тӗнче рекордсменкипе Пола Рэдклифф (Аслӑ Британи) тата Олимп чемпионкипе Константина Дитапа (Румыни) пӗрле пирӗн ентеш Светлана Захарова (Атайкасси) та хутшӑннӑ, тӑваттӑмӗш вырӑн йышӑннӑ.

Тӗнчипе чапа тухнӑ пултаруллӑ спортсменкӑпа, унччен аслӑ лейтенант пакунӗпе çӳренӗ Марафонкӑна – РФ Чрезвычайлӑ лару-тӑру министерствин Чӑваш Республикинчи Тӗп Управленийӗн ӗçченне – Светлана Захаровӑна капитан званийӗ панӑ.

2009 çул ӑнӑçлӑ пуçланчӗ Светлана Владимировнашӑн. Августӑн 15-23-мӗшӗсенче марафон енӗпе Берлинра иттерекен тӗнче чемпионатне хутшӑнакан Раççей командин составӗн кандидачӗсен хушшинче пирӗн ентешсен – Атайкассинче çуралса ӳснӗ Светлана Захарова тата Алевтина Биктимирова ячӗсене асӑннӑ. Апрель уйӑхӗнче Бостонра иттернӗ тӗнче чемпионатӗнче Алевтина – иккӗмӗш, май уйӑхӗнче Лондонри чемпионатра Светлана тӑваттӑмӗш пулнӑ.



*Светлана Владимировна амăшĕпе – Мария Николаевна Васильевапа*




*Энĕшпуçĕнче ирттернĕ Акатуйра Светлана Захаровапа Вăрмарсен Шупашкарти ентешлĕхĕн вице-президентне В.Нягина «Энĕшпуç ялĕн хисеплĕ гражданинĕ» хисеплĕ ят панă*



*Старт панӑ хыҫҫӑн*




*Ҫӗнтерӳҫӗсем хисеп пьедесталӗ ҫинче*



*Светлана Захарован малтанхи тренерӗ, Чӑваш Республикин физкультурӑпа спортӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ Геннадий Николаевич Исаев*



*Сулахайран сылтӑмалла: Вӑрмарсен Шупашкарти ентешлӗхӗн вице-президенчӗ В.Нягин, район пуҫлӑхӗ В.Кириллов, С.Захарова, вӑрҫӑ участникӗ Н.Герасимов, КПСС райкомӗн 1-мӗш секретарӗсем пулса ӗҫленӗ М.Петровпа А.Борцов, Вӑрмарсен Шупашкарти ентешлӗхӗн президенчӗ Л.Григорьев*




*Хисеп пьедесталĕ çинче чи пултаруллисем*




*С.Захарова призĕсене çĕнсе илессишĕн тупăшусем питех те çивĕч иртрĕç*

## ИВАНОВ
### Сергей Валерьевич

1975 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче Йĕпреç районĕнчи Костер ялĕнче çуралнă. Çамрăклăхне Вăрмар районĕнчи Кĕтеснер ялĕнче ирттернĕ.




Велосипедпа чупас енĕпе Раççей тĕнче класлă спорт мастерĕ, Раççей чемпионĕ (1998, 1999, 2000, 2005, 2008), Европа чемпионачĕн бронза призерĕ (1996), çуллахи XXVII (2000) тата XXIX (2008) Олимп вăййисене хутшăннă.

## Ашшӗнчен тӗслӗх илсе

1969 ҫулта Вӑрмар поселокӗнче ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулне уҫма йышӑннине шкулта вӗренекенсем пысӑк хавaспа кӗтсе илчӗҫ. Мӗнле секцисем уҫӑласса чӑтаймасӑр кӗтрӗҫ. Ҫӗнӗ шкулта малтанах кӗрешӳ меслечӗсене вӗренмелли тата велосипедпа чупма хӑнӑхмалли уйрӑмсем уҫрӗҫ. Спорта юратакансен шкулӗ уҫӑлнӑ текен хыпар часах ытти вӑтам шкулсене те ҫитрӗ.

Унта ҫӳреме кӑмӑл тӑвакансем поселокра кӑна мар, ытти ялсенче те тупӑнчӗҫ.

– Эпӗ паян Вӑрмара кайса килетӗп-ха, спорт шкулне илмӗҫ-ши? – терӗ Валерий (сӑмах Сергейӑн ашшӗ пирки пырать) шкултан таврӑнса сумкине хулпуҫҫи ҫинчен хывнӑ хыҫҫӑн.

– Кирлӗ мара ан калаҫ-ха, ывӑлӑм, кашни кун Кӗтеснертен Вӑрмара сакӑр ҫухрӑм утма ҫӑмӑл мар вӑл, – терӗ Зина аппа ачине хӗрхенсе.

– Хӑрама кирлӗ мар. Ҫынсем кашни кун ӗҫе Вӑрмара ҫӳреҫҫӗ. Эпӗ ҫуран мар, велосипедпа чуптарӑп.

Ачин шухӑшӗпе ашшӗ Иван Петрович те килӗшрӗ. Унӑн кӑмӑлне пӑсас мар терӗ пулмалла.

Тепӗр кунне Кӗтеснерти вӑтам шкулӑн тӑххӑрмӗш класӗнче вӗренекен Валерий Иванов уроксем хыҫҫӑн Вӑрмарти ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулне васкарӗ.

– Директор юлташ, манӑн сирӗн шкула ҫӳреме кӑмӑл пур.

– Сире занятисене ҫӳреме инҫерех пулӗ?

– Нимех те мар, тархасшӑн илӗр, – тархасларӗ ҫамрӑк каччӑ.

Шкул директорӗ Зосим Романович Матвеев пӗр вӑхӑт шухӑша кайнӑ пек пулса тӑчӗ.

– Юрать, питех тархаслатӑн пулсан, илсе пӑхӑпӑр. Анчах та малтанах калатпӑр, ҫӑмӑл пулмасть.

Ҫак кунтан пуҫласа вӑл велосипедистсен секцине ҫӳреме пуҫларӗ.

П.Павлов тренерирттерекен занятисен çирĕп расписани пулнă.

Секцие çӳрекенсен велостанока пĕр чарăнмасăр 3-4 сехет хушши çавăрмалла. Чăтăмлăх кирлĕ кунта.

Вырсарникунсенче вара «Вăй тĕрĕслемелли» тренировкăсем 7-8 сехете тăсăлаççĕ.

Çапла вара занятисем эрнере 4-5 хутчен пулмалла.

Пур енлĕ аталаннă спортсмен пулас тесен, велостанока кăна çавăрни çителĕксĕр, çуран та чупмалла, конькипе те çӳреме хăнăхмалла, хоккейла, волейболла, футболла вылямалла тата ытти те. Секцие çӳрекен кашни спортсмен çапла пулма тăрăшнă, кам та пулин хыçалтан хӳтернипе мар, кăмăл-туйăм туртнипе.

Тренерăн вара пурин çинчен те тĕплĕн шухăшласа ĕçлемелле. Ачасем çамрăклах спорта юратма вĕренччĕр тесен, вĕсене паллă спортсменсем çинчен каласа памалла. Секцине çӳрекенсем çав чемпионсем пек пулма ĕмĕтленччĕр, вĕсен тĕслĕхĕпе хавхаланччăр.

– Çамрăксене чаплă спортсменсем çинчен каласа ăнлантарни вĕсен ăшĕнче çутă ĕмĕт çуратать. Вĕсем те çав çынсем пек пулма тăрăшаççĕ. Табак туртма пăрахаççĕ, эрех таврашне çăвар патне те илсе пымаççĕ, – тет Петр Павлович тренер, хăйĕн вĕренекенĕсем çине пăхкаласа. – Секцие килнĕренпе вĕсем чылай йĕркеленчĕç. Шалти дисциплина уççăнах палăрма пуçларĕ.

Çамрăксем спортăн анлă çулĕ çине тухасси вĕсене спорта çамрăклах епле хăнăхтарнинчен, учительсемпе тренерсен пулăшăвĕнчен нумай килет.

Спорт шкулĕнче вĕренекенсен пĕрремĕш ăмăртăвĕ халĕ те куç умĕнчех. Патăрьел районĕнче иртттерчĕç ăна. Пирĕн çамрăк велосипедистсене ют çĕрте ирттернĕ ăмăрту пĕрре те пăшăрхантармарĕ. Хăйсен пултарулăхне тĕрĕслерĕç вĕсем кунта. Çамрăксем хушшинче малтанхи ăмăртурах пултаруллă спортсменсем пурри палăрчĕ.

Пĕр çулталăк та иртмест Валерий Иванов велосипедпа чупас енĕпе çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвать. Малтан вăл виççĕмĕш разряд нормине тултарать. Унтан шкул ачисен

республикăри ăмăртăвне хутшăнать. Патăрьелĕнче иртнернĕ ăмăртура 15 çухрăма чупса финиша 23 минут та 31 çеккунтра çитет, пĕрремĕш вырăн йышăнать.

1971 çулта июнь уйăхĕнче Горький хулинче ял хуçалăх производствинче ĕçлекен спортсменсен ăмăртăвĕ пулса иртнĕ. Валерий кунта Чăваш Республикин чысне хӳтĕленĕ. 15 çухрăма чупса каллех малти вырăна тухнă. 50 çухрăмлă дистанцире те вăл малтисенчен пĕри. Старта тухнă 74 велосипедистран 69-шне кая хăварса пиллĕкмĕш вырăн йышăнать. Кунта тунă çитĕнӳсем ăна Пĕтĕм Раççейри ялти спортсменсен ăмăртăвне хутшăнма май параççĕ.

Çак çулах Пĕтĕм Раççейри ăмăртусем Ставрополь крайĕнчи Георгиевск хулинче пулса иртнĕ. Ку ăмăртура Иванов 25 çухрăма чупнă чухне, 20 спорт мастерне кая тăратса хăварать. Виççĕмĕш вырăн йышăнса кĕмĕл медаль çĕнсе илет. СССР спорт мастерĕн нормине пурнăçлать. Çакна та палăртма кăмăллă: кунта вăл чи çамрăк спортсмен пулнă. Ăна РСФСРăн пĕрлештернĕ командине кĕртеççĕ. Çавна май вăл Феодосия хулине каять. Ялти спортсменсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕнче çĕнĕ ӳсĕмсем тăвать.

Çапла вара Валерий Иванов спорт шкулне çӳрекенсенчен чи малтан СССР спорт мастерĕн нормине пурнăçлать.

Сергей ятлă ывăлĕ ашшĕ çулĕпе кайнă. Кĕтеснерти вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарти «Промтрактор» производство пĕрлешĕвĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулне çӳреме пуçланă. Ашшĕнчен тата пĕрремĕш тренерĕнчен Г.Нибаевран тĕслĕх илсе С.Иванов вун сакăр çултах велосипедпа чупассипе Чăваш Республикин чемпионатĕнче çĕнтерет, часах Олимп резервĕсен училищинче вĕренекенсен Пĕтĕм Раççейри ăмăртăвĕнче спорт мастерĕн нормине тултарать. 1995 çулта Раççей тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ ята тивĕçет. 1996 çулта çамрăк салтак Атăлçи çар округĕн чысне хӳтĕлеме пуçлать. Юлашки вунă çулта тĕнче класлă спорт мастерĕ, Самар хулинче пурăнакан чăваш велосипедисчĕ С.Иванов Раççей чемпионĕн ятне пилĕк хут çĕнсе илнĕ, вун-вун çĕршыв-ра иртнернĕ турнирсемпе явăплă ăмăртусенче малти вы-

рӑнсене йышӑннӑ. Тӗнчипе чапа тухнӑ пултаруллӑ велосипедист Сиднейри XXVII Олимп вӑййисенче те ӑмӑртнӑ. 241 километрлӑ дистанцие 5 сехет те 30 минут та 46 çеккунтра вӗçленӗ, 36-мӗш вырӑн йышӑннӑ.

1998 çул. Июлӗн 5-мӗшӗ. Чулхула. Раççей чемпионачӗ.

«Финиша çитесси виçӗ çаврӑм юлсан малтан пурте йӗркеллехчӗ. «Иваново тӑвайккине» хӑпарнӑ чухне Сережа Иванов малалла тапса сикрӗ. Çакӑн пирки эпир нимӗн чухлӗ те тӗлӗнмерӗмӗр, Угрюмовпа пӗрле Сережӑна каярахпа пулӑшса пырас терӗмӗр. Çав вӑхӑтра сывлӑха пула мана йывӑр килчӗ, климата хӑнӑхса çитменнипе е апат пахалӑхлӑ мар пулнипе пулчӗ пулмалла, эпир ӑна Угрюмовпа хӑвалама пуçларӑмӑр. Вӑл вара маларан та мала пӑрахса кайрӗ,- çапла комментари панӑ Дмитрий Конышев. Ушкӑнпа 200 километра ӑмӑртса чупнӑ профессионалсем Раççей VII чемпионатӗнче. Чупу Чулхулан тӗп урамӗсемпе иртнӗ. Чемпион кам пулассине палӑртасси вара километра яхӑн тӑсӑлакан «Иваново тӑвайкки» пулнӑ. Пӗлекенсем каланӑ тӑрӑх, хӑй вӑхӑтӗнче купсасем кунти Кремльти чиновниксем валли çак çулпа парнесем илсе килнӗ. Раççей VII чемпионатне чи пултаруллӑ 43 профессионал-велосипедист килнӗ, вӗсен шутӗнче тинтерех ирттернӗ нумай кунлӑха пынӑ «Джиро» ӑмӑртусенче çӗнтернӗ Павел Тонков та пулнӑ.

– Лидерсенчен Екимов, Берзин, Борик çеç килмен. Нумай кунлӑха пынӑ «Тур де Франс» ӑмӑртусем хыççӑн вӗсем канма шутларӗç, – тенӗ Раççей велосипедисчӗсен Союзӗн генеральнӑй секретарӗ Сергей Ердаков. – Иртнӗ Раççей чемпионачӗпе танлаштарсан кунта чи вӑйлисем пухӑннӑ.

Чупмалли трасса 200 километр. Пурӗ 16 çаврӑм тумалла. Çаврӑм тӑршшӗ 12,5 километр. Икӗ çухрӑмне тӑвалла чупмалла, иккӗшне анаталла анмалла. Çапла шутланӑ: ку трасса хуçи Чулхулара çуралса ӳснӗ Дмитрий Конышев пулать. Хӑй 10 çул ют çӗршывра пурӑнать пулин те, ку тавралӑха лайӑх пӗлет.

13 çаврăма çитиччен трасса çинче нимĕнле улшăнусемех те пулман. Участниксенчен çурри ытла йывăрлăхсене чăтаймасăр чупма пăрахнă. Павел Тонков та, «Джиро» хыççăн чупма йывăр тесе, трассăран тухнă. 28 çулхи профессионал (вăл ют çĕршыври клубра икĕ çул çеç-ха) Сергей Иванов хăйне лайăх туйнă, вăйне шаннă.

– Трасса çинчи лару-тăрăва шута илнĕ хыççăн эпĕ çапла тĕллев лартрăм: Кремль патне хăпарнă чухне тăвайкки çинче вăйлă чупмалла. Унти трасса айккинчен лайăхах курăнмасть. Эпĕ мĕнле чупнине пурте асăрхамаççĕ,- каярахпа çапла каласа панă Сергей Иванов. – 12-мĕш çаврăмра хăвăртлăха ўстерме вăхăт. Кремль хапхисенчен вăл пысăк хăвăртлăхпа вирхĕнсе тухать, ыттисене 400 метр кая хăварать. Тепĕр çаврăмра вăл пуринчен те 49 çеккунт выляса илнĕ. Ăна хыçран Петр Угрюмовпа Дмитрий Конышев хăваланă. Анчах вĕсем те хыçала та хыçала юлса пынă. Хăйĕн конкуренчĕсене вăл темиçе 100 метр хыçа хăварнă, вĕсенчен 52 çеккунт выляса илнĕ.

– Эпĕ ирхине Сережăна куртăм та çапла калатăп: киле Шупашкара медальсемпе таврăнсан пит лайăхчĕ, – çапла каласа панă унăн ашшĕ, çĕнĕ чемпионăн пĕрремĕш тренерĕ Валерий Иванов. – Килте вăл питех те сахал пулать. Кăçал Чăваш Ене пачах та килсе курман, ентешсене çĕнтерўпе савăнтармалла. Ашшĕн сăмахне асра тытнă вăл, чемпион ятне тивĕçнĕ.

Унăн çĕнтерĕвĕпе 5 хулара савăнма пултараççĕ. Вăл Шупашкарта ўснĕ, каярахпа Самарăра пулнă. Халĕ Голландири «ТВМ» велоклуб чысне хўтĕлет. Бельгинче пурăнать. Кунти велоклуб ăна хваттер панă. Чулхулана та Сергей ырăпа асăнать. 10 çул каялла кунта «Урожай» ирĕклĕ спорт обществинче мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртусенче çĕнтерўçĕ пулса тăрать.

Чулхулари Раççей чемпионачĕн итогĕсем те паллă: 200 километрлă дистанцие пирĕн ентеш Сергей Иванов («ТВМ»-Самара) 5 сехет те 24 минут та 23 çеккунтра чупса тухнă. Иккĕмĕш вырăнти П.Угрюмов («Баллон», МГФСО-ШВСМ) –

5:26:16; виççĕмĕш – Д.Конышев (Маркатоне Уно, Н.Новгород) – 5:26:19; Г.Михайлов («Лада», ЦСКА – Самара) – 5:26:54; Э.Грицу («Локосфинкск», Санкт-Петербург) – 5:29:02; М.Смирнов (МГФСО – «Динамо» – ШВСМ) – 5:29:06.

1999 çул Сергей Ивановшăн ăнăçлă çулталăк пулнă.

Каталонири турăн юлашки тапхăрĕнче Дмитрий Конышев чирлесе ӳкет. Иртнĕ çулхи бронза призерĕ сакăр çул каялла Чулхулара ирттернĕ Раççей чемпионатĕнче ылтăн медаль çĕнсе илнĕ пулнă. Кăçал та вăл çав çитĕнĕве тума ĕмĕтленнĕччĕ. Анчах та кăлăхах. Финанс енчен тухса тăнă йывăрлăхсем иртнĕ çулхи чемпионатăн кĕмĕл призерĕн Петр Угрюмовăн «урапине шăтарнă». Вăл та Чулхулана килеймен. «Тур де Франс» командăн планĕпе Павел Тонков çак чемпионата выляса илмелле пулнă, вăл та килмен.

– Иртнĕ çулхи августри кризис пирĕн профессионал велосипед спортне питĕ вăйлăн пырса çапрĕ, – тенĕ Раççей велосипедисчĕсен союзĕн генеральнăй секретарĕ Сергей Ердаков. – Ку условисенче пире команда йĕркелеме питех те йывăр. Октябрьте иртекен Тĕнче чемпионатне эпир 12 велосипедист яма пултаратпăр. Çак составран çуррине те пулин пухма Турă пулăштăрах.

Лидерсенчен Чулхулана иртнĕ çулхи чемпион, Самарăри Сергей Иванов çеç килнĕ. Вăл Бельгинче пурăнать, Голландири ТВМ клуб чысне хӳтĕлет. Чулхулари Кремль хĕррипе 204 километр чупса вăл каллех чемпион ятне çĕнсе илет. Унăн вăхăчĕ 5 сехет те 27 минут та 29 çеккунт. Кĕмĕл медале Краснодартан килнĕ Василий Давыденко тивĕçет (5:27:34). Виçĕ çул каялла вăл çак хулара чупса Раççей чемпионĕн ятне илнĕччĕ. Бронза медаль Дмитрий Садуна москвичра (5:27:38).

Çапла вара Сергей Иванов иккĕмĕш хут Раççей чемпионĕн ятне тивĕçет.

2000 çул. 25 çулхи Кĕтеснер каччишĕн Сергей Ивановшăн паллă çул. Сиднейре иртterекен XXVII Олимп вăййисене хутшăнма путевка çĕнсе илме тăрăшмалла.

Велосипедпа шоссе ҫинче чупса ҫӗршывра мала тухассишӗн иртгернӗ ӑмӑртусене Самарӑра йӗркеленӗ. Чи вӑйлӑ та опытлӑ спортсменсем пуҫтарӑннӑ кунта. Кашниех Сиднейри Олимпиадӑна лекесшӗн. Кунти ӑмӑртӑва хутшӑнман Дмитрий Конышев, Евгений Берзин, Вячеслав Екимов та ҫав шухӑшлах пулнӑ.

Сиднейра трасса йывӑр та кӑткӑс пуласса пурте пӗлнӗ. Чапа тухнӑ Петров тренер сӑмахран, Павел Тонков сӑрт ҫине питӗ ӑста хӑпарма пултарнине шута илсе, ҫаврӑнмалли вырӑнсем нумай пулнӑ май, ҫав тӗлте асӑрханулла пулмалли ҫинчен аса илтернӗ. Павел пултараймасан вара? Тӗп тренер пӗрлешгернӗ командӑна чи вӑйлӑ, пултарулла спортсменсене суйласа илнипе пӗрлех, вӗсем хӑйсен ӑсталӑхне куллен ӳстерсе пымалли ҫинчен аса илтернӗ. Самарӑри чупу пирки тренер шантарсах ҫапла каланӑ: «Пӗр купара нумай вӑхӑт хушши васкамасӑр пӗрле пыраҫҫӗ. Трасса хӑйех вӑйсӑррисене кӑларса ывӑтать. Финиша вара пӗччеңшерӗн ҫитеҫҫӗ.».

Ҫур дистанцие ҫитнӗ ҫӗре трасса ҫинче 40 участникрен те сахалтарах юлнӑ.

Пуринчен те маларах ушкӑнран Алексей Сиваков («Биг Мат») уйрӑлса кайнӑ.

– Кам Самарӑна профессиллӗ клубсенчен килнӗ, пурне те ӑнаҫлӑ чупма сунатӑп, – тенӗ Гусятников.

Сиваков пӗр ҫаврӑм кӑна уйрӑм пынӑ. Пӗччен хирӗҫле вӗрекен ҫиле ҫӗнтерсе пыма йывӑррине тата ҫын ҫурӑмӗ хыҫӗнче пытанса вӑя перекетлеме май пуррине туйса илнӗ вӑл.

Тепӗр ҫаврӑм тунӑ хыҫҫӑн мала Иванов сиксе тухнӑ.

– Эпир Сергейпе черетпе атакӑларӑмӑр, – тенӗ чупу хыҫҫӑн Тонков, – ӑна май килчӗ те вӑл малалла кайрӗ, эпӗ ӑна хӳтӗлесе пытӑм. Эпӗ мала тухса вирхӗннӗ пулсан, Иванов маншӑн ӗҫлетчӗ. Гусятниковӑн сӑмахӗсем аса килчӗҫ: «Эсӗ хуть те мӗнле вӑйлӑ чупуҫӑ пулсан та, пӗччен нихҫан та ҫӗнтерейместӗн».

Лидерсен тӗлӗнмелле илемлӗ те профессиллӗ ӑсталӑхне ҫамрӑксем ҫӗнтерме пултарайманни курӑн-

са тăнă. Тонковпа Ивановсăр пуçне çĕнтерĕве шанăç кÿрекенсем пиллĕкĕн кăна юлнă. Кам та пулин атакăлама пултарать-ха. Андрей Зинченко нимрен хăрамасăр малалла хăюллăн тапса сикнĕ.

– Питĕ хăрушă велосипедист, – тенĕ ун пирки Гусятников. – «Вуэльтăн» темиçе тапхăрне выляса илнĕ, пысăк опыт пухнă. Ăна малалла ярсан вăл Тонкова та хăваласа çитме пултарать.

Трасса питех те ултавлă. Тăвалла хăпаракан вырăн лайăх курăнса тăнă. Велосипедистсем мĕн пур вăйхалне панă, малалла талпăннă. Анчах та усси сахалтарах. Финиша çитиччен пĕр çаврăм – 8 километр кăна чупмалла. Зинченко малтисен ретĕнче тытăнса тăрайман, каллех пĕрле чупакансен ушкăнне лекнĕ. Шăп çав вăхăтра финиша Ивановпа Тонков тухса вирхĕннĕ, вĕсене никам та кансĕрлеме пултарайман. Çапла вара Сергей Иванов профессионалсем хушшинче виççĕмĕш хут Раççей чемпионĕ пулса тăрать, Олимп вăййисен пĕрлештернĕ командине лекет.

Çак чемпионатра Сергей Иванов дистанцие 4 сехет те 52 минут та 11 çеккунтра вĕçлет. Иккĕмĕш вырăнта – Павел Тонков, виççĕмĕшĕнче – Алексей Сиваков.

Пирĕн ентеш Сиднейри XXVII Олимп вăййисене хутшăнчĕ, лайăх результат кăтартрĕ.

2001 çул. Июль уйăхĕ. Мускавран телевиденипе панă хыпарсен передачинче пирĕн ентеше, тĕнче класлă спорт мастерне, профессионал-велосипедиста Сергей Иванова кăтартрĕç. Чăваш каччи нумай кунлăха пыракан, Франципе ирттерекен «Тур де Франс» ăмăртăвĕсен тунтикун ирттернĕ тапхăрĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Тепĕр çулхине пирĕн ентеш Италири «Фасса Бортоло» команда членĕ, Парижра ирттернĕ «Тур де Франс» ăмăртусенче лайăх результат кăтартнă.

Ун хыççăн вăл Голландире ирттернĕ «Тур Голландии» ăмăртусен пиллĕкмĕш тапхăрне, 198,9 километра, 4 сехет те 13 минутра чупса тухнă, çĕнтерÿçĕ пулса тăнă.

Сергей Иванов Вăрмар поселокĕнче çуралса ӳснĕ Валерий Расколов спорт мастерĕпе «Лада» – Самара – ЦСК командăра та ăмăртнă, лайăх çитĕнӳ тунă.

Ун хыççăн С.Иванов профессионал Италири «ТВМ» команда составĕнче пулса ют çĕршывсенче irттернĕ ăмăртусенче хăйĕн пултарулăхĕпе палăрса тăнă.

С.Иванов 1996 çултанпа профессионалсен йышĕнче ăмăртать. Тĕнчипе чапа тухнă пирĕн ентеш 1996-2000 çулсенче хутшăннă ăмăртусенче пурĕ 24 хутчен çĕнтернĕ, хисеп пьедесталĕн чи çӳллĕ картлашки çине хăпарма тивĕç пулнă.

2008 çулхи июнь уйăхĕн вĕçĕнче Мускав çывăхĕнчи Крылатскинчи Олимп трассинче Раççей чемпионатне ирттернĕ. Раççей велоспорчĕн чи вăйлисем пуçтарăннă кунта. Владимир Карпец та килнĕ. Хăй вăл çак ăмăртăва «Тур де Франс» тупăшупа улăштарма та иккĕленсе тăман пулĕ. Испани команди темĕншĕн ăна çак «Пысăк ăмăртуран» пăрса хăварнă. Çапла вара ăна чемпионата хутшăнтарман. Унăн конкуренчĕсем Сергей Иванов, Александр Колобнев, пĕр тăван Александрпа Владимир Бочаревсем, Алексей Щебилин, Борис Шпилевский тата ытти нумай спортсменсем пулма пултарнă.

– Чупăва кам çĕнсе илĕ? – çак шухăш пуçран тухма пĕлмен шоссе çинче велосипедпа чупассипе патшалăх тренерĕн Юрий Кучерявăн.

– Пурне те паллă: кам вăйлă – çав çĕнсе илет. Кун пек чемпионат тахçантанпа та пулман. Паян çивĕч кĕрешӳ пулать.

Прогноз пĕтĕмпех çирĕпленнĕ. Ăмăртăва курма халăх йышлăн пухăннă. Çулсем хĕррине лартса тухнă машинăсем çинче Раççей ялавĕсем вĕлкĕшнĕ. Кăшт айккинерех туристсем палаткăсем лартса тухнă, шашлăк пĕçернипе тĕтĕм çӳлелле хăпарнă. Пурин кăмăлне те пăсакан сăлтав вăл: халĕ ишĕлсе анас пек хура çумăр пĕлĕчĕ тăни. Старт панă хыççăн сехет çурă иртсенех çумăр çума пуçланă. Куракансене чăрмантарнипе пĕрлех, шашлăк пĕçерекенсене те савăнма паман, тавралăх шывпа тулнă. Çакăн пек çанталăкра велосипедистсене чупма мĕнле йывăр пулни каламасăрах паллă.



*Старта тухма хатĕрленеççĕ*



*Сергей Иванов Пекинри XXIX Олимпиада хыççăн*

Ăмăрту пуçлансанах вунна яхăн велосипедист ыттисенчен уйрăлса кайнă. Кĕçех вĕсем тĕп ушкăна 3 минута яхăн кая хăварнă. Спортсменсен тактикине çырса кăтартаймасан та кĕрешӳ питех те çивĕч пынă. «Катюша» командăра ăмăртакан Александр Порсев тата Тимофей Крицков уйрăмах пултарулăх кăтартнă. Финиша вара Роман Климов виççĕмĕш вĕçленĕ. «Жанр классики»,-çапла хак панă вĕсен ĕçне велосипед федерацийĕн президенчĕ Александр Гусятников.

Паллах, калама çук лайăх чупнă Сергей Иванов. Дистанцин пĕрремĕш çурринче вăл хăйĕн пултарулăхне уçса пама шутламан, ушкăнра ытти велосипедистсемпе пĕрлех пынă. Каярахпа вăл хăйĕн пултарулăхне кăтартма шутланă. Мĕн пур вăйне пухса малалла тухса вирхĕннĕ, хăйĕнпе тупăшакансене çурăмне çеç кăтартса хăварнă. Юлашки çаврăмра (чупакансем пурĕ 13670 метра 15 çаврăм тунă) Иванов пурне те çĕнтерсе чемпион ятне çĕнсе илессе никам та иккĕленме пултарайман. Тĕнчен юлашки чемпионатĕнче кĕмĕл призер пулнă Александр Колобнев велосипечĕ юрăхсăра тухнипе чупма чарăннă, питех те кăмăлсăр пулнă.

Чемпионат итогĕсем çакна кăтартса панă: старта тухнă велосипедистсенчен çурри финиша çитеймен. Вĕсен хушшинче Владимир Ефимкин та пулнă. Раççей чемпионатне хутшăнса вăл «Тур де Франс» турнир умĕн ӳт-пĕве çемçетесшĕн пулнă. Финишра вăл хăйĕн пĕр тăван Александршăн «чирленĕ», анчах та лешĕ бронзăна чуть çеç çĕнсе илеймен. Корпец пекех вăйлăн тапса сикнипе иккĕшне те 27 çулхи Александр Баженов кая хăварнă. 2003 çулта Раççейре мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртура çĕнтернĕренпе вăл сасă паманччĕ-ха.

– Ыттисенчен уйрăлса кайнă хыççăн эпĕ çапла шутларăм, – тенĕ финиш хыççăн Иванов. – Ачасем «вăйсăрланса çитнĕ». Эпĕ вара çак самантпа усă курмасăр пултараймарăм.

– Çапла вара Сергей Иванов пиллĕкмĕш хут Раççей чемпионĕн ятне çĕнсе илет. 204 километрлă дистанцие 5 сехет те 03 минут та 23 çеккунтра вĕçлет. Пултаруллă велосипедист Баженова (Хабаров крайĕ) – 2.04, Климова (Саратов-Ростов облаçĕ) — 2.06, Соколова – («Динамо») – 2.19,

Арекеева (Пушкӑрт) – 2.21, Шпилевские («Премьер») – 2.49, В.Карпеца (Краснодар крайӗ) – 2.49, Бочарова (Омск облаҫӗ) – 12.27 минут кая хӑварать.

XXIX Олимп вӑййисене хутшӑнма путевка ҫӗнсе илет. Шел те, С.Иванов каллех Самар облаҫӗн чысне хӳтӗлерӗ.

Пекинра иртнӗ Олимпиада вӑййисене чӑвашсем, ҫав шутра Вӑрмарсем те, тимлӗн сӑнаса тӑчӗҫ. «Советская Чувашия» хаҫат «Чӑн-чӑн профессионал» статьяра ҫапла ҫырнӑ: «Самар облаҫӗнчен Олимпиадӑна кайнӑ Сергей чӑн-чӑн арҫын, чӑваш ятне яман спортсмен пулнине кӑтартса панӑ. 245 километра тӑсӑлакан ушкӑнра чупу питӗ пӑчӑ ҫанталӑкра иртнӗ. Ҫавна пулах пулӗ 53 велосипедист финиша та ҫитеймен.

Пиллӗкмӗш ҫаврӑмра, Аслӑ Китай стени ҫывӑхӗнче Раҫҫей командин участникӗн В.Карпецӗн хыҫалти кустӑрми шӑтать. Вӑрмар каччи пӗр шухӑшласа тӑмасӑр ӑна хӑйӗн урапине кӑларса парать, техника пулӑшӑвӗн командине кӗтсе илет те малалла талпӑнать. Владимира хуса ҫитсе Сергей ӑна малта пыракансем патне конкурентсем витӗр «туртать». Кӗтмен ҫӗртен сиксе тухнӑ пӑтӑрмах та Вӑрмар каччине финиш патне ӑнтӑлас кӑмӑлне пӑсмасть, анчах ҫухатнӑ минутсене каялла тавӑраймӑн – пирӗн ентеш Сергей Иванов финиша 78-мӗш ҫитет».

Пекинри ӑмӑртусенчен таврӑнсанах вӑл Италири Верезе хулинче уҫӑлнӑ шоссе ҫинче чупас енӗпе ирттернӗ Тӗнче чемпионатне хутшӑннӑ. Пилӗк хут ҫӗршыв чемпионӗн ятне тивӗҫнӗ профессионалсен «Астана» командин спортсменӗ лайӑх результат кӑтартнӑ.

Пирӗн пултаруллӑ велосипедист Сергей Иванов профессионалсен «Катюша» команда членӗ пулса тӑнӑ. Кӑҫал вӑл «ПроТуре» турнирта официаллӑ майпа Раҫҫей чысне хӳтӗлӗ. 27 ҫынран тӑракан «Катюша» командӑра Раҫҫейрен 14 спортсмен, 4 бельгиец, 3 итальянец, 2 испанец, ҫавӑн пекех австралиец, британец тата венгр.

С.Иванов Шупашкарти Олимп резервӗсен ятарлӑ училищине вӗренсе пӗтернӗ. Атӑлҫи Ҫар округӗнче службӑра тӑрать.

2009 ҫулхи Мӑнкун праҫникӗ Сергей Ивановшӑн ыланлӑхах асра юлӗ. Ҫав кун ӗнтӗ пирӗн ентеш, Раҫҫей профес-

силлĕ велосипедистсен «Катюша» командин капитанĕ пĕр кунлăха пынă Голландире ирттернĕ «Амстел Голд Рейс» ăмăртура паттăрлăх кăтартнă, дистанцие выляса илнĕ.

– Аслă Мăнкун праçникĕнче çĕнтернĕшĕн эпĕ хама телейлĕ тесе шутлатăп, - тенĕ вăл финиш хыççăн савăнăçне пытараймасăр «Весь спорт» информагентствине панă интервьюра. – Хамăн çĕнтерӳпе Пĕтĕм Раççей халăхне саламлас килет. Ку манăн çĕнтерӳ çеç мар, пĕтĕм «Катюшăн» çитĕнĕвĕ. Паян команда тĕлĕнмелле пысăк ăсталăх кăтартрĕ. Манăн ĕмĕт çĕнтерӳпе вĕçленчĕ. «Амстел Голд Рейс» ăмăртăва эпĕ вунă çул ытла хутшăнатăп. Çак чупу маншăн чи юратаканни. 2002 çулта эпĕ иккĕмĕш вырăн йышăннăччĕ. Яланах выляса илме шутланă. Паян вара манăн ĕмĕт пурнăçланчĕ!

Шоссе çинче чупассипе Раççей чемпионĕ пĕрле чупакансене тав тумаллине пĕлнĕ. «Катюша ачисем» пĕр кĕтмен çĕртен пысăк хăвăртлăхпа малалла тапса сикнĕ те конкурентсене кая хăварса вĕсен нервисене хавшатнă. Вĕсемпе пĕрле Сергей те пулнă. Финиша çитиччен 15 километр юлсан Сергей калама çук пысăк хăвăртлăхпа малалла талпăннă, анчах унпа тупăшакансем те юласшăн пулман. Финиша çитиччен 200 метр юлсан Иванов тата тепĕр хут атакăланă, вăл вара çĕнтерӳпе вĕçленнĕ.

– Эпир малта пыма чи вăйлă та талантлă велосипедиста шантăмăр, çакна вăл тахçанах тивĕçлĕ пулнă, ытти çулсенче унăн ыттисемшĕн ĕçлемелле пулнă, – тенĕ ăмăрту хыççăн «Катюша» президенчĕ Андрей Гмиль. – Сергей Иванов пире калама çук пысăк çитĕнӳ тунипе савăнтарчĕ.

Çак савăнăçлă хыпар часах Шупашкарта пурăнакан амăшĕ – Галина Арсентьевна патне те çитнĕ. Вĕсем пултаруллă велосипедиста чаплă çĕнтерӳ тунă ятпа телефонпа шăнкăравласа саламланă инçетри Бельги çĕршывне. Хăй вăхăтĕнче Галина хăй те йĕлтĕрпе чупас енĕпе пĕрремĕш разряд нормине пурнăçланă.

Ашшĕ, Валерий Иванович, ачасемпе çамрăксен районти спорт шкулне çӳрекенсенчен чи малтан СССР спорт мастерĕн нормине пурнăçланă. Çапла «Улми улмуççинчен аякка ӳкмест» тесе каланă ваттисен сăмахĕ тĕрĕсех килсе тухать.






*Ашшĕпе ывăлĕ – Валерийпе Сергей Ивановсем*



*Сергей Зина йăмăкĕпе*




*Тупăшу хĕрсех пырать*



*Финиша çитме инçе-ха*




*Каллех çĕнтерӳ!*




*Чыс-хисепе тивĕçнĕ команда*






*Трасса çăмăл мар*

*Сергей Иванов амăшĕпе*
*Галина Арсентьевнапа*
*тата ашшĕпе Валерий Ивановичпа*





## ПЕТРОВА
### Татьяна Валерьевна

1983 çулхи апрелĕн 8-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Вăрмар районĕнчи Карăкçырма ялĕнче çуралнă.

Çăмăл атлетка енĕпе Раççей тĕнче класлă спорт мастерĕ. Европа чемпионки тата кĕмĕл призерĕ (2005), Раççей чемпионачĕн бронза призерĕ тата чемпионки (2006), Европа чемпионачĕсен кĕмĕл призерĕ (2006, 2007), Раççей тата тĕнче чемпионачĕсен кĕмĕл призерĕ (2008), Пекинри XXIX Олимп вăййисене хутшăннă.

## Карăкçырма хĕрĕ

1980-мĕш çулсенче пысăках мар илемлĕ Карăкçырма ялĕ кунтан чаплă спортсменсем тухнипе палăрма пуçларĕ. Çăмăл атлетика енĕпе СССР спорт мастерĕн ятне тивĕçнĕ Зоя Миролюбовăпа Татьяна Тихонова (Титова) кунта çуралса ӳснĕ. Т.Титова 80-мĕш çулсенче малтан вăрăм дистанцисене чупассипе, унтан хăвăрт утас енĕпе çĕршыв чемпионачĕсенче тата тĕрлĕ патшалăхсенче иртнĕ пысăк ăмăртусенче паха кăтартусем турĕ, тĕнче класлă спорт мастерĕ пулса тăчĕ. Пысăк Енккассинчи Владимир Смирнов та спорт мастерĕ, Станислав Семенов спорт мастерĕн кандидачĕ. Оля Николаева спорт мастерĕ Кĕçĕн Чакран. Галина Федоровăпа (Пысăк Енккасси) Надя Ильина (Кивĕ Мăнтăр) спорт мастерĕн кандидачĕсем.

Пурте Пысăк Енккассинчи вăтам шкулта вĕреннĕ вĕсем. Ăс пухнипе пĕрлех физкультурăпа спорта юратма хăнăхтарнă вĕсене физкультура учителĕ Юрий Порфирьевич Архипов. Хăйĕн воспитанникĕсен спортри çитĕнĕвĕсемпе физкультура учителĕ тата тренерĕ интересленсех тăрать, вĕсемшĕн савăнать, вĕсемпе мухтанать. Тытакан çыхăнăва çирĕплетсех пырать.

1995 çулта Чăваш Республикин физкультурăпа спорт министерстви шкулта çăмăл атлетикăн филиалне уçать. Архипов унăн тренерĕ пулса тăрать. Пултаруллă спортсменсем хатĕрлеме тытăнать.

1997 çулхи май уйăхĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Н.Федоров хăйĕн Указĕпе пултаруллă спортсменсем вĕрентсе хатĕрленĕшĕн тата физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн Юрий Порфирьевич Архипова «Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят парать. Çакă ăна татах та пысăкрах ӳсĕмсем тума хавхалантарать. Шкулта çĕнĕрен те çĕнĕ пултаруллă спортсменсем вĕрентсе хатĕрлесси çине пысăк тимлĕх уйăрать. Вĕренекенсене шкул-

та тата районта ирттерекен ӑмӑртусене анлӑн явӑҫтарма, пултаруллӑ спортсменсене суйласа илме тӑрӑшать.

Шкула Карӑкҫырмаран ҫӳрекен Татьяна Петрован пултарулӑхне вӑл ҫийӗнчех асӑрхать. Унпа тата ытти хӑш-пӗр ҫамрӑксемпе тӑтӑшах тренировкӑсем ирттерме, вӗсене ӑмӑртусене хутшӑнтарма пуҫлать. Татьяна та хӑйсен ялӗнчен тухнӑ чаплӑ спортсменсем пек пулма тӗллев лартать. Тӑрӑшни сая каймасть. Спортри ӑсталӑх ҫулсерен ӳссех пырать.

1998 ҫулхи октябрь уйӑхӗнче район центрӗнчи стадионта шкулсенче вӗренекенсен кӗркуннехи кросӗ пулнӑ. 10-11-мӗш классенче вӗренекен хӗр ачасем 1000 метра чупса ӑмӑртнӑ. Пӗрле тупӑшакансене чылай кая хӑварса Таня пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ. Мӗнле пысӑк савӑнӑҫ. Ҫӗнтерӳ тунӑ ялта ӑна юлташӗсем ӑшшӑн саламланӑ.

1999 ҫулта июнь уйӑхӗнче ҫӑмӑл атлетикӑпа Раҫҫейре мала тухассишӗн Владимир хулинче ирттернӗ чемпионатра вӑл лайӑх результат кӑтартнӑ. 1500 метрлӑ дистанцие 4 минут те 43 ҫеккунтра чупса тухнӑ.

2000 ҫулхи спорт сезонӗ те уншӑн ӑнӑҫлӑ пулчӗ. Май уйӑхӗнче ҫӑмӑл атлетикӑпа республикӑра мала тухассишӗн шкул ачисем хушшинче ирттернӗ ӑмӑртусенче (шкул ачисен Спартакиади шучӗпе те иртнӗ) пирӗн район команди иккӗмӗш вырӑн йышӑннӑ. Пысӑк Енккассинчи вӑтам шкулти Т.Петрова – 1500, Чупайӗнчи С.Егорова 3000 метрлӑ дистанцисенче пӗрремӗш вырӑнсене ҫӗнсе илнӗ.

Шкул ачисем хушшинче ҫӑмӑл атлетикӑпа Раҫҫейре мала тухассишӑн Екатеринбург хулинче ирттернӗ ӑмӑртусенче Пысӑк Енккассинчи вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ Т.Петрова (тренерӗ Ю.Архипов) пысӑк ҫитӗнӳ тунӑ. 3000 тата 1500 метрлӑ дистанцисенче иккӗмӗш вырӑнсене йышӑннӑ, спорт мастерӗн кандидачӗн нормине тултарнӑ.

Тепӗр ҫулӗ Татьянӑшӑн татах та савӑнӑҫлӑрах пулнӑ.

Чӑваш Республикин Президенчӗ Н.Федоров физкультурӑпа спорта аталантарас, шанчӑк кӳрекен ҫамрӑк ентешӗмӗрсене аталантармалли майсем туса парас тӗлӗшпе кӑларнӑ Указпа килӗшӳллӗн Карӑкҫырмара ҫуралса ӳснӗ Татьяна Петровӑна – Раҫҫей Кубокӗн ҫӗнтерӳҫине, Раҫ-

çей çамрăкĕсен пĕрлештернĕ çăмăл атлетика командин членне çулталăк вĕçлениччен уйăхсерен уйăхри чи пĕчĕк ĕç укçин виçĕ виçи чухлĕ стипенди пама йышăннă.

Май уйăхĕнче çăмăл атлетикăпа республикăра мала тухассишĕн Шупашкарта ирттернĕ ăмăртусенче Вăрмар-сем пысăк çитĕнӳ тунă. 1500 метрлă дистанцире Олимп резервĕсен училищинче пĕлӳ пухакан Т.Петрова – иккĕмĕш, 3000 метрлă дистанцире çак шкулта ăс пухакан Е.Храмова (Чупай) пĕрремĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ.

Çăмăл атлетикăпа Раççейре мала тухассишĕн Хусанта ирттернĕ ăмăртусенче Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренекен спорт мастерĕн кандидачĕ Т.Петрова хĕр ачасем хушшинче 5000 метрлă дистанцире иккĕмĕш вырăн йышăннă, 3000 метра чупса виççĕмĕш пулнă.

Республикăри «Олимпийский» стадионта çăмăл атлетика енĕпе Раççейре мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртусене Олимп резервĕсен училищисен, спорт клубĕсен, ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсен тата Олимп резервĕсен шкулĕсен командисем пур регионсенчи хуласенчен 400 спортсмен ытла хутшăннă. 1500 тата 3000 метрлă дистанцисенче Т.Петрова тăваттăмĕш тата пиллĕкмĕш вырăнсене йышăннă. Спорт мастерĕн кандидачĕ ку дистанцисенче унччен аслисем кăтартнă вăхăта лайăхлатнă. Пултаруллă спортсменкăна Раççейĕн пĕрлештернĕ командине кĕртнĕ. Ун хыççăн вăл августăн 5-мĕшĕнче ирттернĕ Тĕнче чемпионатне хутшăннă, лайăх результат кăтартнă.

Çăмăл атлетикăпа Кисловодскра ирттернĕ Хĕç-пăшаллă Вăйсен чемпионатĕнче спорт мастерĕн кандидачĕ Т.Петрова çĕнтерӳçĕ пулса тăнă.

2002 çулта республикăри тата çĕршыври ăмăртусенче Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренекен Т.Петрова уйрăмах пысăк çитĕнӳсем тума пуçларĕ.

Çамрăксем хушшинче мала тухассишĕн Мускавра ирттернĕ Раççей чемпионатĕнче 3000 метра 9 минут та 16 çеккунтра чупса тухнă, пĕрремĕш вырăн йышăннă, Раççей спорт мастерĕн нормине пурнăçланă.

Çăмăл атлетика енӗпе Раççейре мала тухассишӗн Краснодарта ирттернӗ ăмăртусенче тепӗр çӗнтерӳпе савăнтарчӗ пире. Юниорсем хушшинче 3000 метрлă дистанцие 9 минут та 14 çеккунтра вӗçленӗ, пӗрремӗш вырăн йышăннă.

Çавăн хыççăн Карăкçырма хӗрӗ çӗршыв чысне Раççей пӗрлештернӗ командин составӗнче пулса юниорсем хушшинче тӗнчере мала тухассишӗн Ямайка çӗршывӗнчи Кингстон хулинче ирттернӗ ăмăртура тăваттăмӗш вырăн йышăннă. 3000 метрлă дистанцие 9 минут та 16,26 çеккунтра чупса тухнă.

2003 çулхи сезона та Т.Петрова ăнăçлă пуçларӗ. Республикăри ăмăртусенче вăл çитӗнӳ хыççăн çитӗнӳ турӗ. Кросс енӗпе иртнӗ Европа чемпионатӗнче Татьяна каллех тăваттăмӗш пулчӗ. Георгий тата Серафим Знаменскисене асăнса Мускавра ирттернӗ Пӗтӗм тӗнчери ăмăртусенче Т.Петрова 3000 метра 9 минут та 5 çеккунтра чупса тухса иккӗмӗш вырăн йышăнчӗ.

Июнӗн 27-мӗшӗнче Шупашкарти «Олимпийский» стадионта çӗршыври çамрăк çăмăл атлетсен (22 çултан кӗçӗнрех) чемпионачӗ пуçланчӗ. Старта Раççейӗн 58 регионӗнчи 600 ытла спортсмен тухрӗ. Пирӗн республикăри çăмăл атлетсенчен пӗрремӗш кун Т.Петрова чи пысăк çитӗнӳ турӗ. 5000 метрлă дистанцие Татьяна 15 минут та 46,58 çеккунтра вӗçлерӗ, чемпионка ятне çӗнсе илчӗ. Тепӗр кунне вара 20 çулхи пултаруллă хӗр 3000 метра чăрмавсем урлă чупрӗ. Йывăр дистанцире Татьяна Санкт-Петербургри Любовь Ивановăна кăна кăштах выласа ячӗ, иккӗмӗш вырăн йышăнчӗ. Çапла вара Карăкçырма хӗрӗ пӗр чемпионатрах икӗ медале тивӗçрӗ. Август вăрринче Польшăра иртекен Европа чемпионатне хутшăнма путевка çӗнсе илчӗ.

Польшăри стартсем те уншăн ăнăçлă пулнă. Быдгош хулинче çăмăл атлетикăпа ирттернӗ çамрăксен Европа чемпионатӗнче 5000 метра чупса «кӗмӗл» çӗнсе илнӗ.

Шоссе çинче чупассипе Олимп вăййисен чемпионне Петр Болотникова асăнса Саранскра ирттернӗ ăмăртусенче спорт мастерӗ Т.Петрова тепӗр пысăк çитӗнӳ туса савăнтарчӗ. 10000 метрлă дистанцие чи малтан вӗçленӗ.

Патшалăхăн спорт органне туса хунăранпа 10 çул çитнине халалласа ирттернĕ ЧР физкультурăпа спорт министерствин коллегийĕн анлă ларăвĕнче ведомствăн 10 çулхи ĕç-хĕлне пĕтĕмлетнĕ. 2003 çулхи итогсемпе Раççей спорт мастерĕ Татьяна Петрова «спортăн ылтăн резервĕ» номинацире лауреат ятне тивĕçнĕ.

2005 çулта Европа чемпионатĕнче тунă пысăк çитĕнĕвне паянхи пекех лайăх астăвать Татьяна. Германири Эрфурт хулинче 23 çула çитмен çăмăл атлетсем хушшинче ирттернĕ Европа чемпионатĕнче пирĕн ентеш пысăк çитĕнӳ турĕ. ЧР физкультурăпа спорт министерствин Олимп резервĕсен Шупашкарти ятарлă 3-мĕш шкулĕнче ăсталăха туптакан Татьяна Петрова старта икĕ хут тухса хисеп пъедесталĕ çине икĕ хут улăхнă. Малтанхи кунĕнче 10 километрлă дистанцине 33.55.0 минутра вĕçлесе Европа чемпионкин ятне тивĕçнĕ. Иккĕмĕш кунĕнче 5000 метра тупăшса иккĕмĕш пулнă – киле ылтăн тата кĕмĕл медальсемпе таврăннă тĕнче класлă спорт мастерĕ. Чăннипех те пысăк çĕнтерӳ.

Европа чемпионатĕнче чаплă çитĕнӳ тунă ятне Татьяна Петровна саламлама районти культура çуртне спорта юратакансемпе шкул ачисем, физкультура учителĕсемпе тренерсем, район руководителĕсемпе Шупашкартан килнĕ хăнасем йышлăн пухăнчĕç.

Пултаруллă спортсменкăна саламласа тĕл пулура ăшă сăмахсем нумай каларĕç. ЧР физкультурăпа спорт тата туризм министрĕн пĕрремĕш заместителĕ Ю.Николаев Т.Петрован пĕрремĕш тренерне, Пысăк Енккассинчи вăтам шкулти физкультура учительне Ю.Архипова министерствăн Тав çырăвне тата хаклă парне пачĕ. Райадминистраци ячĕпе вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Ю.Соколов Т.Петрован пултарулăхне палăртса тата малашлăхра татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума ăнăçлăхсем сунса, ăна район администрацийĕн Тав çырăвĕ парса хавхалантарчĕ.

Тĕл пулура çавăн пекех Шупашкартан килнĕ спорт шкулĕсен руководителĕсем, çăмăл атлетика енĕпе районта чи малтан СССР спорт мастерĕн нормине пурнăçланă З.Миролюбова тата ыттисем тухса калаçрĕç.

Çавăн чухне унпа тĕл пулса калаçма тӳр килнĕччĕ мана.

– Эсир спортăн урăх енĕпе мар, мĕншĕн çăмăл атлетикăна килĕштеретĕр?, – тесе ыйтсан вăл çапла хуравларĕ:

«1999 çулхи кĕркунне Пысăк Енккассинчи вăтам шкула СССР тава тивĕçлĕ тренерĕ М.П.Кузнецов пынăччĕ. Ахăртнех, район чысне хӳтĕлесе республикăри ăмăртусенче эпĕ мĕнле чупнине асăрханă пулĕ ĕнтĕ. Вăл мана Шупашкарти Олимп резервĕсен училищине вĕренме пыма сĕнчĕ. Манăн малтанхи тренер Юрий Порфирьевич Архипов илсе кайса вырнаçтарсах хăварчĕ. Çапла вара эпĕ спортăн анлă çулне такăрлатма пуçларăм».

Çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тунипе савăнтарать пире Карăкçырма хĕрĕ. Тĕнче класлă спорт мастерĕ Мускавра ирттернĕ Раççей чемпионатĕнче 3000 метра чăрмавсем урлă чупса тĕнче рекордне çĕнетнĕ, çак дистанцие 9 минут та 07.00 çеккунтра чупса тухнă. Унчченхи кăтарту 9.21.4 çеккунт пулнă, икĕ çул каялла ăна Мускав çывăхĕнче пурăнакан Л.Иванова тунă.

2006 çулхи августăн 7-13-мĕшĕсенче çăмăл атлетика енĕпе Швецири Гетеборг хулинче иртнĕ Европăн XIX чемпионатĕнче пирĕн ентеш Татьяна Петрова 3000 метрлă дистанцие чăрмавсем урлă чупса иккĕмĕш вырăн йышăннă, кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ.

Пултаруллă спортсменкăн çитĕнĕвне пысăк хак парса Чăваш Республикин физкультурăпа спорт тата туризм министрĕ В.Краснов район пуçлăхне В.Кириллова çапла саламланă:

*«Хисеплĕ Вячеслав Николаевич!*

*Сире тата районта пурăнакансене Швецире иртнĕ çăмăл атлетика енĕпе Европăн XIX чемпионатĕнче чапа тухнă сирĕн ентеш – Карăкçырмара çуралса ӳснĕ Татьяна Петрова пысăк çитĕнӳ тунă ятпа чун-чĕререн саламлама хавас.*

*Татьяна Раççей пĕрлештернĕ командин çĕнтерĕвне тивĕçлĕ тӳпе хыврĕ, Европа чемпионачĕн тĕп наградисенчен пĕрне – 3000 метрлă дистанцие 9 минут та 28.05 çеккунтра вĕçлесе – кĕмĕл медаль çĕнсе илчĕ. Ку вăл – пирĕн спорт мухтавĕ.*

*Татьяна Петрова пек пултаруллă спортсменсен ырă тĕслĕхĕ тĕнчери арена ҫинче Чăваш Енĕн тата Пĕтĕм Раҫҫейĕн авторитетне ҫирĕплетет, ӳсекен ҫамрăк ăрăва чапа тухнă спортсменсем пек пулма шантарать, физкультурниксен ретне ӳстерме пулăшать, сывă пурнăҫ йĕркине пропагандăлас енĕпе калама ҫук пысăк тӳпе хывать.*

*Савăнмалла, ырлăх кӳрекен Вăрмар ҫĕрĕ хăйĕн спорт йăли-йĕркипе мухтавлă, ҫĕнĕрен те ҫĕнĕ ҫăлтăрсен ячĕсене уҫать. Районти пур граждансене те чĕререн ҫирĕп сывлăх, телей, пуҫланă мĕн пур ырă ĕҫсенче ăнăҫусем сунатăп».*

2007 ҫулхи спорт сезонне Татьяна ҫĕкленӳллĕ кăмăл туйăмпа пуҫларĕ. Чăваш Республикин Президенчĕн Н.Федоровăн Хушăвĕпе килĕшӳллĕн вĕренӳре, тĕпчев, наука, пултарулăх, производство, управлени ĕҫ-хĕлĕнче тата бизнес-проектсем тăвас енĕпе курăмлă ҫитĕнӳ тунă ҫамрăксем 2007 ҫулхи январĕн 1-мĕшĕнчен декабрь уйăхĕн 31-мĕшĕччен кашни уйăхра 1000 тенкĕпе танлашакан Президент стипендие илсе тăма пуҫлаççĕ. Вĕсен хушшинче Олимп резервĕсен ятарлă спорт шкулĕнче вĕренекен Татьяна Петрова та пур. Ҫакă ăна татах та пысăкрах ҫитĕнӳсем тума хавхалантарчĕ.

Март уйăхĕнче тĕнчере мала тухассишĕн Америкăри Вирджинни Бичра ирттернĕ чупăва хутшăннă. Чăваш хĕр ачине питĕ вăйлă ҫил те чăрмантарма пултарайман. 8 километрлă дистанцие вăл 25 минут та 57 ҫеккунтра вĕҫленĕ. Эфиопи спортсменкине 12 ҫеккунт ҫеҫ выласа янă.

Ун хыҫҫăн Алабаме хулинче ирттернĕ чупура каллех иккĕмĕш вырăн йышăннă. Вунă километрлă дистанцие 32 минут та 10 ҫеккунтра вĕҫленĕ.

Умра – ҫĕнĕ ăмăртусем. Июнь уйăхĕнче «Мускав кубокĕ» иртмелле. Унта хутшăнса тепĕр ҫитĕнӳ тăвать. 3000 метрлă дистанцие выласа илет.

Физкультурник кунĕ умĕн района савăнăҫлă хыпар ҫитрĕ. Тулăра ирттернĕ Раҫҫей чемпионатĕнче 3000 метрлă дистанцие чăрмавсем урлă чупса кĕмĕл медале тивĕҫет. Августăн 25-мĕшĕнче Японири Осако хулинче иртекен тĕнче чемпионатне хутшăнма путевка ҫĕнсе илет.

Акă, умра – Осако хули. Çăмăл атлетика енĕпе тĕнче чемпионачĕ пуçланнă кунта. Раççейĕн пĕрлештернĕ командине Чăваш Енĕн 4 спортсменĕ кĕнĕ: О.Иванова, Т.Сибилева (20 çухрăма утассипе), О.Гаус (йĕтре тĕртессипе), Т.Петрова (чăрмавсем урлă 3000 метра чупассипе) тата М.Кузнецовăпа Н.Родионов тренерсем. Çивĕч кĕрешӳре Татьяна финиша иккĕмĕш çитсе «кĕмĕле» çĕнсе илет.

Декабрь уйăхĕнче Гонолумура иртнĕ марафон чупăвĕнче пирĕн ентеш, тĕнче кпаслă спорт мастерĕ Татьяна Петрова дистанцине 2 сехет те 35 минут та 55 çеккунтра вĕçлет, виççĕмĕш вырăн йышăнать.

2008 çула Чăваш Ен Президенчĕ Ырă ĕçсен çулталăкĕ тесе пĕлтернĕ. Республикăра хатĕрленсе ирттерекен пысăк мероприятисенчен пĕри вăл – республикăн тĕп хулинче – Шупашкарта майăн 9-11-мĕшĕсенче хăвăрт утас енĕпе иртекен XXIII Тĕнче Кубокĕ.

Çак ăмăрту епле иртнине пирĕн ентешсем, Карăкçырмара çуралса ӳснĕ, çăмăл атлетика енĕпе тĕнче класлă спорт мастерĕсем Татьяна Титовапа Татьяна Петрова Шупашкарта залив хĕрринче хăйсен куçĕсемпе курса, сăнаса тăчĕç, Раççей команди майлă пулчĕç. Пултаруллă спортсменкăсен малтанхи тренерĕ, «Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ Ю.Архипов вара çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ăмăртăва судья пулса хутшăнчĕ.

Иртнĕ çул Пекинри çуллахи XXIX Олимпиадăпа паллă пулчĕ. Хусанти Тĕп стадионта пине яхăн çăмăл атлет тăвату кун Раççей чемпионатĕнче ăмăртнă. Чи вăйлисем медальсемпе парнесемшĕн кăна мар – лайăх результатсем кăтартса Пекинри Олимпиадăна (вăл августăн 8-мĕшĕнче уçăлнă) хутшăнма путевка çĕнсе илессишĕн те çивĕч кĕрешнĕ. Вĕсен шутĕнче Татьяна Петрова та пулнă.

3000 метра чупассипе Европа, тĕнче чемпионачĕсенче кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ тĕнче класлă спорт мастерĕ Татьяна Петрова Хусан стадионĕнче каллех пысăк ăсталăх, чăтăмлăх кăтартнă. Пĕлтĕр Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинчен вĕренсе тухнă маттур спортсмен-

ка иккĕмĕш вырăн йышăннă. Тĕнче рекордсменкине Гульнара Самитовăна (Тутарстан) кăна ҫитеймен. Ҫапла вара вăл Пекинри Олимпиадăна хутшăнма путевка ҫĕнсе илет.

Старта вăл августăн 17-мĕшĕнче тухать. 3000 метра чăрмавсем урлă чупса финиша 4-мĕш ҫитнĕ. Тăван яла таврăнсан Пекинри ҫуллахи XXIX Олимп вăййисем ҫинчен каласа пама ыйтрăмăр. Вăл хаваспах килĕшрĕ.

– Китай мана симĕслĕхĕпе тыткăнларĕ. Вĕсем тасалăха юратаççĕ, ҫыннисем те ырă кăмăллă. Олимпиадăна вĕсем питĕ тĕплĕн хатĕрленнĕ. Олимп ялĕ – хăтлă, илемлĕ, хула тейĕн ăна: интернет-кафесем, чупмалли ятарлă ҫулсем, вăйăсене сăнамалли темиҫе экран...Стадион питĕ пысăк, тренировкăсем ирттерме пĕтĕм условисем пур. Олимпиадăна нимĕнле чемпионатпа та, кубокпа та танлаштарма ҫук. Унта пĕрремĕш хут хутшăнтăм пулин те мана питех те килĕшрĕ. Ҫав вăхăтрах вăл маншăн урок та пулчĕ.

– Татьяна, эсир Китайра мĕнле ăмăртнине эпир тимлĕн сăнарăмăр, саншăн «чирлерĕмĕр». Эсир ҫĕнтерессе шаннăччĕ. Малтанхи вăхăтра эсир лидерсен шутĕнче пыраттăрччĕ. Финиша ҫитеспе тем килсе тухрĕ?

– Старт парсанах хытăрах чупса кайрăм пулĕ. Хамăн вăйпа тĕрĕс усă курма пĕлеймерĕм. Финиша ҫитеспе вара хампа тупăшакансенчен иртме май килмерĕ: вăй-хал пур пек, анчах урасем итлемерĕç, ҫавăнпа тăваттăмĕш вырăна юлтăм.

Олимпидăра тăваттăмĕш вырăн йышăнни те пысăк ҫитĕнӳ. Вăл малашлăха ҫулсем уҫса парать.

2009 ҫул Раççейри Ҫамрăксен ҫулталăкĕ пултарулла ҫамрăк спортсменкăшăн ырă хыпарпа пуçланать.

Чăваш Республикин физкультурăпа спорт тата туризм министерстви иртнĕ ҫулхи смотр-конкурс итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Т.Петрова «2008 ҫулхи чи лайăх спортсмен» ята тивĕçнĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕн Хушăвĕпе спортра пысăк ҫитĕнӳсем тунăшăн вăл кăçал та Президент стипендине илсе тăрĕ.

Ҫулталăк пуçламăшĕнчех спортри ăнăçлă стартсемпе савăнтарма пуçларĕ вăл пире. Январь уйăхĕнче Дубайра (Пĕрлешнĕ Араб Эмирачĕсенче) иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери




*Старт панӑ хыҫҫӑн. Татьяна Петрова 312-мӗш номерпе*



*Т.Петрова хӑйӗн тренерӗсемпе М.Кузнецовпа (сулахайри) тата Ю.Архиповпа*

марафона хутшăннă. Раççейран пĕртен-пĕр спортсменка пулнă вăл, хура ӳтлисемпе тупăшма лекнĕ ăна. Пултаруллă чăваш хĕрĕ питĕ лайăх результат кăтартнă. 42 километр та 195 метра 2 сехет те 25 минут та 53 çеккунтра чупса тухнă, финиша тăваттăмĕш çитнĕ. Пĕрремĕш вунă вырăна йышăннисем хушшинче, Петровасăр пуçне, Эфиопин – 8, Кени çĕршывĕн пĕр спортсменки пулнă.

Пирĕн ентеш Т.Петрова февраль уйăхĕн пуçламăшĕнчех пире тепĕр çĕнтерӳпе савăнтарчĕ. Кросс енĕпе Европа Кубокне çĕнсе илессишĕн Турцири Стамбул хулинче клубсем хушшинче ирттернĕ турнирта виççĕмĕш вырăн йышăннă, бронза медаль çĕнсе илнĕ. Пултаруллă çăмăл атлет 6 километрлă дистание 21 минут та 02 çеккунтра чупса тухнă. Турци спортсменкисене Альмиту Бекеле Дегфана тата Линет Масаина темиçе çеккунт анчах выласа янă.

Татьяна Петрова пурĕ 20 яхăн çĕршывсенче ирттернĕ чи сумлă ăмăртусене хутшăннă, яланах лайăх результатсемпе палăрнă, чăваш ятне çӳлте тытнă. Т.Петрова Шупашкарти Олимп резервисен училищинче, Хусан патшалăх педагогика университетĕнче вĕреннĕ. Халĕ Мускав патшалăх усă университечĕн Шупашкарти политехника институчĕн студентки.

2009 çула пултаруллă спортсменка ăнăçлă пуçларĕ. Май уйăхĕ. АПШри  Лос-Анджелес хули. Çулсерен иртекен марафон чупăвне тĕрлĕ çĕршывсенчен 15 пин спортсмен пухăннă. Акă старт панă. Малтан пурте пĕрле ушкăнпа чупнă. Финиша çитеспе Татьяна малалла вăйлăн тапса сикнĕ, пĕрремĕш вырăн йышăннă. Унăн вăхăчĕ 2 сехет те 25 минут та 59 çеккунт. Унран пĕр минут каярах Амане Гобена (Эфиопи) çитнĕ. Пирĕн тепĕр Чăваш хĕрĕ Сильвия Скворцова виççĕмĕш пулнă.

Татьяна Петрова Лос-Анджелесри ăмăртуран 20 пин доллара тата Honda Accord Ex-1 V6 машинăна тивĕçнĕ.

«Татьяна тин çеç «Хонда» машина илме хатĕрленетчĕ-ха. Халĕ туянмасть те ĕнтĕ вăл», çапла каласа панă «Советская Чувашия» хаçат корреспондетне Татьянăн çывăх юлташĕсем.



*Пысăк Енккассинчи çĕнĕ вăтам шкула уçма ЧР Президенчĕ Н.Федоров тата ЧР вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Г.Чернова килнĕ. Т.Петрова шкулта вĕренекенсене физкультурăпа спорта юратма, сывă пурнăç йĕркине çирĕп тытса пыма чĕнсе калать. 2008*



*Вăтам шкула уçнă вăхăтра*



*Çĕнĕ шкулта вĕренме условисем татах лайăхланчĕç*



*Т.Петрова шкул территорийĕнче йывăç лартать*

Финиша
çывхарса пырать






Т.Петрова каннă вăхăтра



Чăрмавсене
çăмăллăн çĕнтерет




*Т.Петрова юлташсĕмпе*




*Т.Петрова АПШри Лос-Анджелесри марафонта ҫĕнтерӳҫĕ ятне ҫĕнсе илнĕ*

## АНДРЕЕВА
## Вера Сергеевна

1988 çулхи майăн 10-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Вăрмар районĕнчи Çĕнĕ Шулхан ялĕнче çуралнă.



Маунтинбайк енĕпе юниоркăсем хушшинче Раççейре мала тухассишĕн ирттернĕ чемпионатăн бронза призерĕ (2003), Раççейре мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртусен çĕнтерӳçи (2004-2008), Раççей Кубокĕн тапхăрти ăмăртăвĕсен çĕнтерӳçи (2005, 2006), Раççей спорт мастерĕ (2006), Пекинри XXIX Олимп вăййисене хутшăннă.

## Пирĕн Вера

Мăнçырма районти чи пысăк ялсенчен пĕри. Мĕн аваллтан чаплă спортсменсемпе пуян пулнă вăл. Кунти пултаруллă волейболистсем районта кăна мар, республикăри ăмăртусенче те хăйсен ăсталăхĕпе палăрса тăнă. Баскетболпа йĕлтĕр спорчĕ те шкулта вĕренекенсемшĕн çывăх пулнă.

Çĕнĕ Шулханти Сергей Михайловичпа Светлана Михайловна Андреевсем шкула вĕренме кунта çӳренĕ. Сергей баскетболла выляма юратнă. Йĕлтĕрпе чупас енĕпе вара районта ирттерекен ăмăртусенче те призерсен йышĕнче пулнă. Совет Çарĕнче службăра пулнă чухне те чаçре ăна çитекенни пулман. Чăваш каччи хăйĕн пултарулăхĕпе чăннипех те тĕлĕнтернĕ. Спортра пысăк çитĕнӳсем тунăшăн командирсемпе начальниксем ăна пĕрре кăна мар тав тунă.

Шкулти ытти хĕр ачасемпе пĕрле Светлана баскетбола ытларах килĕштернĕ, районти ăмăртусенче шкул чысне пĕрре кăна мар хӳтĕленĕ, малти вырăнсене çĕнсе илнĕ. Вăл вăхăтра физкультура учителĕнче ĕçленĕ Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ Г.Мефодьев унăн спортри пултарулăхне ун чухнех асăрханă.

1985 çулта ялта çĕнĕ шкул çурчĕ туса лартсан физкультурăпа спорта аталантарма кунта условисем татах та лайăхланнă. Часах шкулта велосипедистсен секцине йĕркелеççĕ.

1985-1990 çулсенче В.Семенов шкулта пуçламăш çар вĕренĕвĕн руководителĕ. 1998 çултан пуçласа вара тренер-преподавательте вăй хума тытăнать.

Çĕнĕ Шулханти Андреевсен ачисем – Верăпа Миша та ашшĕ çулĕпех кайнă. Вера тăваттăмĕш класра вĕреннĕ чухнех çуран чупас енĕпе шкулта ирттерекен ăмăртусенче кашнинчех пĕрремĕш вырăнсене çĕнсе илет, грамотăсем илме тивĕçлĕ пулать.

Миша вара велосипед спортне кăмăллать. Шкулта йĕркеленĕ велосипедистсен секцине пĕр сиктермесĕр çӳрет. Шкулта тата район шайĕпе ирттерекен ăмăртусен-

че призлӑ вырӑнсене ҫӗнсе илет. Унӑн пултарулӑхӗнчен ашшӗпе амӑшӗ те тӗлӗнеҫҫӗ. Спортри ӑсталӑха татах та ӳстерсе пыма Мишӑна велосипед илсе параҫҫӗ.

– Пӗрре чупса пӑхам-ха, – ыйтнӑ Вера шӑллӗнчен.

– Пӑхам, пӑхам. Ме эппин. Анчах асту, ӳкерсе ан ват, – асӑрхаттарнӑ ӑна Миша. Вуннӑри ҫамрӑкшӑн тем пекех савӑнӑҫ пулчӗ ку. Самаях киленчӗ вӑл ҫак велосипедпа ярӑнса.

Шкулта йӗркеленӗ велосипедистсен секцине ҫырӑнма васкарӗ. В.Семенов тренер ӑна ӑшшӑн йышӑнчӗ. Ҫамрӑкӑн кӑмӑлне пӑсас темерӗ, секцине ҫӳреме хушрӗ. Ҫапла вара Верӑн шухӑшланӑ ӗмӗчӗ пурнӑҫланчӗ, секцие пӗр сиктермесӗр ҫӳреме тытӑнчӗ, хӑйӗн спортри ӑсталӑхне кунран-кун туптаса пычӗ.

1996 ҫулта шкула Чӑваш Республикин Президенчӗ Н.Федоров килни, вӑл малашлӑхӗ пысӑк спортсмена Алексей Григорьев вӗренекене хӑйӗн алла ҫыхмалли сехетне парнелесе хӑварни В.Семенов тренера та савӑнтарнӑ, пуҫра ҫӗнӗ шухӑшсем ҫуратнӑ.

«Велосипед спортне татах та ҫӳлерех шая ҫӗклемелле, пултаруллӑ спортсменсем хатӗрлеме мӗн пур вӑй-хала памалла», ҫапла тӗллев лартнӑ вӑл хӑйӗн умне.

Ҫак шкултан вӗренсе тухнӑ, велосипедпа чупас енӗпе ултӑ хут СССР чемпионне В.Гаврилова, икӗ хут ҫӗршыв чемпионне, «сӑрт-ту корольне», тӗнче класлӑ спорт мастерне И.Иванова (иккӗшӗ те Ҫӗнӗ Вӗренертен) республикӑра кӑна мар, хамӑр тата ытти ҫӗршывсенче те лайӑх пӗлеҫҫӗ, вӗсен пултарулӑхӗнчен тивӗҫлипе тӗлӗнеҫҫӗ.

Ку чапа тухнӑ спортсменсемпе Мӑнҫырмари вӑтам шкулта ирттернӗ тӗл пулура Чӑваш Республикин физкультурӑпа спорт министрӗн заместителӗ А.Чернов Валерий Николаевич Семенов тренер-преподавателе ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑшӑн пӗрремӗш категориллӗ специалист ятне пани те ӑна ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн кӗрешме хавхалантарать.

Вӑл чунне парсе ӗҫленипе ӳсекен хальхи ҫамрӑксен малашлӑхӗ пысӑк. 1999 ҫулта Ҫӗнӗ Шулханта пурӑнакан,

Мăнçырмари вăтам шкула çӳрекен пĕр тăван Алексейпе Александр Саминовсем, Верăпа Михаил Андреевсем хăйсен çитĕнĕвĕсемпе савăнтарчĕç.

Вера Андреева хăйĕн маттурлăхĕпе палăрса тăрать. Маунтинбайк енĕпе Раççей кубокне çĕнсе илессишĕн Вăрмарта тата Ижевскра ирттернĕ ăмăртусенче çĕнтерӳçĕ пулса тăнă, пĕрремĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ.

Маунтинбайк – пирĕн çĕршывăн спортăн çĕнĕ майĕсенчен пĕри. Раççейăн пĕрремĕш чемпионатне Мускаври Лужникири сăртлă-туллă вырăнта 1994 çулта кăна ирттернĕ. Тепĕр çултан вара Пĕтĕм Раççейри ăмăртусене Шупашкарăн хĕвел анăç пайĕнче, Атăлăн сылтăм çыранне çурса тухакан тарăн çырмара тата ун урлă хывнă дамба айккинче йĕркелерĕç. 1996 çулта Раççейăн пысăках мар команди çуллахи Олимп вăййисенче маунтинбайк енĕпе пуçласа ăмăртрĕ.

Юлашки чĕрĕк ĕмĕрте пирĕн республикăра велосипедпа çыхăннă спортăн кăткăс енĕсене аталантарас енĕпе Патăръел районĕнчи Нăрваш Шăхалĕнчи пултарулă педагогпа тата тренерпа, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕпе В.М.Бородкинпа ЧППУ профессорĕ, Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ тренерĕ В.Н.Краснов пысăк ĕç туса ирттерчĕç. Василий Михайловичăн вĕренекенĕсен ретĕнче халь спортăн вунсакăр мастерĕ, çав шутра тĕнче чемпионачĕсене хутшăннă Анатолий Савельевпа Ирина Калентьева.

Вера Андреева 2000-2001 çулсенче хĕр ачасем хушшинче маунтинбайк енĕпе Раççейре мала тухассишĕн ирттернĕ велокросра призерсен йышĕнче пулнă.

Маунтинбайк, шоссе, велокросс енĕпе республикăра мала тухассишĕн ирттернĕ тупăшусенче икĕ çул çĕнтерӳçĕсем хушшинче.

2002 çулта В.Андреева Шупашкарти Олимп резервисен училищине вĕренме кĕрет. Кунта вара спортри ăсталăха малалла ӳстерме условисем татах та лайăххах. Юлашки вăхăтра вăл Раççей командин йышĕнче

пулса тĕнчери ăмăртусене тăтăшах хутшăнать, лайăх результатсемпе савăнтарать.

Апрель уйăхĕн вĕçĕнче Итали кубокне çĕнсе илессишĕн иртнернĕ ăмăртура Итали, Норвеги, Польша спортсменкисене кăна выляса ярса Вера тăваттăмĕш вырăн йышăнать.

Майăн 14-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкарта маунтинбайк енĕпе Чăваш Республикин кубокне çĕнсе илессишĕн пĕрремĕш тапхăрти ăмăртăвĕсене иртнернĕ. 1988-1989 çулсенче çуралнă хĕр ачасем хушшинче каллех çĕнтерӳçĕ пулса тăрать.

Июнĕн 18-19-мĕшĕсенче Вăрмар поселокĕнче РСФСР тава тивĕçлĕ тренерне А.Ф.Федорова асăнса шоссе çинче велосипедпа чупса республикăра мала тухассишĕн ăмăртусем иртнернĕ. Малтанхи кунĕнче спортсменсем вырăнтан уйрăммăн тапранса кайнă. Дистанци 10 километр. 1988-1989 çулсенчи хĕр ачасенчен дистанцие вăл пĕрремĕш вĕçленĕ. Вăхăт 18 минут та 27 çеккунт.

Иккĕмĕш кунĕнче 5 километрлă дистанцие ушкăнпа чупнă. Ку хутĕнче те Вера пĕрремĕш пулнă, дистанцие 10 минут та 18 çеккунтра вĕçленĕ.

Июлĕн 8-9-мĕшĕсенче Вăрмарта маунтинбайк енĕпе Раççей ăмăртăвĕсем тата республика кубокне çĕнсе илессишĕн виççĕмĕш тапхăрти тупăшăвĕсем иртнĕ. Икĕ кунĕнче те Андреева пĕрремĕш вырăнсене тухнă.

Пултаруллă спортсменка июль уйăхĕн вĕçĕнче Раççей кубокне çĕнсе илессишĕн Владимир облаçĕнчи Муромра иртнернĕ улттăмĕш тапхăрти ăмăртăвĕсене хутшăннă.

– Велосипедпа чупмалли трасса йывăр пулчĕ. Çитменнине çанталăкĕ  те шăрăх тăчĕ. Апла пулин те пирĕн спортсменсем йывăрлăхсенчен хăраса ӳкмерĕç, çĕнтерӳшĕн хăйсен мĕн пур тăрăшулăхне пачĕç,- каласа парать ЧР физкультурăпа спорт министерствин Вăрмарти ачасемпе çамрăксен А.Ф.Федоров ячĕллĕ спорт шкулĕн директорĕ С.Архипов.

Чи малтанах старта 1990-1991 çулсенче çуралнă арçын ачасем тухнă. «Кросс – кантри» пулнă вăл. Çивĕч кĕрешӳре Вăрмарти иккĕмĕш  вăтам шкулта вĕренекен Андрей Кох-

нуров (тренерĕ П.Васильев) пĕрремĕш вырăна тухать. Чаплă çитĕнӳ. Мăнçырмари вĕрентӳре воспитани комплексĕнчи Алексей Степанов (тренерĕ В.Семенов) иккĕмĕш пулать.

1986-1987 çулсенче çуралнисен ушкăнĕнче Вăрмарти иккĕмĕш вăтам шкулти Станислав Васильев виççĕмĕш вырăн йышăнать.

1988-1989 çулсенчи хĕр ачасем те хисеп пьедесталĕ çине тăрассишĕн хайсен мĕн пур тăрăшулăхне панă. Республика командин чысне хӳтĕлекен Вера Андреева (тренерĕ В.Семенов) вара хайĕнчен никама та ирттерсе яман, пĕрремĕш вырăн йышăнса çĕнтерӳçĕ пулса тăнă.

2003 çулта велосипедпа чупса Шупашкар хулинче мала тухассишĕн ирттернĕ уçă чемпионатра В.Андреева каллех çĕнтерет. 1987-1988 çулсенче çуралнă хĕр ачасем хушшинче 5 километрлă дистанцие 8 минут та 33 çеккунтра вĕçлет.

Ижевск хулинче ирттернĕ Раççей кубокне çĕнсе илессишĕн виççĕмĕш тапхăрти ăмăртăвĕсенче те кросс-кантрие вăл выляса илет.

2003 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче ЧР Президенчĕ Н.Федоров кăларнă Хушупа килĕшӳллĕн вĕренӳре, тĕпчев, наука, пултарулăх, производство, управлени ĕç-хĕлĕнче тата бизнес-проектсем тăвас енĕпе курăмлă çитĕнӳсем тунăшăн çамрăксемпе студентсене стипенди пама йышăннă. Вĕсен хушшинче Вера Андреева та пур. Çак пысăк чыса вăл спортри пысăк çитĕнӳсемшĕн тивĕçнĕ.

Сывă пурнăç йĕркине халăхра сарас, çамрăксен социаллă пĕлтерĕшлĕ пуçарăвĕсене аталантарас, çынсене физкультурăпа спорт мероприятийĕсене анлăрах явăçтарас, вĕсен активлă канăвне йĕркелес тĕллевпе Чăваш Республикин Президенчĕ Н.Федоров 2004 çула Çамрăксен тата сывă пурнăç йĕркин çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕ. Çакă пире спортпа туслă пулма хистет.

2004 çул. Май уйăхĕнче маунтинбайк енĕпе Германире ирттернĕ тĕнче чемпионатĕнче Вера пысăк çитĕнӳ тунă. Австри спортсменкине кăна выляса ярса иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Ăна спортăн анлă çулĕ çине кăларас тĕлĕшпе Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ тренерĕ, республикăри ачасемпе çамрăксен Олимп резервĕсен В.Ярды ячĕллĕ ятарлă шкулăн аслă тренер-преподавателĕ, педагогика наукисен профессорĕ В.Краснов нумай тăрăшать.

Июнь уйахĕ. Велосипедпа чупса республика кубокне çĕнсе илессишĕн маунтинбайк енĕпе ирттернĕ виççĕмĕш тапхăрти тата финалти ăмăртăвĕсем Патăрьелĕнче пулнă. Унта Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисен, Патăрьел тата Вăрмар районĕсен спортсменĕсем хутшăннă.

«Ют çĕрте чупрĕç пулин те, пирĕн спортсменсем хăйсене килти пекех туйрĕç. Лайăх результатсем кăтартрĕç», - тенĕччĕ çав ăмăрту хыççăн ачасемпе çамрăксен Вăрмарти спорт шкулĕн аслă тренер-преподавателĕ, ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ В.Сидоров.

Çав ăмăртура хĕр ачасенчен Çĕнĕ Шулхан ялĕнче çуралса ӳснĕ, Мăнçырма шкулĕнче вĕреннĕ, Шупашкарти Олимп резервисен училищинче ăс пухакан В.Андреева пĕрремĕш вырăна тухса çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçнĕ.

Июлĕн 1-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри çуллахи ялти V спорт вăййисене халалласа СССР спорт мастерне, РСФСР тава тивĕçлĕ тренерне, Кĕçĕн Шăхаль ялĕнче çуралса ӳснĕ Алексей Федорович Федорова асăнса шоссе çинче велосипедпа чупас енĕпе ирттернĕ чемпионат тата республикăра мала тухассишĕн йĕркеленĕ чупу Вăрмарта иккĕмĕш пулнă.

Виçĕ куна пынă ăмăртусене Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Йошкар-Ола хулисен, Патăрьел тата пирĕн район спортсменĕсем 100 çынна яхăн хутшăнчĕç.

Ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕ. Спортсменсем уйрăммăн чупнă. Вăрмар-Тăвай шоссе çулĕпе Кĕтеснере каякан çаврăмран старт илнĕ те спортсменсем Тушкиль ялĕ енелле вирхĕннĕ.

Тĕрлĕ ушкăнра ăмăртса пирĕн район спортсменĕсенчен чылайăшĕ призлă вырăнсене çĕнсе илнĕ.

Хĕр ачасем те арçын ачасенчен юлман. 1988-1989 çулсенче çуралнă хĕр ачасем хушшинче спорт мастерĕн кандидачĕ В.Андреева çĕнтернĕ.

Мăнçырмара çуралса ӳснĕ пултаруллă велосипедиста Алексей Трофимова асăнса Раççей Кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăртусем ирттересси çирĕп йăлана кĕнĕ. 2004 çулта ăна çиччĕмĕш хут йĕркелерĕç.

Ăмăртусем ирттерме тĕплĕн хатĕрленнĕ. Раççей ăмăртăвĕсем пуласси çинчен малтанах пĕлтерсе хунă. Спонсорсем шыраса тупнă. Тĕп спонсор Мăнçырмара çуралса ӳснĕ, халĕ Мускаври «Паркет союз» фирмăн генеральнăй директорĕ Ю.Афанасьев призсем илме укçа-тенкĕ нумай уйăрнă. Çавăн пекех Шупашкарти «Чувашсетьгаз» информаци пайĕн начальникĕ П.Павлов, Елчĕкре çуралса ӳснĕ, велосипедсем сутакан Мускаври магазин директорĕ Г.Яковлев, Мускаври строительство фирмин директорĕ В.Иванов (Мăнçырма), Мускаври «Паркет çурчĕн» художество енĕпе ĕçлекен начальникĕ Н.Матвеев (Çĕнĕ Вĕренер), Çĕнĕ Уренгойри магазинсен сечĕн директорĕ В.Пидюков тата А.Кузнецов строитель (иккĕшĕ те Мăнçырмаран) тата ыттисем хăйсен тӳпине хывнă.

Ăмăртусен çĕнтерӳçисем валли чăннипех лайăх япаласем хатĕрлесе хунă. Вĕсен хушшинче тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан телевизор – пĕрре, видеомагнитофонсем – 3, магнитофонсем – 12, пылесоссем – 6, электрочейниксем тата ытти йышши хаклă япаласем. Камсене тивĕçĕç вĕсем? Ахальтен-и хĕрӳ кĕрешӳ пычĕ велосипедистсем хушшинче.

Мăнçырмара ирттернĕ ăмăртусене спортсменсем кăçал уйрăмах нумай пуçтарăннă. Мускав, Ижевск, Тамбов, Йошкар-Ола, Вологда, Калининград, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенчен, хамăр республикăри Патăръел тата пирĕн район велосипедисчĕсем – Раççейри чи пултаруллă спортсменсем – пурĕ 120 çын ытла.

Июлĕн 8-9 мĕшĕсенче Мăнçырмара Раççей шайĕнче иртрĕ вăл. Пĕр вăхăтрах маунтинбайк енĕпе Раççей кубокне çĕнсе илессишĕн улттăмĕш тапхăрти ăмăртăвĕсем,

республикăн уçă чемпионачĕ тата республикăра мала тухассишĕн ирттерекен тупăшусем пулчĕç.

Икĕ куна пынă маунтинбайкăн (сăртла-туллă вырăнта чупасси) ăмăртăвĕсен кашни тапхăрĕ питех те интереслĕ иртнĕ. Малтанхи кунĕнче çумăр самаях лӳшкесе тăнипе урапасем çумне пылчăк çыпăçса чупма чăрмантарнă. Апла пулин те спортсменсем йывăрлăхсене çĕнтерсе пынă.

1988-1989 çулсенче çуралнă хĕр ачасем хушшинче пирĕн ентеш, Çĕнĕ Шулханта çуралса ӳснĕ, Шупашкарта Олимп резервĕсен училищинче вĕренекен В.Андреева чи пултаруллă пулнине тепĕр хут çирĕплетсе панă, пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Икĕ куна пынă ăмăртăвăн итогĕсем те паллă. Тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан телевизор Вăрмар çĕрĕ çинче тăватă çул хушши арçынсем хушшинче маунтинбайк енĕпе çĕнтерӳçĕ пулнă Ижевскран килнĕ спорт мастерне М.Гоголева тивĕçнĕ.

Пирĕн мухтава тивĕçлĕ велосипедистсене – А.Крылова, В.Андреевăна видеомагнитофонсем, Р.Вотякова, К.Игнатьева, А.Степанова магнитофонсем парнеленĕ.

2005 çул та çĕнтерӳсемпе паллă Вера Андреевашăн.

Июлĕн 8-9-мĕшĕсенче Мăнçырмара çуралса ӳснĕ пултаруллă велосипедиста Алексей Трофимова асăнса кăçал ăмăртусене саккăрмĕш хут йĕркелерĕç.

Маунтинбайк енĕпе Раççей кубокне çĕнсе илессишĕн çиччĕмĕш тапхăрти ăмăртăвĕсем пулчĕç. Малтанхи кунĕнче çумăр лӳшкесе тăчĕ пулин те, иккĕмĕш кунĕнче çанталăк майлашрĕ. Икĕ куна пынă ăмарту итогĕсемпе Вера Андреева хисеп пьедесталĕн чи çӳллĕ картлашки çине улăхса тăма тивĕçлĕ пулчĕ.

Çĕнтерӳçĕсене саламлама Чăваш Республикин физкультурăпа спорт министрĕ В.Краснов, район пуçлăхĕ А.Егоров тата ыттисем килнĕ.

Июнĕн 4-5-мĕшĕсенче Мускавра велосипедистсен çивĕч кĕрешĕвĕсем икĕ куна пынă. Малтанхи кунĕнче «Унивега» кубокне çĕнсе илессишĕн пĕрремĕш тапхăрти ăмăртăвĕсенче 1989-1990 çулсенче çуралнисем хушшинче А.Саминов (Çĕнĕ Шулхан) чемпион ятне çĕнсе илнĕ.

Иккĕмĕш кунĕнче Раççей кубокĕн пиллĕкмĕш тапхăрти ăмăртăвĕсем иртнĕ. 1987-1988 çулсенче çуралнисенчен халиччен нумай ăмăртусенче çĕнтерсе чапа тухнă спорт мастерĕсем С.Васильевпа (Вăрмар поселокĕ) В.Андреева (Çĕнĕ Шулхан) чемпионсем пулса тăнă.

Умра çĕнĕ ăмăртусем. Ижевск хулине каймалла. Июлĕн 11-17-мĕшĕсенче кунта маунтинбайк енĕпе Раççейре мала тухассишĕн ăмăртусем иртереççĕ.

1987-1988 çулсенче çуралнă велосипедисткăсенчен В.Андреева спорт мастерĕн иккĕмĕш вырăнпа килĕшмелле пулнă.

Ку çулхине те вăл ЧР Президенчĕн стипендиачĕ пулса тăрать.

Спорта юратакансемшĕн кăçал татах тепĕр савăнăç пулчĕ. Раççейре иртнерĕ ăмăртусенче палăрнă пирĕн пултарулă велосипедистсем – В.Андреевапа С.Васильев спорт мастерĕсем юниорсем хушшинче маунтинбайк енĕпе мала тухассишĕн Бельгири Клинсбергер хулинче иртнерĕ тĕнче чемпионатне хутшăннă, ăнăçлă чупнă, пире савăнăç кӳнĕ.

2006 çулхи июлĕн 8-9-мĕшĕсенче Мăнçырмара Алексей Трофимов велосипедиста асăнса маунтинбайк енĕпе Раççей Кубокне çĕнсе илессишĕн IX тапхăрти ăмăртăвĕсем иртнĕ. Икĕ куна пынă вăл. Çĕршыври тĕрлĕ регионсенчен 13 команда тупăшнă. Пĕрремĕш кунĕнче кросс-кантри чупнă. Яланхи пекех юниоркăсен хушшинче В.Андреева спорт мастерĕ чемпион ятне тивĕçнĕ.

Икĕ куна пынă ăмăртусен итогĕсем тăрăх хайсен ушкăнĕнче В.Андреева пĕрремĕш вырăна çĕнсе илнĕ.

Ăмăртусем вĕçленнĕ ятпа иртнерĕ савăнăçлă самантра пултарулă спортсменсене район пуçлăхĕ В.Кириллов, ЧР физкультурăпа спорт министрĕ В.Краснов, район пуçлăхĕн заместителĕ Ю.Соколов, «Дом паркета» холдинг президенчĕ Ю.Афанасьев, Мускаври строительство компанийĕн генеральнăй директорĕ В.Иванов, «Системпром» УАО генеральнăй директорĕн заместителĕ В.Афанасьев, «Слава» коллективлă хресчен (фермер) хуçалăхĕн директорĕ В.Павлов, Мăнçырмари вăтам шкул директорĕ В.Ни-

колаев, Мăнçырма ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.Семенов саламланă, хаклă парнесем панă.

Маунтинбайк енĕпе юниоркăсен хушшинче Раççейре мала тухассишĕн Самарăра ирттернĕ ăмăртусенче В.Андреева спорт мастерĕ çĕнтернĕ. Ун хыççăн Италири Европа чемпионатне хутшăннă пултаруллă чăваш хĕрĕ. Лайăх результат кăтартнă. Тĕнчери ăмăртусенче чапа тухнă велосипедист сентябрь уйăхĕнче Новая Зеландия çĕршывĕнче пулнă Тĕнче чемпионатне хутшăннă, хăйĕн çитĕнĕвĕпе савăнтарчĕ пире.

Октябрĕн 17-мĕшĕнче Вăрмар районĕнчи Аря юханшывăн хĕрринче велокросс енĕпе Раççей кубокĕн ултăмĕш, Чăваш Республикин кубокĕн виççĕмĕш тапхăрти уçă чемпионачĕ тата районта мала тухассишĕн ăмăртусем иртнĕ. Уçă чемпионата Пермь крайĕнчи Березники, Пермь хулинчен, Удмурт Республикинчен икĕ команда, Калининград, Ленинград облаçĕнчи Сосновый Бор, Тутарстанри Зеленодольск, Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисенчен, Патăръел, Муркаш тата пирĕн район спортсменĕсем пурĕ 11 команда хутшăнчĕç. Çакă та интереслĕ: ăмăртăва хутшăнма Германи çĕршывĕнчи Берлин хулинчен Борис Айхлерпа Кочин Василий те килсе çитнĕ.

Ăмăртусем питех те çивĕч иртрĕç. Трасса пĕрре те çăмăл мар: анаталла-тăвалла вырăнсемпе чупмалла, темиçе çаврăм тумалла. Çанталăкĕ те ятарласа тенĕ пекех спортсменсемшĕн пулчĕ: тӳлек, вăхăтăн-вăхăтăн хĕвел курăнса велосипедистсене сывлăх суннăн туйăнать.

Çивĕч кĕрешӳре хĕр ачасем хушшинче В.Андреева спорт мастерĕн пултарулăхне уйрăмах палăртмалла: кăçал вăл аслă ушкăнри хĕр ачасемпе чупма пуçларĕ. Ку хутĕнче те хăйĕн тантăшĕсене çăмăллăнах çĕнтерме пултарчĕ. Хисеп пьедесталĕн чи çӳллĕ – пĕрремĕш картлашки çине хăпарса тăчĕ.

Раççей кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăртусем малалла пыраççĕ. Çиччĕмĕш тапхăрти ăмăртусем октябрĕн 19-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкарта пулнă. Октябрĕн 21-мĕшĕнче Шупашкарта 8-мĕш тапхăрти ăмăртусем иртнĕ.

«Октябрĕн 25-26-мĕшĕсенче Ижевск хулинче велокросс енĕпе Раççейре мала тухассишĕн ăмăртусем тата чемпионат иртмелле. Çав ăмăртусенче ĕнтĕ Тĕнче тата Европа чемпионачĕсене хутшăнма кандидатсем суйласа илеççĕ. Унти тупăшусене хутшăнма пирĕн районти Вера Андреевапа Алексей Саминов (иккĕшĕ те Çĕнĕ Шулхан ялĕнчен) шанчăк пысăк»,- пĕлтерчĕ хăйĕн шухăшне Вăрмарти А.Ф.Федоров ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн директорĕ С.Архипов.

2007 çулта Вера Андреевашăн чи асра юлмалли самантсем çаксем пулчĕç: ЧР Президенчĕ Н.Федоров февралĕн 5-мĕшĕнче пултарулăха туптакан республикăри çамрăксене ятарлă стипенди парасси çинчен калакан хушу çине алă пуснă. Вĕсен хушшинче Вера Андреева та пур. «Единая Россия» партин Вăрмар районĕнчи уйрăмĕн секретарĕ В.Кириллов çамрăксен политикине, физкультурăпа спорта районта аталантарма активлă хутшăннăшăн Вера Андреевана Тав çырăвĕ панă. Вăл çавăн пекех «Шупашкар хулин чи лайăх спортсменки» хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

Иккĕмĕш кунĕнче те çĕнтерӳçĕ ята вăлах тивĕçрĕ.

Икĕ куна пынă ăмăртусен итогĕсемпе В.Андреева спорт мастерне тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан телевизор парнеленĕ.

Палăртма кăмăллă, пирĕн пултаруллă спортсменка, спорт мастерĕ Вера Андреева тепĕр куннех Раççейĕн пĕрлештернĕ командин составĕнче пулса маунтинбайк енĕпе Турцире ирттерекен Европа чемпионатне хутшăнма тухса кайрĕ.

Унтан тавраннă хыççăн Шупашкарта маунтинбайк енĕпе Раççей чемпионачĕ иртнĕ. 2007 çулхи августăн 22-мĕшĕнче Шупашкарти залив хĕрринче хĕрарăмсемпе арçынсем ăмăртнине курма спорта юратакан çĕр-çĕр çын килнĕ. Паллах, чи малтанах пурне те тĕнчери чи вăйлă велосипедистсенчен пĕрин Ирина Калентьеван ăсталăхĕ кăсăклантарнă. Вăл вара питĕ йывăр трассăра хавхаланса, пĕтĕм вăя хурса ăмăртрĕ, кашни ултă çаврăма чи малтан вĕçлерĕ. Çапла, паян çĕршывра Ирина Калентьевапа танлашакан велосипедистка пачах çук. Патăръел районĕнчи Нăрваш Шăхаль хĕрĕ вуниккĕмĕш хут Раççей чемпионкин ятне çĕнсе илнĕ. Ун хыççăн финиша Вăрмар районĕнчи А.Ф.Федоров ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен



*Велосипедистсем спорта тухма хатĕрленеççĕ*



*Вера Андреева Пекинри Олимпиадăра Бронза медаль çĕнсе илнĕ Ирина Калентьевапа тата маунтинбайк енĕпе XXVI Олимп вăййисене хутшăннă Надежда Пашковапа*

спорт шкулĕнче вĕреннĕ Вера Андреева çитнĕ. Виççĕмĕш выранта – Санкт-Петербургри Марина Рыбакова.

Пултарулла хĕр ача хăйĕн спортри кăтартăвĕсене çултан-çул лайăхлатса пырать. Сентябрĕн 3-9-мĕшĕсенче Шотландири Форд Вильям хулинче иртнĕ тĕнче, июлĕн 12-13-мĕшĕсенче Турцире Европа чемпионачĕсене хутшăнна, лайăх енĕпе палăрнă.

Хăйĕн ăсталăхне Испанире вĕрентўпе тренировка сборĕнче туптанă. Спорт мастерĕн кандидачĕ, Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренекен К.Романова та (Мăнçырма) унпа пĕрле пулнă.

Умра яваплă стартсем. Пекинри XXIX Олимп вăййисене хутшăнма путевка çĕнсе илмелле.

2008 çула Чăваш Республикин Президенчĕ Н.Федоров Ырă ĕçсен çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕ. Вера Андреевашăн вара вăл урăххипе те паллă: 20 çул тултарчĕ. Вăл каллех Чăваш Республикин Президенчĕн стипендиачĕ пулса тăчĕ. Çакă ăна татах та пысăкрах çитĕнўсем тума хавхалантарать.

Май-июнь уйăхĕсенче тĕнчери ăмăртусем пуçланаççĕ. Июлĕн 5-8-мĕшĕсенче Шупашкарта маунтинбайк енĕпе Раççей чемпионачĕ иртет. Çак ăмăртусенче ĕнтĕ Китайра иртекен Олимп вăййисене хутшăнма Раççей пĕрлештернĕ команди валли кандидатсем суйласа илеççĕ. Хальлĕхе Олимп вăййисене хутшăнма пĕрремĕш номерлĕ кандидат, Патăръел районĕнче çуралса ўснĕ Раççей тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ, тĕнче чемпионатĕнче çĕнтернĕ Ирина Калентьева тăрать пулсан, иккĕмĕш номерпе вара пирĕн Вера Андреева.

Акă, Китайри Олимп вăййисене хутшăнма кандидатсем суйласа илмелли ăмăртусем пуçланаççĕ. Раççей чемпионачĕ июлĕн 5-мĕшĕнче Ирина Калентьева çуралнă ялта Нăрваш Шăхальте пуçланнă. 4х7 километрлă эстафета ăмăртăвне вун сакăр команда хутшăннă. Финиша чи малтан Мускав хулин велосипедисчĕсем çитнĕ. Чăваш спортсменĕсем – тăваттăмĕш выранта.

Тунтикун Шупашкарта кросс-кантри программăпа ăмăртнă. Пекинри Олимпиадăна хутшăнас пулсан 20 çулхи Вера Анд-

рееван пĕрремĕш е иккĕмĕш вырăнсене çĕнсе илмелле. Унăн наставникĕ, Раççей тата Чăваш республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ Владимир Краснов çакăн пек задача лартнă.

– Паян пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене анчах çĕнсе илмелле. Çавăн чухне кăна Калентьевапа Андреева Пекина кайма пултараççĕ.

Петербургран килнĕ 23 çулхи Оксана Рыбакова вара урăхла шухăшланă. Пĕрремĕш çаврăмрах вăл малалла хăвăрттăн тапса сикнĕ, пирĕн велосипедисткăсенчен иртсе кайнă. Ира тата Вера ун хыççăн пынă. Иккĕмĕш çаврăмра та лару-тăру улшăнман. Виççĕмĕш çаврăм хыççăн ăмăртăва курма пынă чăвашсем пăшăрханма пуçланă. Малта Рыбакова пырать-çке-ха. Пурĕ çичĕ çаврăм тумалла пулсан, тăваттăмĕшĕнче вара чăваш спортсменкисем куракансене чăннипех те тĕлĕнтернĕ. Рыбаковăна 300 метр кая хăварнă. Мĕнле майпа çакна тума пултарнă-ха вĕсем? Никамăн та ĕненес килмен. Ĕç-пуç вара çапла пулса иртнĕ. Вăйлă çумăр çунипе чăнкă тăвайкки çине велосипедпа хăпарма питех те йывăр пулнă. Пылчăк урапана çыпăçнă. Пирĕн спортсменкăсем вара, вăй-хала перекетлес тĕллевпе, велосипед çинчен аннă та ăна çĕклесе чăнкă тăвайкки çине çуран чупса хăпарнă. Рыбаковăна татах та каярах хăварма тăрăшнă. Ирăпа Вера наставникĕ çав вăхăтра пурне те илтĕнмелле: «Вăранăр!» тесе çухăрнă, татах та вăйлăрах чупса хăпарма хистенĕ. Çапла канаш пани, паллах, усăллă пулнă. Оксана Рыбакова вара сăрт çине велосипед çинчен анмасăрах хăпарнă. Пиллĕкмĕшпе улттăмĕш çаврăмсенче те Рыбакова кайра пулнă-ха. Юлашки çаврăмра вара Ирăпа Вера юнашарах пынă, финиша та иккĕшĕ пĕрле пырса кĕнĕ, Калентьева вара пĕр урапа чухлĕ кăна маларах çитнĕ.

Оксана Рыбаковăна мĕн пулнă-ха? Вăл çур дистанцире малта пынă-çке, вара кая юлнă?

– Аналалла аннă чухне манăн ура педальтен тухса кайрĕ, эпĕ ӳкрĕм. Педаль юрăхсăра тухрĕ, кирлĕ пек çавăрнмасть. Вăхăта нумай çухатрăм. Манпа тупăшакансем вара малалла вирхĕнчĕç, – тенĕ Оксана.

Çапла вара çак ăмăрту хыççăн Ирина Калентьевапа Вера Андреева Китайри Олимпиадăна хутшăнма путевка çĕнсе илнĕ.

– Китайри Олимпиадăна хутшăнма путевка çĕнсе илнишĕн эпĕ савăнатăп. Кĕрешме питех те йывăр килчĕ. Ăмăртуччен икĕ кун маларах вăйлă çумăр çуса пачĕ. Те медаль илме шухăш тытнă Китай хĕрĕсем пылчăка юратманнипе – ăна тепĕр куна куçарчĕç. Тавтапуç Иринăна. Вăл юнашар пулнипе мана ăмăрту вĕçне çитиччен кĕрешме пулăшрĕ, – терĕ Вера хăйĕн савăнăçне пытараймасăр.

– Эпĕ çапла пуласса шаннă та, – хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ Вера Андрееван тренерĕ, Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ тренерĕ, ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Владимир Николаевич Краснов Вăрмарта олимпиецпа ирттернĕ тĕл пулу вăхăтĕнче. – Унччен маларах маунтинбайк енĕпе Тĕнче кубокне çĕнсе илессишĕн ирттернĕ виçĕ тапхăрти ăмăртăвĕсенче те Вера Раççей велосипедисткисенчен, Калентьевасăр пуçне, чи лайăх результат кăтартнă.

Китайри спорт вăййисене хутшăннă спортсменсемпе тата вĕсен тренерĕсемпе Правительство çуртĕнче иртнерĕ тĕл пулура Чăваш Республикин Президенчĕ Н.Федоров Вера Андреевана Тав хучĕ парса чыс тунă.

Чăваш Республикин физкультурăпа спорт тата туризм министерстви 2008 çулхи смотр-конкурс итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Вера Андреева «2008 çулхи ылтăн резерв» ята тивĕçнĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕн Хушăвĕпе спортри пысăк çитĕнӳсемшĕн вăл кăçал та Президент стипендине илсе тăрĕ.

Вера Андреева ăмăртусенче çĕнсе илнĕ грамтотăсемпе дипломсене хаклă реликви вырăнне хурса упрать. Пухса пыракан хутсен папки çине çиеле çапла çырса хунă: «Вăй хумасăр пулла та пĕверен кăлараймăн», «Малтан йывăр килет, кайран çăмăл пулĕ».

Çĕнтерме çăмăл пулмасса малтанах пĕлсе тăрать вăл, кайран спортăн анлă çулĕ çинче ӳсĕмсем пуласса шанать.



*В.Андреева интервью парать*



*Вера хӑйӗн тренерӗпе В.Красновпа (сылтӑмри), амӑшӗпе Светлана Михайловнапа тата Вӑрмарти А.Ф.Федоров ячӗллӗ ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗн директорӗпе С.Архиповпа*




*ЧР физкультурăпа спорт тата туризм министрĕ А.Николаев В.Андрееван çитĕнĕвĕпе кăмăллă*




*Каннă вăхăтра*




*Ăмăрту çĕнтерÿçисене чысласçĕ*




*В.Андреева Тав çырăвне тивĕçнĕ*



*Олимп вӑййисен участникӗ А.Пашкова, ЧР физкультурӑпа спорт тата туризм министрӗ пулнӑ В.Краснов, В.Андреева, Пекинри Олимп вӑййисем призерӗ И.Калентьева, В.Краснов тренер*



*Верӑн малтанхи тренерӗ В.Семенов (сулахайра) тата С.Архипов*

## Тупмалли

Кӑштах историрен ........................................ 3
Чӑваш Ен спортсменӗсем – Пекинри Олимпиадӑра .... 7
Ӑшпиллӗ тӗл пулу ........................................ 9
Олимп вӑййисен чемпионӗ ................................ 14
Универсиада ҫӗнтерӳҫи ................................... 40
Марафон чӑтӑмлисене юратать .......................... 62
Ашшӗнчен тӗслӗх илсе ..................................... 82
Карӑкҫырма хӗрӗ ............................................100
Пирӗн Вера ...................................................116

**Хованский Анатолий Ильич**

**УРМАРЦЫ НА ОЛИМПИЙСКИХ ДОРОГАХ**

Книга очерков
На чувашском языке

Редактор *А.И.Хованский*
Компьютерный набор *С.Н.Матросовой*
Дизайн обложки *Н.В.Семеновой*
Верстка *Т.В.Алексеевой*

*Фотографии из архива автора*

Подписано к печати 11.06.2009. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная. Гарнитура Arial.
Физ. печ. л. 8,5. Тираж 300 экз. Заказ № 74.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98. E-mail: newtime1@mail.ru.

30.00



Анатолий Ильич Хованский 1940 çулхи февралĕн 5-мĕшĕнче Чăваш АССРĕнчи Вăрмар районĕнчи Хĕрлĕçыр ялĕнче çуралнă. Раççей Журналисчĕсен союзĕн членĕ. 1968 çултанпа, 40 çул ытла, хайĕн пурнăçне журналистикăпа çыхăнтарнă. 1975-1977 çулсенче — Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакторĕ, 28 çул ытла Вăрмар районĕнчи «Хĕрлĕ ялав» хаçатăн тĕп редакторĕн заместителĕ. «Спорт — пирĕн тус» (1975), «Вăйлисемпе хăюллисен шкулĕ» (2000), «Тăван ялăм — Хĕрлĕçыр» (2001) кĕнекесен авторĕ. «Тумхахлă та мухтавлă çулпа» (2003) кĕнекере «Хĕрлĕ ялав» хаçатăн историне çырса кăтартнă. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (2004).